4. Разгадайте кроссворд. Названия овощей переведите на русский язык.



Образец: *купăста — капуста* и т. д.

5. Прочитайте. Перескажите содержание данного текста.

ПОМИДОР

Помидор паллă та тутлă пахча çимĕç. Ăна çынсем питĕ юратса çиеççĕ. Помидор темĕн тĕсли те, темĕнле тĕрли те пулать: хĕрли, сарри, çавраки, тăрăхли, пысăкки, вĕтти т. ыт. те. Помидора Кăнтăр Америкăран Европăна XVI ĕмĕрте илсе килнĕ. Ĕлĕк индеецсем ăна «томат» тенĕ. «Томат» — пысăк çырла тени пулать. Пирĕн çĕршыва помидора пĕр пуян Францирен илсе килнĕ. Ăна çынсем чечек тесе йăрансем çинче çитĕнтернĕ, çимĕçне вара сиенлĕ тесе çимен.

Пĕррехинче пĕр хăюллă çын ăна çисе пăхнă. Ăна нимĕн те пулман, вăл сывах юлнă. Çавăн хыççăн ытти çынсем те помидора çиме пуçланă.

Чи пысăк помидора Америкăра çитĕнтернĕ. Вăл 3 кг ытла тайнă. Халĕ темĕн тĕрлĕ сорт та пур: иртерех, кая юлса пулаканнисем («великан», «жираф», «дубок», «искорка» т. ыт. те). Помидор — витаминлă пахча çимĕç.

Урок 12

УСВОЕНИЕ СЛОВ ПО ТЕМЕ «ПӲРТ. КАРТИШ. ХУРАЛТĂ (ДОМ. ДВОР. ПОСТРОЙКИ)»

◈ Запомните слова и выражения ◈

мунча
мунча кĕр
килти мунча
хапха
сарлака хапха
хапхана хуп
хапхана уç
пирĕн хапха умĕнче
алăк
пӳлĕм алăкĕ
алăкран кĕр
алăк хыçĕнчен
картиш
картишне тирпейле
çурт, пӳрт
çурт ларт
икĕ хутлă çурт
вутă
вутă çур
хурăн вутти
юман вутти
мăрье
кăмака мăрйи
хӳме
чус хӳме
калинкке
ансăр калинкке
хваттер
виçĕ пӳлĕмлĕ хваттер
пусă, çăл
тарăн пусă чав
пӳлĕм
хăтлă пӳлĕм

баня
мыться в бане
домашняя баня
ворота
широкие ворота
закрывать ворота
открывать ворота
у наших ворот
дверь
дверь комнаты
войти в дверь
из-за двери
двор
убирать двор
дом, изба
строить дом
двухэтажный дом
дрова
колоть дрова
березовые дрова
дубовые дрова
дымоход, труба
печная труба
забор
дощатый забор
калитка
узкая калитка
квартира
трехкомнатная квартира
колодец
копать глубокий колодец
комната
уютная комната

тăрă, çи, çи витти
хăма çи витти
пӳрт тăрри, çи витти
лаç
пĕчĕк лаç
пусма
тимĕр пусма
пусма картлашки
арман
çил арманĕ
арман çунаттисем
хӳме, карта
карта ту
çӳллĕ карта
чӳрече
чӳречерен шакка
чӳречерен пăх
кăмака
кирпĕч кăмака
нӳхреп
тарăн нӳхреп чав
сакай
урай
мачча
çенĕк, пӳрт ум
сăрланă çенĕк
пура
йывăç пура
пурала
юпа
юпа ларт
карта юписем
картлашка
пилĕк картлашка
картлашка çинче лар
кĕтес
пӳлĕм кĕтесĕ
вĕлле
сăрланă вĕллесем
урам
крыша
дощатая крыша
крыша дома
лачуга
маленькая лачуга
лестница
железная лестница
ступень лестницы
мельница
ветряная мельница
крылья мельницы
ограда
строить ограду
высокая ограда
окно
постучать в окно
смотреть в окно
печь
кирпичная печь
погреб
рыть глубокий погреб
подпол
пол
потолок
сени
крашеные сени
сруб
деревянный сруб
рубить сруб
столб
поставить столб
столбы изгороди
ступенька
пять ступенек
сидеть на ступеньке
угол
угол комнаты
улей
крашеные ульи
улица

урам урлă каç	переходить улицу
пирĕн урамра	на нашей улице
вите	**хлев**
ăшă вите	теплый хлев
чăлан	**чулан**

1. Отгадайте загадки. Отгадки переведите на чувашский язык.

1) Где вода столбом стоит?
2) Где-то, где-то дым идет,
   Где-то, где-то веники шумят.
3) Дарья да Марья без устали друг другу в глаза глядят.
4) Каждый по мне ходит летом и зимой, а ездить нельзя.

Отгадки: *пусма, урайпа мачча, мунчара, çăлта.*

2. Прочитайте, выделите имена существительные и местоимения. Поставьте вопросы к существительным.

1) Пирĕн çемье пӳрт лартать. 2) Пӳлĕмре таса та ăшă. 3) Лаçра эпир сыснасем валли апат хатĕрлетпĕр. 4) Пӳрт мăрйинчен тĕтĕм тухать. 5) Асанне чӳречерен пăхать. 6) Эпир виçĕ пӳлĕмлĕ хваттерте пурăнатпăр. 7) Вĕсем тарăн нӳхрепре çĕр улми, кишĕр, хĕрлĕ кăшман, купăста усраççĕ. 8) Кĕлете тырă-пулă хучĕç. 9) Асаннесен ялта мунча пур.

3. Прочитайте и переведите на русский язык.

Пирĕн çемье Шупашкарта Ахазов урамӗнче пурăнать. Пирĕн çурт илемлĕ вырăнта ларать, йĕри-тавра йывăç-курăк ешерет, чечексен ырă шăрши сăмсана кăтăклать. Сывлăш уçă, таса. Эпир саккăрмĕш хутра тăватă пӳлĕмлĕ хваттерте пурăнатпăр. Кашни пӳлĕмĕнче пĕрер чӳрече. Манăн пӳлĕмри чӳрече хĕвел анăçнелле пăхать.

4. Прочитайте. Расскажите про родной дом.

Эпĕ Улатăр районне кĕрекен Анютино ялĕнче пурăнатăп. Пирĕн çурт çĕнĕ, пысăках мар, анчах çутă та тирпейлĕ. Урайĕ йывăçран. Пурĕ ултă чӳрече. Чӳречерен ытти хуралтăсем курăнаççĕ: кĕлет, мунча, сарай, лаç. Вĕсене пурне те йывăçран тунă.

Урок 13

УСВОЕНИЕ СЛОВ ПО ТЕМЕ «КИЛ-ÇУРТРИ ЯПАЛАСЕМ (ДОМАШНЯЯ УТВАРЬ)»

◈ Запомните слова и выражения ◈

кил-çуртри япаласем — **домашняя утварь**
пичке — **бочка**
юман пичке — дубовая бочка
витре — **ведро**
варинкке — **воронка**
чӳлмек — **горшок**
тăм чӳлмек — глиняный горшок
тура — **гребешок**
йывăç тура — деревянный гребешок
çăра — **замок**
çăрапа питĕр — запереть на замок
чаршав — **занавес, занавеска**
куç кĕски, тĕкĕр — **зеркало**
йĕп — **игла, иголка**
йĕппе çип — иголка с ниткой
катка — **кадка**
йывăç катка — деревянная кадка
çăраççи — **ключ**
хваттер çăраççийĕ — ключ от квартиры
кавир — **ковер**
хитре кавир — красивый ковер
сăпка — **колыбель, зыбка**
карçинкка — **корзина**
кĕпе-йĕм карçинкки — бельевая корзина
валашка — **корыто**
кĕпе валашки — корыто для стирки
хуран — **котел**
турчăка — **кочерга**
кравать — **кровать**
кравать çинче çывăр — спать на кровати
кăкшăм — **кувшин**
пĕр кăкшăм сĕт — кувшин молока
сак — **лавка**

кашăк
апат кашăкĕ
матрас, тӳшек
мамăк тӳшек
сĕтел-пукан
шăпăр
шăпăрпа шăл
михĕ, хутаç
михĕ çĕле
çĕçĕ
хуçмалли çĕçĕ
утиял
куçлăх
куçлăхпа çӳре
минтер, çытар
çӳлĕк
кĕнеке çӳлĕкĕ
çăпала
савăт-сапа
простынь
йĕтĕр
тенкел
вăрăм тенкел
çатма
тарăн çатма
шăрпăк
кантăк, кĕленче
чӳречe кантăкĕ
сĕтел
пукан
çĕнĕ пукан
арча
кивĕ арча
турилкке
хунар
хунар çут
чейник
пысăк чейник
чашăк
чей чашăкĕ

ложка
столовая ложка
матрац
пуховый матрац
мебель
метла, метелка
подмести метлой
мешок
сшить мешок
нож
складной нож
одеяло
очки
ходить в очках
подушка
полка
книжная полка
половник
посуда
простыня
скалка
скамейка
длинная скамейка
сковорода
глубокая сковорода
спичка
стекло
оконное стекло
стол
стул, табуретка
новый стул
сундук
старый сундук
тарелка
фонарь
включить фонарь
чайник
большой чайник
чашка
чайная чашка

чăматан	**чемодан**
сăран чăматан	кожаный чемодан
икĕ чăматан кĕнеке	два чемодана книг
шкап	**шкаф**
савăт-сапа шкапĕ	шкаф для посуды

1. Прочитайте и переведите предложения на русский язык.

Эпĕ икĕ пӳлĕмлĕ хваттерте пурăнатăп. Çывăрмалли пӳлĕмре кравать, мамăк минтер, ăшă утиял, çемçе пукан, çыру сĕтелĕ, тӳшек пур. Асаннен кивĕ арчи, манăн сăран чăматан кравать айĕнче лараççĕ.

2. Отгадайте загадки.

1) Урасăр — утать, алăсăр — шаккать.
2) Тăваттăн пĕртăван, тăваттăшĕ те пĕр тан.
3) Юрлă-пăрлă çумăр çăвать, хура чĕкеç тулта ларать.
4) Тултан сакăр кĕтеслĕ, шалтан тăват кĕтеслĕ.

Отгадки: *пӳрт, мăрье, сĕтел урисем, сехет.*

3. Прочитайте по ролям диалог по картинке «Наша квартира».

— Ку мĕн?
— Ку хваттер.
— Хваттерте мĕн пур?
— Хваттерте виçĕ пӳлĕм, кухня пур.
— Пӳлĕмре мĕн пур?
— Пӳлĕмре шкап, пукан, çыру сĕтелĕ, кĕнеке çӳлĕкĕ, кравать, тĕкĕр, диван, чаршав, телевизор, телефон пур.
— Кравать çинче мĕн пур?
— Кравать çинче мамăк матрас, таса простынь, ăшă утиял, çемçе минтер пур.
— Апат-çимĕç ăçта хатĕрлеççĕ?
— Апат-çимĕç кухньăра хатĕрлеççĕ.
— Кухньăра мĕн пур?
— Кухньăра сĕтел, савăт-сапа шкапĕ, пукан, тĕрлĕ фарфор турилккесем, стакансем, чей чашкисем, апат кашăкĕ, чей кашăкĕ, чейник, тарăн çатма, газ плити, кăкшăм пур.
— Апат-çимĕç хатĕрлеме юрататăн-и?
— Эпĕ апат-çимĕç хатĕрлеме юрататăп.
— Кукăль пĕçерме пĕлетĕн-и?

— Эпĕ пан улми кукли пĕçерме пĕлетĕп. Çак кукăле пурте юратса çиеççĕ.

— Кукăль пĕçерме кам вĕрентнĕ сана?

— Кукăль пĕçерме мана кукамай вĕрентнĕ.

— Тата мĕнле апат-çимĕç хатĕрлеме пĕлетĕн эсĕ?

— Эпĕ купăста яшки тутлă пĕçеретĕп.

— Купăста яшки пĕçерме мĕнле савăт-сапа тата çимĕçсем кирлĕ?

— Купăста яшки пĕçерме таса кастрюль, тăрă шыв, çĕр улми, какай, купăста, кишĕр, сухан, тутлă шăршăллă укроп, тăвар кирлĕ.

— Сирĕн хваттер пысăк-и?

— Пирĕн хваттер пысăк.

4. Прочитайте. Перескажите содержание.

ПИРĔН ХВАТТЕР

Эпĕ Шупашкарта Шевченко урамĕнче тăхăр хутлă çуртра пурăнатăп. Пирĕн çуртра пĕр подъезд, лавкка пур. Пирĕн хваттер тăххăрмĕш хутра. Вăл икĕ пӳлĕмлĕ. Хваттерте балкон пур. Чӳречесене эпир шурă сăрăпа сăрланă. Хваттерте яланах таса, хăтлă.

5. Составьте рассказ (диалог) про свое учебное заведение. Например, по таким темам: «Наш университет», «Наш факультет», «Мы учимся здесь».

Уроки 14—16

ИМЯ ПРИЛАГАТЕЛЬНОЕ

1. В русском языке имена прилагательные изменяются по родам, числам и падежам. В чувашском языке имена прилагательные не изменяются ни по родам, ни по числам, ни по падежам. Основной вопрос имени прилагательного в чувашском языке — ***мĕнле?*** (какой? какая? какое? какие?).

мĕнле?	*лайăх* хĕр ача
какая?	хорошая девочка
мĕнле?	*лайăх* хĕр ачасем
какие?	хорошие девочки
мĕнле?	*лайăх* хĕр ачасене
каким?	хорошим девочкам

2. В чувашских предложениях имя прилагательное обычно стоит перед определяемым словом: *Шупашкар — **таса** хула.* — Чебоксары — чистый город.

3. Русские прилагательные, указывающие на материал, из которого сделан предмет, передаются по-чувашски существительными: ***чул*** *çурт* — каменный дом (дом из камня), ***пурçăн*** *тутăр* — шелковый платок.

4. Именами существительными в чувашском языке передаются также и притяжательные прилагательные в русском языке: ***упа*** шăтăкĕ — медвежья берлога.

5. В чувашском языке, как и в русском языке, бывают однородные и неоднородные определения. Знаки препинания для обоих языков одинаковы. Например: 1) *Уйра* ***кăвак, хĕрлĕ, сарă*** *чечексем ӳсеççĕ.* — В поле растут голубые, красные, желтые цветы; 2) ***Çĕнĕ чул*** *çурт* — новый каменный дом.

6. В именных группах существительные с числительными всегда стоят в форме единственного числа: ***пĕр*** *тетрадь* — одна тетрадь, ***пилĕк*** *тетрадь* — пять тетрадей, ***çĕр*** *тетрадь* — сто тетрадей.

В именных группах показателем отрицания является частица ***мар***, которая всегда ставится после отрицательного имени и пишется раздельно: *сухан* ***тутлă мар***, ***йӳçĕ*** — лук не сладкий, а горький; *ку пӳрт* ***пысăк мар*** — этот дом небольшой.

1. Подберите прилагательные к данным существительным.

... *хĕвел* — солнце	... *каç* — вечер
... *уйăх* — луна	... *тӳпе* — небо
... *юр* — снег	... *çăлтăр* — звезда
... *çанталăк* — погода	... *çумăр* — дождь
... *кун* — день	... *аслати* — гром
... *пĕлĕт* — облако	... *ир* — утро
... *çил* — ветер	... *çĕр* — ночь
... *çиçĕм* — молния	... *пăр* — лед, град

2. Подберите имена существительные к прилагательным, переведите на русский язык.

шурă, кăпăшка, сивĕ ...	пăрăç
хĕрлĕ, кăвак, сарă ...	чĕпĕ
пысăк, çӳллĕ, капăр ...	хăяр
шурă, пылак, хытă ...	сахăр
симĕс, вăрăм, тутлă ...	çурт
сарă, пĕчĕк ...	чечек
хĕрлĕ, йӳçĕ, пĕчĕк ...	юр

хăмăр, çăмламас, хаяр ...	сывлăш
ăшă, таса, хăтлă ...	хĕл
хĕрлĕ, чее, çăмламас ...	кашкăр
хăравçă, шикленӳллĕ ...	мулкач
выçă, тискер, сăрă ...	тилĕ
сивĕ, хаяр ...	пӳлĕм
уçă, сивĕ, таса ...	йытă

3. Запомните описание человека.

а) внешнее описание:

тăрăхла (длинное), *çаврака* (круглое), *тăваткал* (квадратное) **пит** (лицо);

шĕвĕр (острый), *пуклак* (тупой) **янах** (подбородок);

шĕвĕр (острый), *пысăк* (большой), *пĕчĕк* (маленький), *каçăр* (курносый) **сăмса** (нос);

сарлака (широкий), *пĕчĕк* (маленький), *çӳхе* (тонкий), *хулăн* (толстый), *пысăк* (большой) **тута** (рот);

çырă (каштановые), *хура* (черные), *сарă* (светлые), *шурă, кăвак* (седые) **çӳç** (волосы);

вăрăм (длинная), *кĕске* (короткая), *шĕвĕр* (острая) **сухал** (борода);

çинçе (тонкая), *тачка* (толстая), *вăрăм* (длинная), *кĕске* (короткая) **мăй** (шея);

шĕпĕнлĕ (бородавчатый), *тур паллиллĕ* (с родимым пятном, с родинкой);

çӳллĕ (высокий), *лутра* (низкий), *вăтам* (средний) **пӳ** (рост);

тапчам (плотный), *хыткан* (худощавый), *ырханкка* (тощий), *типшĕм* (сухощавый), *патвар* (крепкий), *тĕреклĕ* (могучий), *черчен* (хрупкий), *хавшак* (хилый) **çын** (человек);

кăвак (голубые), *чакăр* (светло-голубые), *хура* (черные), *хăмăр* (карие), *симĕс* (зеленые) **куç** (глаза);

б) общее описание:

ачаш, çепĕç, тӳрккес, тирпейлĕ;
авăк, кăра çилĕллĕ, чăтăмлă;
лӳппер, ухмах, мăн кăмăллă;
йăрă, çивĕч, чĕрĕ, йăваш;
илемлĕ, хӳхĕм, хитре, кăмăллă;
кахал, юлхав, наян, усал, хаяр;
ватă, çамрăк, хăюллă, йĕркеллĕ;

тарават, çивĕч, ӳрĕк, çиллес;
хисеплĕ, ĕçчен, ăслă, паттăр;
хăюллă, йăваш, лăпкă, тӳлек;
вăйлă, вăйсăр, тирпейсĕр, илемсĕр;
кутăн, чее, намăссăр, самăр;
мăнтăркка, тӳрккес, чурăс, начаркка;
паллă, сăпайлă, сăпайсăр, чăрсăр;
тавçăруллă, çамрăк;
тăрăшуллă, тимлĕ, телейлĕ;
хисеплĕ, чыслă, сумлă;
хитре, илемлĕ, хӳхĕм, илемсĕр;
чăтăмлă, тӳсĕмлĕ, чăтăмсăр, чыслă;
ырă, лайăх, шанчăклă;
вăрăм, вăтанчăк, именчĕк, хăюсăр;
çивĕч, ӳрĕк, чĕрĕ, правур.

4. Из вышеприведенных прилагательных сначала выпишите слова, описывающие положительные стороны человека, потом слова, описывающие отрицательные стороны.

Положительные черты:

ăслă — умный
илемлĕ — красивый
паллă — известный
сăпайлă — скромный, сдержанный
тĕреклĕ — коренастый
йăваш — кроткий, тихий
патвар — крепкого телосложения
çивĕч — бойкий, проворный
тимлĕ — старательный
ĕçчен — трудолюбивый
мухтавлă — знаменитый, знатный
савăнăçлă — веселый, радостный
çирĕп — крепкий
йăрă — бойкий, проворный
кăмăллă — любезный, приветливый
лайăх — хороший, добрый
лăпкă — спокойный, тихий
маттур — сильный, молодец
тирпейлĕ — опрятный, аккуратный
ӳрĕк — расторопный, проворный
хастар — старательный, усердный
хăюллă — смелый
хитре — красивый
хӳхĕм — красивый, прелестный, славный
чĕрĕ — подвижный, бойкий
чипер — порядочный, пригожий
шанчăклă — надежный
чыслă — почетный, уважаемый, достойный
ырă — добрый, приятный

Отрицательные черты:

айван — наивный, глупый
ачаш — изнеженный, избалованный
ашкăнчăк — озорной, шаловливый
кахал — ленивый
кӳпшек — пухлый, толстый, жирный, полный
лӳппер — вялый, неуклюжий
мăран — медлительный
наян — ленивый
пуçтах — бедовый, буйный, своенравный
сĕмсĕр — наглый, нахальный
юлхав — ленивый
сӳрĕк — вялый, равнодушный
çăмăлттай — легкомысленный
çиллес — угрюмый, злой
тӳрккес — грубый
усал — злой, вредный
ухмах — дурной, глупый
ӳркенчĕк — ленивый
хаяр — безжалостный, злой
хăравçă — трусливый
чарусăр — несдержанный
чăрсăр — лихой, безрассудный
чее — хитрый
чунсăр — черствый, бессердечный
чурăс — грубый, заносчивый

5. Образуйте от следующих прилагательных формы сравнительной и превосходной степеней сравнения.

Например: *аслă — аслăрах, питĕ аслă.*

аслă — старший
кĕçĕн — младший
пысăк — большой
пĕчĕк — маленький
шултра — крупный
вĕтĕ — мелкий
хаклă — дорогой
йӳнĕ — дешевый
ăслă — умный
ухмах — глупый
хăюллă — смелый
хăюсăр — несмелый
вăйлă — сильный
вăйсăр — слабый
йĕпе — сырой, мокрый
типĕ — сухой

6. С приведенными выше прилагательными образуйте именные группы или короткие фразы.

Например: *пĕчĕк çурт* — маленький дом, *йӳнĕ пальто* — дешевое пальто, *тĕлĕнмелле ăслă çын* — удивительно умный человек. *Кĕпе тутăртан хаклăрах.* — Платье дороже платка.

7. Подберите к глаголам слова, отвечающие на вопрос *мĕнле?*

лар — сидеть
тăр — стоять
итле — слушать
хăвăрт — быстро
таса — чисто
тутлă — вкусно

ут — шагать, идти
шухăшла — думать
çывăр — спать
çи — есть, кушать
вула — читать
çыр — писать

илемлĕ — красиво
чипер — красиво
тӳрĕ — прямо
канлĕ — спокойно
тимлĕ — внимательно
хитре — красиво

8. Составьте выражения и предложения с данными прилагательными. Правильно укажите степени сравнения прилагательных.

хăвăртрах — быстрее
тӳрĕрех — прямее
чи ăслă — самый умный
сап-сарă — желтый-прежелтый
сĕм тĕттĕм — совершенно темный
çамрăкрах — моложе
çап-çамрăк — совсем молодой
калама çук пысăк — невыразимо большой
нимрен хаклă — дороже всего
йӳнĕ — дешевый

Образец:
Ешĕл курăк хушшинче
Сап-сарă чечек ӳсет.
Аслă Силпи ялĕнче
Нарспи ятлă хĕр ӳсет.

(К. Иванов)

9. Прочитайте. Замените имена прилагательные другими прилагательными — синонимами.

ансăр урам — тăвăр урам, хĕсĕк урам
тăнлă ача —
ĕлĕкхи пурнăç —
хăюллă ача —
самăр выльăх —
юлхав кушак аçи —
тирпейлĕ пӳлĕм —
вĕри çанталăк —

Нужные слова: *авалхи, тахçанхи; ăслă, тавçăруллă, ăнкаруллă; шăрăх; мăнтăр; типтерлĕ, таса; наян, кахал; харсăр, хастар, паттăр.*

10. Подберите подходящие прилагательные к данным существительным и переведите на русский язык.

çанталăк, чей	вĕри, шăрăх
калча, яшка	çăра, йăвă
çын, çурт	пысăк, мăнттай
пӳлĕм, ĕне	хура, тĕттĕм
шыв, çанталăк	сивĕ, сулхăн
сухал, пĕлĕт	кăвак, сенкер

Образец: *вĕри чей* — горячий чай, *шăрăх çанталăк* — жаркая погода.

11. Подберите к именам прилагательным соответствующие существительные.

Симĕс, ешĕл; кăвак, сенкер; кăвак, сăрă; шупка, шуранка; тĕттĕм, хура; ула, чăпар, ула-чăла.

Образец: *симĕс çулçă, ешĕл курăк.*

12. Переведите выражения на русский язык.

1) Сивĕ хĕл иртрĕ. 2) Ăшă çур çитрĕ. 3) Хĕлле кун кĕске, çĕр вăрăм. 4) Çĕр çырли пылак, пилеш йӳçĕ. 5) Çип çинçе, вĕрен тачка. 6) Сĕтел çӳллĕ, пукан лутра. 7) Чул йывăр, мамăк çăмăл.

13. Подберите антонимы.

1) Илме çăмăл.	Сутма мĕнле?
Мамăк шурă та çăмăл.	Çĕр кăмрăкĕ мĕнле?
Çитсă çӳхе.	Пустав мĕнле?
Сухан йӳçĕ.	Сахăр мĕнле?
Пыл пылак.	Пăрăç мĕнле?
Çулла ăшă.	Хĕлле мĕнле?
Нӳхрепре тĕттĕм.	Тулта мĕнле?

2) çĕнĕ (новый) — кивĕ (старый)	лайăх (хороший) —
кĕске (короткий) —	хытă (жесткий, твердый) —
çӳллĕ (высокий) —	ăшă (теплый) —
пылак (сладкий) —	сарлака (широкий) —
тăрă (прозрачный, чистый) —	ăслă (умный) —
çамрăк (молодой) —	çивĕч (острый) —

14. Переведите пословицы на русский язык.

Чĕлхи çемçе те, алли хытă.
Усал ĕç тусан ырă ят илтеймĕн.
Ăшă сăмах çавăрать, сивĕ сăмах сивĕтет.
Усал сăмах çилпе вĕçет, ырă сăмах утпа çӳрет.
Кахал çыншăн çĕр кĕске, ĕçченшĕн кун кĕске.

15. Ответьте на вопросы письменно.

Например: *Ăшă. Мĕн ăшă? Ăшă çанталăк, çу, шыв, пальто, кофта, пӳлĕм.*

Шурă. Мĕн? — Сахăр, юр, кĕпе ...
Çамрăк. Кам? Мĕн? — Ача, хунав, ĕмĕр ...
Ăслă. Кам? Мĕн? — Çын, машина ...
Тирпейлĕ, таса, хăтлă. Мĕн? — ...
Хĕрӳ, вĕри, шăрăх. Мĕн? — ...
Чирлĕ, халсăр, сывлăхсăр. Кам? — ...

16. Образуйте имена прилагательные при помощи аффиксов *-хи, -ти, -лă(-лĕ).*

Образец: *ял — ялти* (сельский, деревенский)
пăр — пăрлă (ледяной)

çур — ...	ялан — ...	вăрман — ...
шыв — ...	пыл — ...	çулла — ...
çу — ...	хĕлле — ...	кăнтăрла —...
çăпата — ...	каç — ...	йывăç — ...
ир — ...	çӳç — ...	чечек — ...

17. Прочитайте описание следующих игр и выполните задания по образцам.

1) Игра «Цепочка имен прилагательных».

Назовите имя прилагательное. Например: *çепĕç.* Ученики называют любое прилагательное, начинающееся с такой буквы, какие есть в этом слове: *çепĕç — çирĕп, ешĕл, пысăк, ĕçлĕ, çамрăк.*

Или на последнюю букву слова: *пысăк — кăтра — аслă — ăслă — ăнлă — ...*

2) Игра «Кто больше назовет слов?»

К прилагательному подберите имена существительные. У кого окажется больше слов, тот и победит.

Например: *сарă* — чечек, кăранташ, блузка, нуски, алсиш, ручка, хĕвел, çулçă, кĕркунне ...; *кăвак* — пĕлĕт, кăранташ, тĕс, ручка, юбка, кĕпе ...

Или назовите существительные, а потом к нему придумайте прилагательные.

Например: *хăяр* — симĕс, тутлă, вăрăм, пĕчĕк, пысăк, кĕске ...; *пан улми* — çаврака, симĕс, хĕрлĕ, пысăк, шултра, тутлă, сĕтеклĕ ...

3) Игра «Назовите прилагательное».

Один ученик называет существительное или глагол, другой подбирает прилагательное к нему.

Например: *çырла* — хĕрлĕ, пылак, шултра, вĕтĕ; *çыр* — хитре, таса, илемлĕ.

Третий образует от данных прилагательных различные степени сравнения.

Например: *хĕрлĕ — хĕрлĕрех, пылак — чи пылак, шултра — тĕлĕнмелле шултра* и т. д.

Остальные составляют с ними предложения.

Например: *Юлташ хитре çырать. Эпĕ чи шултра та хĕрлĕ çырла татрăм.*

18. Прочитайте текст. Выделите имена прилагательные.

ĂС ПАНĂ

(Юмах)

Пахчаçăпа тимĕрçĕ пĕррехинче купăста пахчи çумĕпе иртсе пынă тет.

— Пăх-ха, — тенĕ тимĕрçи, — епле пысăк пуçлă ку пахчари купăстасем!

— Тупнă тĕлĕнмелли, — хирĕçленĕ ăна пахчаçи. — Пĕррехинче эпĕ пӳрт пысăкăш купăста ӳстернĕччĕ.

— Пулма пултарать, — килĕшнĕ пек пулнă тимĕрçи, — анчах пĕрре эпĕ чиркӳ пысăкăш хуран тунăччĕ, вăт тĕлĕнмелле те тĕлĕнмелле!

Пахчаçă чăтайман, ахăлтатсах кулса янă:

— Епле çав тери мухтанчăк-ха эсĕ, чăтма çук суятăн, çапах та хĕрелместĕн! — тенĕ. — Кала, тархасшăн, мĕн тума кирлĕ пулчĕ сана ун пысăкăш хуран?

— Эп вăл хуранта санăн пӳрт пысăкăш купăстуна пĕçересшĕнччĕ, — ответленĕ ăна тимĕрçĕ ним кулмасăр.

19. Составьте предложения с прилагательными: *тĕттĕм, шăп, чее, çăмламас, тутлă, выçă.*

Образец: *Тĕттĕм каç. Сĕм вăрман шăп. Чее тилĕ те çывăрать. Çăмламас упа тутлă тĕлĕк курать. Выçă кашкăр анчах апат шырать.*

20. Переведите выражения на чувашский язык.

Медведь большой, а медвежонок маленький.
У коровы хвост длинный, а у козы короткий.
Дерево высокое, а куст низкий.
Береза белая, а черника черная.
Речка широкая, а ручеек узкий.

21. Прочитайте. Укажите имена прилагательные.

ФОРТЕ — ШАВЛĂ, ПИАНО — ШĂП

Ку инструмента 1709 çулта Бартоломео Кристофери Итали çынни шутласа кăларнă; вăл «шăп та, хытă та янăракан саслă клавесин» ятлă пулнă. Унăн сасси çав вăхăтри ытти янăракан музыка инструменчĕсенчен нумай хăватлăрах пулнипе çĕнĕ инструментăн çынсен чĕрисем патне çитиччен ĕмĕр çурă ытла «тăрăшма» тивнĕ. «Унăн сасси ытлашшипех вăйлă, ун çинче выляма питĕ кăткăс», — тенĕ çынсем.

Вăхăт иртнĕçемĕн композиторсемпе выляканcем çĕнĕ инструмента «туйса илнĕ», унăн вăй-хăватне курнă.

Унăн хальхи ятне пурте пĕлеççĕ: ку вăл — фортепиано, итальян чĕлхинчен куçарсан «шавлă» тата «шăп» тени пулать.

Килте, музыка шкулĕнче эпир пианино, сцена çинче вара рояль куратпăр. Вĕсем хушшинчи уйрăмлăх — рояльсен хĕлĕхсем карăнтарнă рами выртать, пианинăсен — тăрать.

Фортепиано ятлă музыка инструменчĕн сасси мĕнле пулать вара? Ак çапла: музыкант клавишсем çине пусса пĕчĕк мăлатуксене хускатать, мăлатукĕсем вара хĕлĕхсене перĕнеççĕ. Çак инструмент сассин вăрттăнлăхĕ çакăнта кăна.

(Н.Т. Чудаковăн «Я познаю мир» кĕнекинчен)

22. Переведите на чувашский язык и составьте предложения с данными словами и словосочетаниями.

а) быстрый — медленный, острый — тупой, частый — редкий, гладкий — шероховатый, мягкий — твердый, легкий —

тяжелый, ясный — пасмурный, глубокий — мелкий, сладкий — кислый, горький

б) белая береза, красная клюква, желтый желток, коричневая кора, синяя слива, голубой глобус, серый слон, зеленый лист, черная черника, мелкая вишня, круглый мяч, спелая малина, сочная слива, квадратный ящик, письменный стол, шахматная доска, стеклянный стакан, медный таз, хрустальная ваза, плюшевый медвежонок, шерстяные варежки, резиновые сапоги, кожаный чемодан, фарфоровая тарелка.

23. Образуйте самостоятельную форму прилагательных по образцу и переведите их на русский язык.

Образец: *ватă — ватти, ватăскер.*

аслă —	ĕçчен —	çӳллĕ —	вичкĕн —
ăслă —	вăрăм —	йывăр —	тăнлă —
хитре —	çутă —	илемлĕ —	тĕреклĕ —

24. Перепишите, выделите имена прилагательные, укажите степени сравнения.

1) Урамра паçăрхи пекех сĕм тĕттĕм, куçран йĕппе чиксен те курас çук. (Ю.Сем.) 2) Кĕркунне пулин те тӳпе тăрă. (Ç.Элк.) 3) Çаран хĕрринчи çамрăк та ем-ешĕл чăрăшсем пĕр хускалмасăр лараççĕ. Вăрманĕ кунта çăраскер, çулçăлläскер, тĕксĕмскер (В.Игн.) 4) Вăл ваттине те, вĕттине те васкавлă пулăшу пама яланах хатĕр. (Н. Вас.) 5) Чӳрече каррисем чăлт шурă. (А.Ĕçх.) 6) Кĕтерук аппа киле паян темĕн питĕ тĕксĕм сăн-питлĕ таврăнчĕ. (А.Ĕçх.) 7) Пĕлĕт тĕксĕм сенкер.

8) Ырă, тату пурăнччăр,
Усал сăмах ан илтчĕр. (К.Ив.)
9) Çĕнĕ çатан укăлча,
Кив капанлă анкарти. (К.Ив.)
10) Укăлча умĕнче шурă хурăн,
Укăлча умĕнче сирĕн кил. (В.Урт.)
11) Ырăран ырах пулать, усалтан усалах пулать. (Ват. сăм.)
12) Пĕчĕк хуранăн пăтти тутлă. (Тупм. юм.)

25. Отгадайте чайнворд на тему «Музыка».

1. Арменипе Азербайджан халăх юрăçи. **2.** «Раймонда» ятлă балет авторĕ. **3.** Лăпкă ташă. **4.** Пĕр сасă е пĕр инструмент валли çырнă музыка произведенийĕ. **5.** Саккăрăн юрлама е сакăр музыка



инструменчĕпе калама çырнă сочинени. **6.** Нота çырăвĕн икĕ вăйлă пайĕ хушшинчи музыка. **7.** Питĕ хăвăрт ташламалли Итали халăх ташши. **8.** Спектакльсенче е концертсенче пулакан тăхтав. **9.** Пĕр сасăран тепĕр сасă таран хушă. **10.** Концертăн уйрăм пайĕсем. **11.** Сасăсене вăхăт енĕпе йĕркелени. **12.** Французсен авалхи ташши. **13.** Виçĕ сасă е виçĕ инструмент валли çырнă музыка произведенийĕ. **14.** Гаммăсен саккăрмĕш сыпăкĕ. **15.** Операн вокал номерĕ. **16.** Музыкăллă-драмăллă пысăк произведени. **17.** Мĕнле те пулин аккорд сассисене пĕрин хыççăн теприне калани. **18.** Оркестр валли музыка çырса йĕркелесси. **19.** Пĕр-пĕр кĕвве выляканшăн (юрлаканшăн) юсаса хатĕрлени. **20.** Васкавлă темпсенчен пĕрин ячĕ. **21.** Çăмăл музыкăллă комеди. **22.** Хĕлĕхлĕ музыка инструменчĕ. **23.** Действи. **24.** Регистр тăрăх чи çӳлте тăракан вĕрсе каламалли пăхăр инструмент. **25.** Пысăках мар музыка произведенийĕ. **26.** Хĕрарăмăн е ачан чи хулăн сасси. **27.** Украина халăхĕн вĕрсе каламалли музыка инструменчĕ.

«Музыка» чайнворд тупсăмĕсем:

Трембита. Альт. Арабеска. Труба. Акт. Арфа. Оперетта. Аллегро. Аранжировка. Оркестровка. Арпеджио. Опера. Ариозо. Октава. Трио. Менуэт. Ритм. Номер. Тон. Антракт. Тарантелла. Такт. Октет. Соло. Вальс. Глазунов. Акшуг.

26. Составьте словосочетания по теме «Ӳт-пӳ пайĕсем (части тела)».

◈ Запомните слова и выражения ◈

пĕçĕ
сулахай пĕçĕ
пĕçĕ ыратать
сухал
кăвак сухал, шур сухал
вăрăм сухал
куç харши
илемлĕ куç харшисем
тăнлав
çӳç
хулăн çӳç
кĕске çӳç
çӳç кас
куç
хăмăр куç
кăвак куç
пуç
пуç ыратать
пыр
кăкăр
сарлака кăкăр
кăкăр тулли сывла
тута
тута тăс
çӳлти тута
шăл туни
шăл
шăл тасат
малти шăл
тир, ӳт
çемçе ӳт
ӳт хĕрелчĕ
чĕркуççи
чĕркуççи çине тăр
ывăç тупанĕ, ал лаппи
ывăç тупанĕ кĕçĕтет

бедро
левое бедро
бедро болит
борода
седая борода
длинная борода
бровь
красивые брови
висок
волосы
густые волосы
короткие волосы
стричь волосы
глаза
карие глаза
голубые глаза
голова
голова болит
горло
грудь
широкая грудь
дышать полной грудью
губа
надуть губы
верхняя губа
десна
зуб
чистить зубы
передний зуб
кожа
нежная кожа
кожа покраснела
колено
встать на колени
ладонь
ладонь чешется

пит
çаврака пит
типшĕм пит
пит çу
çамка
çамка тарланă
чавса
чавса çывăх та, çыртма çук
чĕрне
чĕрне кас
сăмса
шĕвĕр сăмса
сăмса айĕнче
пӳрне
пуç пӳрне
хулпуççи
хулпуççине амант
янах
пилĕк
ура кĕлли
куç тĕкĕ
çăвар
çăвара хуп
çăвар типсе ларчĕ
алă
çурăм
çурăм çинче вырт
кĕлетке
усси, мăйăх
хăлха
хăлха кашлать
мăй
çинçе мăй
чĕлхе
чĕлхе вĕçĕ
чĕлхе кăтарт
лицо
круглое лицо
худое лицо
мыть лицо
лоб
лоб вспотел
локоть
близок локоть, да не укусишь
ноготь
стричь ногти
нос
острый нос
под носом
палец
большой палец
плечо
поранить плечо
подбородок
поясница
пятка
ресница
рот
закрыть рот
во рту пересохло
рука
спина
лежать на спине
туловище
усы
ухо
в ушах шумит
шея
тонкая шея
язык
кончик языка
показать язык

27. Прочитайте. Составьте рассказ про своих родственников.

Пирĕн асатте ватă. Унăн хăлхи лайăх илтмест, çӳçĕ шуралнă, шăлĕсем пĕтнĕ, куçĕ япăх курать, пичĕ пĕркеленчĕк...

28. Опишите человека по внешним данным.

Образец: Манăн анне çӳллĕ пӳллĕ. Вăл сарă çӳçлĕ, кăвак куçлă, вăрăм мăйлă. Унăн пичĕ тăрăхла. Вăл питĕ илемлĕ хĕрарăм.

Урок 17

ПРОШЕДШЕЕ ОЧЕВИДНОЕ ВРЕМЯ

Глаголы прошедшего очевидного времени обозначают действия, произошедшие до момента речи, достоверность действия с точки зрения говорящего является бесспорной.

Вопросы	Ответы
Эпĕ мĕн турăм? Что я сделал(-а)?	*Эпĕ каларăм.* Я сказал(-а).
Вĕсем мĕн турĕç? Что они сделали?	*Вĕсем каларĕç.* Они сказали.
Вăл мĕн турĕ? Что он (она) сделал(-а)?	*Вăл килчĕ.* Он (она) пришел(-ла).

Если речь идет о действиях, очевидцем которых говорящий не был или в совершении которого он не уверен, употребляется форма глагола с аффиксом ***-нă(-нĕ)*** в утвердительной форме, ***-ман(-мен)*** в отрицательной форме.

Пичче шкула кайнă.	Брат пошел в школу.
Асанне килнĕ.	Бабушка приехала (пришла).
Вĕсем хулана кайман.	Они не поехали в город.
Атте ĕçрен килмен.	Отец не вернулся с работы.

Прошедшее очевидное время глагола образуется при помощи аффиксов ***-р-, -т-*** (основа глагола + время + лицо + ед. ч. (мн. ч.)

При отрицании после глагольной основы вставляется аффикс ***-ма-(-ме-)***.

основа гл.+ вр. + + ед. ч. (мн. ч.)	основа гл. + отриц. + + вр. + ед. ч. (мн. ч.)
Эпĕ *хăра-р-ăм (-ăр), çи-р-ĕм (-ĕр)*	*хăра-ма-р-ăм (-ăр), çи-ме-р-ĕм (-ĕр)*
Эсĕ *хăра-р-ăн (-ăр),*	*хăра-ма-р-ăн (-ăр),*

	çи-р-ĕн (-ĕр)	*çи-ме-р-ĕн (-ĕр)*
Вăл	*хăра-р-ĕ (-ç),*	*хăра-ма-р-ĕ (-ç),*
	çи-р-ĕ (-ç)	*çи-ме-р-ĕ (-ç)*

Если основа глагола заканчивается на *л, н, р,* то используется аффикс прошедшего времени ***-т-*** (в 1-м и 2-м лицах), а в 3-м лице — ***-ч-***: 1-е лицо — *килтĕм,* 3-е лицо — *килчĕ.*

◈ Запомните слова ◈

çанталăк	погода
ăшă	тепло, теплый (-ая,-ое)
сивĕ	холодно, холодный (-ая, -ое)
уяр	ясно, ясный (-ая,-ое)
çумăрлă	дождливый (-ая,-ое)
ăмăр	хмурый (-ая,-ое)
аслати	гром
çиçĕм	молния
çил	ветер
тӳпе, пĕлĕт	небо, облако
сывлăш	воздух
çил-тăман	вьюга
пăр	град
çумăр	дождь
тĕтĕм	дым
шăрăх	жара, зной
типĕ	засуха
пас	иней
юр	снег
хĕлле, хĕл	зима, зимой
çулла, çу	лето, летом
кĕркунне, кĕр	осень, осенью
çуркунне, çур	весна, весной
пăс	пар
çулăм	пламя
çут çанталăк	природа
тусан	пыль
хĕвел	солнце
тĕтре	туман
сывлăм	роса
юр кĕрпи	снежная крупа

вĕçет	летит
çăвать	идет
пуçланчĕ	начался (наступил (-а, -о)
пусăрăнчĕ	улеглась (пыль), уплотнился (снег)
хĕлхемленет	искрится
йăлтăртататать	блестит
тăрать	стоит
анать	заходит
çунтарать	припекает
хĕртсе пăхать	палит
тухать	встает, всходит
анса ларчĕ	зашло
иртрĕ	прошел

1. Составьте предложения вышеприведенными словами.

Образец: *Çанталăк ăшă. Ăшă çумăр çăвать. Сывлăм йăлтăртататать. Хĕвел хĕртсе пăхать. Хĕвел анса ларчĕ. Кĕрпе çăвать. Тусан пусăрăнчĕ. Кĕр иртрĕ. Хĕл пуçланчĕ.*

2. Спишите. Вместо точек вставьте существительные.

1) Çĕрле ăшă ... çурĕ. Ирхине сап-сарă ... пăхрĕ. 2) Мĕншĕн ... ăна хăвăр командăна йышăнмастăр? 3) ... мана тракторпа çŭреме вĕрентрĕ. 4) ... пухăва пухăнса çитрĕç. 5) Курăксене тайса ... вĕрет.

3. Прочитайте. Переведите на русский язык. Выпишите глагольные словосочетания, определите время, лицо, число.

КАМ ХĂРУШĂРАХ?

Пĕр шăши çури уçăлса çŭресен-çŭресен йăвине таврăнчĕ те амăшне çапла каларĕ тет:

— Анне, эпĕ картишĕнче икĕ тискер кайăк куртăм. Пĕри пит аван, тепри хăрушăскер! Тискерри хура ураллă, хĕрлĕ тĕпеклĕ, сăмси кукăр! Эпĕ ун умĕнчен иртнĕ чух хăрах урине çĕклерĕ те хыттăн кăшкăрса ячĕ... Тепри хĕвел ăшшинче выртатчĕ. Вăл шурă мăйлă, кăпăшка çăмлă. Хŭрине вĕл-вĕл сиктеркелет, ман çине куç илмесĕр ăшшăн пăхать...

Ыйтусем

Шăши çури мĕнле чĕр чунсем çинчен каланă?

Шăшисемшĕн хăш чĕр чунĕ хăрушăрах?

4. Прочитайте. Ответьте на вопросы.

ТĂРНАСЕМ

Пĕрре аттепе иксĕмĕр хире кайрăмăр. Çӳлте тăрнасем вĕçсе иртетчĕç. Вĕсен карти çекĕл пек курăнатчĕ. Чи малта пыракан тăрни ыттисенчен сасартăк аяларах анчĕ те айккинчен вĕçме тытăнчĕ. Паçăр ун хыççăн вĕçекенни халĕ пуринчен малта пулса тăчĕ.

— Ăçта каяççĕ вĕсем? — ыйтрăм аттерен.

— Кăнтăр енне, ăшă çĕре вĕçсе каяççĕ.

— Кунта та сивĕ мар-çке, вĕсен мĕншĕн каймалла? — каллех ыйтрăм эпĕ.

— Халь сивĕ мар та, часах кунта вĕсене сивĕ пулать, юр çума тытăнать, тăрнасем хĕлле шăнса вилме пултараççĕ. Çуркунне, кун ăшăтсан, вĕсем каллех вĕçсе килеççĕ, — тет атте.

— Мĕншĕн вĕсем карталанса вĕçеççĕ? — пĕлес килет манăн.

— Ушкăнпа вĕсене вĕçме çăмăлтарах. Эсĕ асăрхарăн-и, пĕри паçăр чи малта пыратчĕ, халь ав хыçалта вĕçет?

— Куртăм-çке.

— Малта пыраканнин пĕсехипе сывлăш касса пымалла, çул уçмалла. Ун хыççăн ыттисене вĕçме çăмăлтарах. Анчах пĕрмаях малта пырсан ывăнтарать, вăл ывăнсан ун вырăнне тепри йышăнать. Çапла вĕсем мĕн кăнтăра çитичченех пĕр-пĕрне пулăшса, карталанса вĕçеççĕ.

Атте çакна каланă хушăра тăрнасем инçе вĕçсе кайрĕç.

(Илпек М.)

Ыйтусем

Хирте ачапа ашшĕ мĕн курнă?
Тăрнасем ăшă çĕре вĕçсе кайнă чух мĕншĕн карталанса вĕçеççĕ?

5. Прочитайте. Выпишите глаголы, определите время, лицо, число.

КĔРКУННЕ ВĂРМАНТА

Силленет, шавлать саралнă вăрман,
Вăраххăн кашлать авалхи юман.
Ват юман кӳрши — çатрака çăка
Çаралчĕ ĕнтĕ, кайрĕ ыйăха.
Ак вĕрене те, аптранă енне,
Васкасах хывса капăр тумтирне

Нӳрĕ çĕр çине сарать майласа,
Хура сукмака хурать сăрласа.
Йăлтăркка тумлам туратран тумлать,
Çулçăсем çинче мерчен пек йăлтрать.
Акă ватă хыр, хулăн тăрлăскер,
Ем-ешĕл, хапа тум тăхăннăскер,
Тайăлмасть, сикмест, тумтирне хывмасть,
Кĕртен хăраса ăна пуççапмасть.
Ик-виç çĕр çулсем ӳснĕ вăл унта,
Сахал мар тӳснĕ сивве, шăрăха.
Ним те мар ăна вăхăт улшăнни,
Хăруш мар уншăн вăрман çарални.

(Ç. Элкер)

Ĕçсем

Кĕрхи сăнсене кăтартакан сăмахсене тупăр та тепĕр хут вуласа тухăр. Кĕркунне вăрман çарални çинчен каласа парăр.

Уроки 18—19

СКЛОНЕНИЕ СУЩЕСТВИТЕЛЬНЫХ И ЛИЧНЫХ МЕСТОИМЕНИЙ

Падежи и их вопросы

Тĕп падеж (Основной падеж)	*кам? мĕн?* (кто? что?)
Камăнлăх падежĕ (Притяжательный падеж)	*камăн? мĕнĕн?* (у кого? чей? чья? чье? чьи?)
Пару падежĕ (Дательный падеж)	*кама? мĕне? ăçта?* (кому? чему? куда?)
Вырăн падежĕ (Местный падеж)	*камра? мĕнре? ăçта?* (у кого? в чем? где?)
Туху падежĕ (Исходный падеж)	камран? мĕнрен? ăçтан? (от кого? из чего? с чего? откуда?)
Пĕрлелĕх падежĕ (Творительный падеж)	*кампа? мĕнпе?* (с кем? с чем?)

Çуклăх падежĕ (Лишительный падеж)	*камсăр? мĕнсĕр?* (без кого? без чего?)
Пиркепе тĕллев падежĕ (Причинно-целевой падеж)	*камшăн? мĕншĕн?* (для кого? за кого? за что?)

Склонение существительных с прилагательным и числительным

Основной падеж	*ăшă кĕрĕк*	*тутлă кукăль*
Притяжательный падеж	*ăшă кĕрĕк-ĕн*	*тутлă кукăл-ĕн*
Дательный падеж	*ăшă кĕрĕк-е*	*тутлă кукăл-е*
Местный падеж	*ăшă кĕрĕк-ре*	*тутлă кукăль-те*
Исходный падеж	*ăшă кĕрĕк-рен*	*тутлă кукăль-тен*
Творительный падеж	*ăшă кĕрĕк-пе*	*тутлă кукăль-пе*
Лишительный падеж	*ăшă кĕрĕк-сĕр*	*тутлă кукăль-сĕр*
Причинно-целевой падеж	*ăшă кĕрĕк-шĕн*	*тутлă кукăль-шĕн*
Основной падеж	*ăслă ача*	*икĕ ватă юман*
Притяжательный падеж	*ăслă ача-н*	*икĕ ватă юман-ăн*
Дательный падеж	*ăслă ача-на*	*икĕ ватă юман-а*
Местный падеж	*ăслă ача-ра*	*икĕ ватă юман-ра*
Исходный падеж	*ăслă ача-ран*	*икĕ ватă юман-ран*
Творительный падеж	*ăслă ача-па*	*икĕ ватă юман-па*
Лишительный падеж	*ăслă ача-сăр*	*икĕ ватă юман-сăр*
Причинно-целевой падеж	*ăслă ача-шăн*	*икĕ ватă юман-шăн*

Склонение личных местоимений

Основной падеж	*эпĕ*	*эсĕ*	*вăл*
Притяжательный падеж	*ман-ăн*	*сан-ăн*	*ун-ăн*
Дательный падеж	*ман-а*	*сан-а*	*ă-на*
Местный падеж	*ман-ра*	*сан-ра*	*ун-ра*
Исходный падеж	*ман-ран*	*сан-ран*	*ун-ран*
Творительный падеж	*ман-па*	*сан-па*	*ун-па*
Лишительный падеж	*ман-сăр*	*сан-сăр*	*ун-сăр*
Причинно-целевой падеж	*ман-шăн*	*сан-шăн*	*ун-шăн*
Основной падеж	*эпир*	*эсир*	*вĕсем*
Притяжательный падеж	*пир-ĕн*	*сир-ĕн*	*вĕсе-н*
Дательный падеж	*пир-е*	*сир-е*	*вĕсе-не*
Местный падеж	*пир-те (пирĕн-те)*	*сир-те (сирĕн-те)*	*вĕсен-че*

Исходный падеж	*пир-тен*	*сир-тен*	*вĕсен-чен*
	(пирĕн-тен)	*(сирĕн-тен)*	
Творительный падеж	*пирĕн-пе*	*сирĕн-пе*	*вĕсем-пе*
Лишительный падеж	*пирĕн-сĕр*	*сирĕн-сĕр*	*вĕсем-сĕр*
Причинно-целевой падеж	*пирĕн-шĕн*	*сирĕн-шĕн*	*вĕсем-шĕн*

1. Прочитайте вопросы и ответы. Обратите внимание на окончания существительных. Запомните эти окончания.

	Вопросы	Ответы
а)	*Камăн кĕнеке çук?* У кого нет книги?	*Петĕрĕн кĕнеке çук.* У Петра нет книги.
	Ку тетрадь камăн? Эта чья тетрадь?	*Ку тетрадь Маринен.* Эта тетрадь Марины.
	Ку хӳре мĕнĕн? Этот хвост чей?	*Ку хӳре мулкачăн.* Этот хвост зайца.
	Ку кĕнекесем камсен? Это чьи книги?	*Ку кĕнекесем ачасен.* Это книги детей.

Вопросы ***камăн? мĕнĕн?*** (у кого? чей?) определяют имя владельца предмета; употребляются аффиксы притяжательного падежа: ***-ăн (-ĕн), -н.***

б)	*Таня кампа ларать?* С кем сидит Таня?	*Таня Ленăпа ларать.* Таня сидит с Леной.
	Çăкăра мĕнпе касаççĕ? Чем режут хлеб?	*Çăкăра çĕçĕпе касаççĕ.* Хлеб режут ножом.
	Мĕнпе кайрĕ? На чем поехал?	*Машинăпа кайрĕ.* На машине поехал.

Вопросы ***кампа? мĕнпе?*** (с кем? с чем?) указывают на орудие труда или средство передвижения, при помощи которого производится действие; употребляется форма творительного падежа.

в)	*Вăл хăнана камсăр килчĕ?* Без кого он пришел в гости?	*Вăл хăнана Сашăсăр килчĕ.* В гости он пришел без Саши.
	Ача урама мĕнсĕр чупса тухрĕ? Без чего ребенок выбежал на на улицу?	*Ача урама çĕлĕксĕр чупса тухрĕ.* Ребенок выбежал на улицу без шапки.

Вопросы ***камсăр? мĕнсĕр?*** (без кого? без чего?) указывают на то, без кого-то и без чего-то совершается действие; употребляется форма лишительного падежа.

г) *Халăх мĕншĕн кĕрешет?* — *Халăх миршĕн кĕрешет.*
За что борется народ? — Народ борется за мир.
Камшăн сасăлатăн? — *Президентшăн сасăлатăп.*
За кого голосуешь? — Голосую за президента.

Вопросы ***камшăн? мĕншĕн?*** (за кого? за что? ради чего?) указывают на то, ради чего (кого) или для чего совершается действие; употребляется форма причинно-целевого падежа.

2. Запомните названия птиц.

çерçи — воробей
шăпчăк — соловей
кăвакарчăн — голубь
куккук — кукушка
курак — грач
тăрна — журавль
тăри — жаворонок
чĕкеç — ласточка
вĕршĕн — стриж
ула такка — дятел
шăнкăрч — скворец
сар кайăк — иволга
тăмана — сова
чакак — сорока

3. Прочитайте и перескажите содержание текстов.

ТĂМАНА

Тăмана — каçхи кайăк. Вăл вăрманта пурăнать. Кăнтăрла вăл çывăрать, каçхине шăши тытать. Унăн куçĕсем пысăк, анчах кăнтăрла вăл япăх курать. Тăмана питĕ усăллă кайăк.

КАЙĂКСЕМ

Пирĕн пата çуркунне чи малтан кураксем, тăрисем вĕçсе килеççĕ. Çанталăк ăшăтнăçемĕн вара йĕри-таврара кайăксен тĕрлĕ сасси янăраса тăрать. Çурхи пахчара каçсерен шăпчăк хăйĕн юррипе савăнтарать. Çыран хĕрринче çĕр чĕкеçĕсене (вĕршĕнсене) курма пулать. Вĕсем чĕвĕлтетнине, тăрăшсах ĕçленине пăхса тăма кăмăллă.

4. Прочитайте и допишите глаголы. Ответьте на вопросы.

ШĂПЧĂК

Çĕмĕртлĕхре шăпчăк юрла... Сарлака карнă çăварĕнчи пĕчĕк чĕлхи унăн шăнкăрав пек чĕтрен... Шăпчăк чаклаттарса юрă юрла..., чаклаттарсах вăрăм тунасене те çăт... Икĕ ĕçе харăс ту..., пĕри теприне ним чухлĕ те чăрмантар... Мĕншĕн вара шăпчăка юрă тăрантар... теççĕ-ха?

Ыйтусем

Шăпчăк мĕн тăвать? Вăл мĕнпе тăранса пурăнать?

5. Прочитайте рассказ несколько раз. Закройте книгу и перескажите содержание.

КУККУК

Куккук сассине пурте юратаççĕ. Пирĕн çĕршыври вăрмансенче ултă тĕрлĕ куккук пурăнать. Хăшĕсем икĕ-виçĕ çăмарта тăваççĕ те хăйсемех чĕпĕ кăлараççĕ. Теприсем ултă-çичĕ çăмарта тăваççĕ.

Çур çăва çитсен куккук авăтма пăрахать.

6. Прочитайте. Ответьте на вопросы письменно.

УЛА ТАККА

Пирĕн вăрманта тĕрлĕ кайăк пурăнать. Вĕсен шутĕнче ула такка та пур. Вăл кунти вăрмантах хĕл каçать. Вăл — вăрман санитарĕ. Йывăççене хурт-кăпшанкăсенчен тасатать. Ула такка чирлĕ йывăçсен хуппине вăрăм сăмсипе такканине аякранах уйăрса илме пулать. Вăл йывăç хăвăлĕнче пурăнать.

Ыйтусем

Ула такка ăçта хĕл каçать?
Вăл ăçта пурăнать?
Вăл мĕн енчен çынна усă кӳрет?

7. Продолжите рассказ.

ТĂРНА

Пĕтĕм кайăксенчен мана тăрна килĕшет. Унăн мăйĕ вăрăм, тĕкĕ хитре. Тăрна çинчен юмахсем нумай çырнă...

8. Прочитайте, выпишите незнакомые слова и переведите со словарем.

ШĂНКĂРЧ

Çуркунне эпĕ хамăрăн пахчана шăнкăрч вĕлли çакатăп. Шăнкăрч унта мăк, тĕк, мамăк, улăм, типĕ курăк тултарать. Вăл мана тав туса юрă шăрантарать. Эпĕ унăн юррипе киленетĕп.

9. Прочитайте, выпишите главные члены предложения.

ÇУЛЛАХИ ВĂРМАН

Çуллахи вăрманта тĕрлĕ кайăк сассине илтме пулать. Инçех мар куккук авăтать, ула такка йывăç хуппине таккать. Кăнтăрла вăрманта питĕ шавлă. Каçхине вара тăмана сассине, йывăçсем шавланине кăна илтетĕн.

10. Спишите текст. Укажите времена глаголов.

ЧĔКЕÇСЕМ

Эпĕ çулла кукамай патĕнче ялта пурăнатăп. Вĕсен хитре чул çурт. Пӳрт тăрринче чĕкеçсем йăва çавăрнă. Вĕсем йăвине тăмран тăваççĕ. Çумăр çăвас умĕн чĕкеçсем çĕр çумĕпе вĕçеççĕ.

11. Прочитайте. Устно ответьте на вопросы.

САР КАЙĂК

Сар кайăк — сап-сарă пĕчĕк кайăк. Вăл питĕ юрлама юратать. Ваттисем: «Сар кайăк тăрăшсах юрласан тепĕр кун уяр çанталăк пулать», — тенĕ.

Ыйтусем

Ваттисем сар кайăк çинчен мĕн тенĕ?
Кайăксем çинчен эсир мĕнле каларăшсем, юмахсем пĕлетĕр?

12. Прочитайте текст. Определите падеж существительных.

КУККУК

Куккуксем Африкăран вĕçсе килеççĕ. Куккук тăрăхларах кĕлет-келлĕ, сăмси вĕçĕ авăнчăк. Ури кĕске те вăйлă, сарăрах тĕслĕ. Куккуксем сиенлĕ нăрăсене, лĕпĕш хурчĕсене пĕтереççĕ. Куккук çăмартине ытти вĕçен кайăксен йăвисене хурать.

13. Прочитайте и перескажите содержание сказки.

ИКĔ ЮЛТАШ

(Юмах)

Пурăннă тет икĕ çерçи: Чик тата Чирик. Вĕсем питĕ туслă пулнă. Анчах пĕррехинче Чик пĕчĕк кăна кукăль касăкĕ тупать те пĕчченех çисе ярать. Çакна Чирик пĕлет. Юлташĕ çине кӳренет. Чик хăйне юлташĕ умĕнче питĕ айăплă туять. «Çакăн пек урăх тумастăп», — тесе тупа тăвать.

14. Прочитайте текст. Определите падеж существительных.

ÇЕРÇИПЕ ШĂПЧĂК

(Юмах)

Пĕррехинче Шăпчăкпа Çерçи тĕл пулчĕç тет.

«Мĕнле пурăнатăн, Çерçи тус?» — тесе ыйтать Шăпчăк.

Çерçи: «Эпĕ халĕ хулара пурăнатăп. Хĕвел çаврăнăш, çăкăр татăкĕ яланах ман умра. Çулла та, хĕлле те ман валли апат пур. Эсĕ мĕнле пурăнатăн?» — тесе калать.

Шăпчăк: «Эпĕ ытларах чăтлăх вырăнсене юрататăп. Каçсерен юрă шăрантаратăп. Сивĕсем пуçланиччен кăнтăра çул тытатăп. Çул çинче йывăрлăхсем нумай», — тет.

Урок 20

УСВОЕНИЕ СЛОВ ПО ТЕМЕ «КИЛТИ ВЫЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХ ТАТА КАЙĂК-КĔШĔК (ДОМАШНИЕ ЖИВОТНЫЕ И ПТИЦЫ)»

◈ Запомните слова и выражения ◈

лаша, ут
çӳрен лаша
турă лаша
кушак аçи, аçа кушак
кахал кушак аçи
кушак çури
кушак çури вылять
ватă кушак
сурăх
сурăх кĕтĕвĕ
сысна çури
хур
хур аçи
хур чĕппи
хур ами
хур ами тырă сăхать
хур какалать
кăркка
кăркка ами
кăркка чĕппи

лошадь, конь
рыжая лошадь
гнедой конь
кот
ленивый кот
котенок
котенок играет
старая кошка
овца
стадо овец
поросенок
гусь
гусак
гусенок
гусыня
гусыня клюет зерно
гусь гогочет
индюк
индейка
индюшонок

кăркка аçи çухалнă

чăх

чăпар чăх

чăх çăмарта тунă

автан

автан авăтать

автан киккирикĕ

кăвакал

кăвакал аçи

кăвакал аçи ишет

кăвакал чĕппи

кăвакал чĕппин сăмси

кăвакал нартлатать

чĕпĕ, чăх чĕппи

чĕпĕ шиплетет

индюк пропал

курица

рябая курица

курица снесла яйцо

петух

петух поет

гребень петуха

утка

селезень

селезень плавает

утенок

клюв утенка

утка крякает

цыпленок

цыпленок пищит

1. Составьте текст из готовых предложений.

Эпир вĕсене юрататпăр.

Пирĕн асанне те шурă, хĕрлĕрех сарă чăхсем усрать.

Ялта кашни хуçалăхра чăх-чĕп, выльăх-чĕрлĕх пур.

Вĕсем çынран нимĕн чухлĕ те хăрамаççĕ: ывăçранах тырă пĕрчисене е çăкăр тĕпренчĕкĕсене таклаттарса сăхса çиме юратаççĕ, хăйсене çупăрласа ачашланине те кăмăллаççĕ.

2. Прочитайте текст. Подумайте, какие вопросы можно поставить к каждому слову.

КИЛТИ ВЫЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХ

Пирĕн асанне ялта пурăнать. Вăл выльăх-чĕрлĕх усрать: кушак, йытă, сурăхсем, качака. Кушак Маруç ятлă. Вăл шăши тытать. Йытă кил сыхлать. Сурăхсем çулла кĕтĕве çŭреççĕ. Качака та кĕтĕве çŭрет.

3. Прочитайте, самостоятельно разделите текст на части и составьте план.

КРОЛИК

Кролик — чи хăвăрт ŭсекен килти чĕр чун. Кроликăн какайĕ çемçе те тутлă. Пĕр кроликран çулталăкра нумай какай туса илме пулать. Чирлĕ çынсене сыватнă чух кролик ашĕ çитерме сĕнеççĕ, вăл эмел пек сиплĕ.

Кроликăн тирĕ те паха, мамăкĕ те лайăх. Кролик усрама ятарлă вырăн кирлĕ. Ăна ещĕксенчен хатĕрлеме пулать.

Кролик пурăнакан вырăна яланах таса та типĕ тытмалла. Сивĕ вăхăтра урайне улăм сармалла.

Кролик симĕс курăк, кишĕр, çарăк, купăста, кăшман, çĕр улми питĕ кăмăллать.

4. Прочитайте, переведите на чувашский язык.

ДВА УПРЯМЦА

Встретились два козленка на мостике. А мостик был узкий. Надо было козлятам уступить дорогу и пропустить друг друга, но они были упрямые.

Хотел черный козленок пойти вправо, а белый его не пустил. Стукнулись козлята лбами и полетели в воду.

Прибежала хозяйка и спасла упрямцев.

5. Отгадайте чайнворд на тему «Зоология».



1. Ĕç выльăхĕ. **2.** Кăнтăр енчи вăрăм хăлхаллă выльăх. **3.** Вĕçен кайăк. **4.** Çăткăн тискер кайăк. **5.** Шыври чĕр чун. **6.** Вăрманти вĕçен кайăк. **7.** Юрлакан вĕçен кайăк. **8.** Австралире пурăнакан хутаçлă чĕр чун. **9.** Чĕр чунсен утаманĕ. **10.** Ял хуçалăхне сиен кӳрекен чĕр чун. **11.** Хытă çунатлă хурт-кăпшанкă. **12.** Вĕçен ка-

йăксен патши. **13.** *Мулкач* сăмахăн синонимĕ. **14.** Чăпар тĕслĕ вĕçен кайăк. **15.** Çурисене сĕтпе ӳстерекен шыври чĕр чун. **16.** Кăшлакан чĕр чун. **17.** Килти выльăх. **18.** Çăткăн вĕçен кайăк. **19.** Пĕчĕк вĕçен кайăк, шыв-шур таврашĕнче пурăнма юратаканскер. **20.** Шыва юратакан вĕçен кайăк.

«Зоологи» чайнворд тупсăмĕсем:

Кăвакал. Текерлĕк. Хăлат. Сурăх. Тыркас. Кит. Куккук. Карсак. Ăмăрт кайăк. Нăрă. Арлан. Упа. Кенгуру. Шăпчăк. Карăш. Рак. Кашкăр. Карăк. Ашак. Лаша.

Уроки 21—22

УСВОЕНИЕ СЛОВ ПО ТЕМЕ «УЛМА-ÇЫРЛА (ФРУКТЫ И ЯГОДЫ)»

◈ Запомните слова и выражения ◈

Ананас, апельсин, банан, киви, кизил, кокос, мандарин, финик, фисташки — слова, заимствованные из русского языка.

улма-çырла — **фрукты-ягоды**
кĕтмел — **брусника**
кĕтмел шывĕ — сок брусники
кĕтмел пиççе çитнĕ — брусника поспела
чие çырли — **вишня**
чие çырли тат — рвать вишни
чие çырли çи — есть вишни
хурăн çырли — **земляника**
вăрманти хурăн çырли — лесная земляника
хурăн çырли çулçи — лист земляники
çĕр çырли — **клубника**
çĕр çырли тат — собирать клубнику
шур çырли, мăк çырли — **клюква**
йӳçĕ шур çырли — кислая клюква
пĕрлĕхен — **костяника**
йӳçĕ пĕрлĕхен — кислая костяника
йĕплĕ хурлăхан — **крыжовник**
йĕплĕ хурлăхан варенийĕ — варенье из крыжовника
хăмла çырли — **малина**
хура хăмла çырли — черная малина
сарă хăмла çырли — желтая малина

сырлан
сарă сырлан
сырлан çăвĕ
слива
слива вăрри
сĕтеклĕ слива
хурлăхан
хĕрлĕ хурлăхан
хура хурлăхан
шурă хурлăхан
пан улми
хура çырла
хура çырла алла варалать
кăвак çырла
пылак кăвак çырла

облепиха
желтая облепиха
масло облепиховое
слива
косточка сливы
сочная слива
смородина
красная смородина
черная смородина
белая смородина
яблоко
черника
черника пачкает руки
ежевика
сладкая ежевика

❊ *ЗНАЕТЕ ЛИ ВЫ?* ❊

МАЛИНА

— Отгадайте, кто может сразу положить в рот сто ягод и проглотить их?

— Может быть, медведь?

— Не угадали! Да каждый! Каждый из вас не раз глотал по сто ягод сразу. Не верите? А малину вы ели? Небось, по две и по три ягоды сразу в рот клали? Так вот знайте: то, что вы называете ягодой малиной, — это вовсе не одна ягода, а много-много маленьких ягодок. Может быть, пятьдесят, а может быть, сто. Эти ягодки сидят на маленькой шишечке, да так тесно, что самой шишечки не видно. Попробуйте дернуть спелую малину за стебелек, шишечка выдернется, и маленькие ягодки легко будет отделить одну от другой и разглядеть.

(Л. Кон. Книга о растениях)

ХĂМЛА ÇЫРЛИ

— Çăвара кам та пулин пĕр харăсах çĕр çырла таран хыпнине тата ăна çăтса янине курнă-и эсир?

— Тен, упа вăл?

— Çук. Сирĕнтен кашниех пĕр хутчен кăна мар çĕршер çырла таран çисе янă. Ĕненместĕр-им? Хăмла çырли çисе курнă-и? Çинĕ пулсан пĕрер çырлан мар, икшер е виçшер çырлан. Мĕнле

ăнланмалла-ха çакна? Хăмла çырли пĕчĕк-пĕчĕк çаврашкасем çине пайланса каять. Акă ĕнтĕ вăл пĕчĕк çырласем, вĕсене уççăнах курма, пĕрерĕн çисе пăхма пулать.

1. Переведите предложения на русский язык.

1) Пирĕн пахчара чие çырли, хура хурлăхан, çĕр çырли, сĕтеклĕ слива, тутлă пан улми ўсет. 2) Вăрманта хура çырла пуçтартăмăр. 3) Сырлан çырлине пухма йывăр. 4) Мăк çырлинче витамин нумай.

2. Выучите стихотворение-загадку Н.Ыдарая наизусть.

Эпĕ питĕ кăмăллатăп
Сар хĕвелĕн ăшшине.
Çу çитсен шăтса тухатăп
Çаран-улăх таврашне.
Çумăрпа эп исленетĕп,
Хĕрелетĕп хĕвелпе,
Çынсене те илĕртетĕп
Тутлă, ырă пулнипе.
Ку мĕн? *(Çĕр çырли.)*

3. Прочитайте. Переведите на русский язык.

ХУРĂН

Хурăн — вăрман илемĕ. Хурăнлăх аякранах илĕртсе ларать. Унта таса, çутă, ирĕклĕ пек туйăнать. Чăнах та, хурăн ытти йывăççенчен чи капăрри: хуппи шурă, турачĕсем çинçе те кăтра, çулçисем çавра. Вăл тата питĕ усăллă йывăç: унăн сĕткенĕ питĕ сиплĕ, хурăнран фанера, ачасем валли йĕлтĕр, сĕтел-пукан та ăсталаççĕ. Хуппинчен тĕрлĕрен карçинккасем, тăвар киллисем, тикĕт тата сĕрмелли çусем тăваççĕ. Çавăн пек чипер вăл пирĕн хурăн.

4. Сами составьте рассказ по образцу.

ПИЛЕШ

Пирĕн тавралăхри йывăççенчен кĕркунне чи илемли — пилеш. Çуркунне вăл шап-шурă чечеке ларать. Кĕр çитсен унăн çырлисем пиççе хĕрелеççĕ. Сивĕсем пуçлансан пилеш çырлине тутă кĕрет, тĕрлĕ вĕçен кайăксем хĕлĕпех ăна çисе савăнаççĕ. Пилеш çырлипе çынсем те усă кураççĕ. Унран тем тĕрлĕ кĕсел, варени хатĕрлеççĕ.

Хĕрлĕ çырлаллă пилешсĕр пуçне хура пилеш те лартса ӳстереççĕ. Унăн çырлисем пылакрах, çулçи те урăхла. Хура пилеше çынсем шăнтса та, типĕтсе те хураççĕ, хĕлле хура пилешрен витаминлă пылак шывсем хатĕрлеççĕ. Пилеш çинчен вырăсла та, чăвашла та питĕ нумай юрă хывнă.

5. Прочитайте рассказ «Тысячелистник» А.Онегова из книги «Тропинка полевая». Переведите на чувашский язык, выделите глаголы, укажите время.

ТЫСЯЧЕЛИСТНИК

Каждый лист тысячелистника, как перышко птицы, собран из многих небольших листиков-пушинок. Таких листиков-пушинок у одного растения действительно может быть чуть ли не целая тысяча. Вот и назвали это растение — тысячелистник.

Чай из тысячелистника повышает аппетит, а листья, приложенные к ранам, останавливают кровь и заживляют раны. Это любимая трава кроликов. Лечат тысячелистником болезни у лошадей, коров, коз, овец, свиней.

Как-то огородники заметили, что на грядках, возле которых рос тысячелистник, все овощи были здоровыми, и враги-насекомые на них не нападали.

Случится теперь беда, нагрянут на огород прожорливые насекомые, и тут хозяева огорода вспомнят про тысячелистник... Заварят это растение в кипятке и таким настоем опрыскивают грядки с овощами. И врагов — как не бывало.

6. Прочитайте. Перескажите содержание на чувашском языке.

ТУЛĂ

Тулă уй-хирте ӳсет. Унăн туни çӳллĕ те çинçе, туни çинче пучах, кашни пучахра — пĕрчĕсем.

Кĕр çитсен тулла вырса пуçтараççĕ. Тулă пĕрчисене тиесе армана илсе каяççĕ. Унта ăна авăртаççĕ. Çапла вара шурă çăнăх пулать.

Çăнăхран чуста çăраççĕ, чустаран шурă çăкăр, тĕрлĕ булка, печени, шушкă пĕçереççĕ. Тулăранах манна кĕрпи те тăваççĕ. Арманта тулла кăшт шултрарах авăртаççĕ те — пулчĕ те кĕрпе, пăтă пĕçерме хатĕр те.

Хура çăкăра мĕнрен тăваççĕ-ши?

Хура çăкăра ырашран пĕçереççĕ, çавăнпа ăна ыраш çăкри теççĕ.

Как вы понимаете следующие пословицы?

Хлеб — всему голова.
Свой хлеб сытнее.
Хлеб ногами топтать — народу голодать.
Разговором сыт не будешь, если хлеба не добудешь.

❊ *ЗНАЕТЕ ЛИ ВЫ?* ❊

— Кому и когда сооружен памятник хлебопеку?

— Памятник мастеру хлебопеку был поставлен в Риме греку Марку Вергилию Эврисаку примерно 30 лет до новой эры.

Для выпечки одного батона требуется мука от помола 10 тысяч зерен.

* * *

— Çăкăр пĕçерекене мухтаса хăçан палăк лартнă?

— Пирĕн эра пуçланиччен 30 çул малтан Римра çăкăр пĕçерекен чаплă ăстаçăна Марк Вергилий Эврисак грека асăнса палăк лартнă.

Пĕр батон пĕçерме 10 пин пĕрчĕрен авăртнă çăнăх кирлĕ.

7. Ответьте на вопросы.

1) Сколько лет доживает дуб в благоприятных условиях? (Лайăх условисенче юман 1000 çул таран е ытларах та пурăнма пултарать.)

2) Можно ли встретить «таких долгожителей» на территории нашей страны? (Мускав таврашĕнче 600—800 çула çитнĕ юмансене тĕл пулма пулать.)

3) Сколько литров воды «впитывает» старый дуб в жаркий день? (Шăрăх çанталăкра ватă юман 100 л таран шыв «ĕçет», 5—6 витре шыва пăслантарса кăларать.)

4) Чем полезен дуб? (Юман — питĕ çирĕп йывăç. Унран катка-пичке, сĕтел-пукан, паркет тата тем те тăваççĕ. Турачĕсем хĕрӳллĕ вутă пулаççĕ, хуппинчен сăрă тăваççĕ.)

5) Каков «век» осины? (Ăвăс 100 çул таран кăна «пурăнать».)

6) Где используют осиновую древесину? (Ăвăсран ытларах спичка шăрпăкĕсем хатĕрлеççĕ.)

7) Что вы знаете про ель? (Чăрăш 300—500 çул таран пурăнать. Унпа хут, пурçăн çип хатĕрленĕ тата музыка инструменчĕсем тунă çĕрте усă кураççĕ. Лăссисем — выльăхсемшĕн витаминлă апат. Сывлăхшăн сиплĕ йывăç.)

8. Прочитайте и переведите на чувашский язык.

На земле 350—500 тысяч видов растений. Среди них лишь около полутора тысяч культурных. Они дают человеку хлеб и крупы, сахар и раститительное масло, овощи и фрукты, служат кормом скоту, сырьем для пищевой и легкой промышленности, топливом и строительным материалом. В давние времена, когда культурных растений еще не было, людям приходилось довольствоваться тем, что они находили в природе. Лишь около 10 тысяч лет назад семена стали не только употреблять в пищу, но и собирать для посева. К этому времени относят начало возделывания растений. Культурные растения подразделяют на три основные группы: полевые, овощные и плодовые.

Урок 23

ИНФИНИТИВ

Неопределенную форму глагола в русском языке принято считать начальной формой глагола, которая не указывает ни времени, ни числа, ни лица и оканчивается на ***-ть, -ти, -чь:*** *знать, идти, печь.*

В чувашском языке к неспрягаемым формам глагола относятся инфинитив, причастие и деепричастие.

Инфинитив образуется от основы глагола с помощью аффикса ***-ма(-ме), -машкăн(-мешкĕн).*** В речи эта форма встречается в сочетании с глаголами для обозначения цели, назначения.

Отрицательная форма инфинитива образуется при помощи частиц ***çук*** или ***мар.*** Частица ***çук*** указывает на невозможность выполнения действия, а частица ***мар*** — на противоположное лексическое значение действия.

Например: ***Кино курма кайрĕç.*** — Пошли смотреть кино.
Вулама çук. — Невозможно читать.

Инфинитив мĕне кăтартать?

1. Куçăм глаголĕсене ăнлантарнă чухне тепĕр ĕçĕн тĕллевне кăтартать: *ĕçлеме кайрĕ* (пошел работать), *ăсатма тухрĕ* (вышел провожать), *шыв ăсма чупрĕ* (побежал за водой), *кино курма пыр* (приходи смотреть кино).

2. Пулăшу пĕлтерĕшлĕ глагол умĕн каланă чухне тĕп ĕçе палăртать: *вулама тытăнтăм* (начал читать), *юрлама пуçларĕ* (начал петь), *ĕненме пулать* (можно верить).

3. Паллă ятне ăнлантарнă чухне пахалăх мĕнле ĕçре палăрнине пĕлтерет: *пурăнма лайăх* (жить хорошо), *калама çăмăл* (легко сказать), *чупма йывăр* (тяжело бежать), *çиме шел* (жалко есть).

4. Паллă мар ***çук*** сăмах умĕнче чухне ĕçе тума май килменнине пĕлтерет: *пурăнма май çук* (невозможно жить), *пĕлме çук* (невозможно знать), *курма çук* (невозможно видеть), *вулама çук* (невозможно читать).

5. Паллă мар форма хыççăн ***мар*** татăк хушсан вăл пĕр ĕç теприне хирĕçленине пĕлтерет: *эпĕ тавлашма мар, калаçма килнĕ* (я пришел не спорить, а поговорить).

1. Образуйте от данных глаголов инфинитивные выражения и переведите на русский язык. Составьте с ними предложения.

Чуп, çӳре, кил, пыр, кай, хăпар, кĕр, тух, каç, ирт, аптăра, васка, ĕлкĕр, килĕш, пăрах, пикен, пул, пуçла, пуçтарăн, тапрат, хăтлан.

Например: *чупма пикен, çӳреме пуçла, килме васка.*

1) Ăмăртуçăсем *чупма* пикенеççĕ. 2) Асанне чирленĕ хыççăн майĕпен *çӳреме* пуçларĕ. 3) Ачасем уяв кун ирех шкула *килме* васкарĕç.

2. Прочитайте. Переведите на русский язык. Выделите инфинитивные выражения. Поставьте вопросы к глаголам.

ЧАКАКПА ЧĔППИ

Чакак хăйĕн чĕппине сыхă пулма вĕрентет тет. Çинĕ чухне те иртен-çӳрен чĕр чунсенчен асăрханма хушать тет. «Эсĕ виççĕ сăх та пĕрре çаврăнса пăх, виççĕ сăх та пĕрре çаврăнса пăх», — тесе калать тет. «Сăхмассерен çаврăнса пăхсан мĕн пулĕ-ши?» — тесе калать тет чĕппи. «Ара, эсĕ манран та чее-çке!» — терĕ тет чакак чĕппине.

3. Переведите на чувашский язык.

1) Пока я ходить умею,
Пока я глядеть умею,
Пока я дышать умею,
Я буду идти вперед.

(Л.Ошанин)

2) Высокая сосна под порывами сильного ветра начала качаться и скрипеть. Мороз начал слабеть. Потянул западный ветер.

4. Спишите. Подчеркните главные члены предложения. К глаголам подберите антонимы.

ХӖЛЛЕ

Тарăн юрлă, шартлама сивĕсемлĕ, çил-тăманлă хĕл çитрĕ. Тӳпе тĕксĕм пĕлĕтпе хупланнă. Хĕл вĕçнелле çеç тӳпене сенкер сăн çапать, хĕвел ытларах тата вăйлăрах çутатма пуçлать.

Йывăççем хĕлĕпех çап-çара лараççĕ, хырпа чăрăш çеç хăйсен лăссисене тăкмаççĕ.

Анчах хĕлле те йывăççем хăрмаççĕ. Курăксем те нумайăшĕ пĕтмеççĕ. Юр вĕсене сивĕрен сыхлать, шăнса пĕтме памасть. Юр мĕн чухлĕ хулăн, ӳсен-тăрансене çавăн чухлĕ ăшă.

5. Прочитайте. Выделите инфинитивные формы.

1) Пурçăн тутăрне çыхма пĕлес пулать,
Çыхма пĕлес пулать кăна мар,
Çыхма пĕлес пулать, çума пĕлес пулать —
Унсăрăн тĕсне çухатать.

Тăван халăха сума сăвас пулать,
Сума сăвас пулать анчах мар,
Сума сăвас пулать, ыр ĕç тăвас пулать —
Унсăрăн ятна çухатан. (Юрăран.)

2) Хĕрсем утă çулма тухаççĕ,
Умне шурă саппун çакаççĕ... (Юрăран.)

6. Прочитайте. Переведите на русский язык. Выпишите инфинитивные формы.

1) Пĕччен чух шухăшлама-ĕмĕтленме ирĕк. (Ю.Скв.)
2) Пĕр-пĕрне курсассăн, тус-тăван,
Юрлама та савăнма аван. (Юрăран.)
3) Анне кăна каçармашкăн, ĕненмешкĕн пултарать. (Ват. сăм.)
4) Пурăнмашкăн пурте пултараççĕ,
Пурнăç тума пĕлмест кашни. (А.Арт.)
5) Халăх хушшинче упа та ташлама вĕренет. (Ват.сăм.)
6) Касма çăмăл, ӳстерме йывăр. (Ват.сăм.)
7) Ал-ура — ĕçлеме, ик хăлха — итлеме, пĕр чĕлхе — пуплеме. (Ват. сăм.)
8) Тухрăм эпĕ Атăл хĕррине
Итлемешкĕн çĕршыв юррине. (Юрăран.)

9) Чĕлхӳпе ан васка, ĕçне тума васка. (Ват.сăм.)
10) Шыва кĕмесĕр ишме вĕренеймĕн. (Ват.сăм.)
11) Кĕтме пĕлекен телейлĕ. (Ват.сăм.)

7. Образуйте от глаголов инфинитивные формы.

Например: *вула... юрат — вулама юрат.*

çӳре... пуçла
калаç... тăрăш
ыйт... юрать
пурăн... çук
туп... пултар
кур... çук
палласа ил... пултар
кай... тух
çӳре... тытăн
юрла... пуçла
çыр... тытăн
ĕçле... пуçла
пĕçер... хатĕрлен
çу... пуçла
выр... тух
итле... хатĕрлен

Урок 24

УСВОЕНИЕ СЛОВ ПО ТЕМЕ «АПАТ-ÇИМĔÇ (ПИЩА)»

◈ Запомните слова и выражения ◈

апат-çимĕç — **пища**
икерчĕ — **блин**
тăпăрчă икерчи — блины с творогом
икерчĕ, пӳремеч — ватрушка, лепешка
повидло икерчи, пӳремечĕ — ватрушка с повидлом
шаркку — **жаркое**
çĕр улми шарккăвĕ — картофельное жаркое
шаркку ларт — поставить жаркое
çу — **жир, масло**
выльăх çăвĕ — животный жир
услам çу — сливочное масло
пăтă — **каша**
манна пăтти — манная каша
шĕвĕ пăтă — жидкая каша
пăтă пĕçер — варить кашу
кĕсел — **кисель**
çырла кĕселĕ — ягодный кисель
йăва — **колобок**
пыл — **мед**

çăka пылĕ
чечек пылĕ
сĕт
качака сĕчĕ
тин сунă сĕт
вĕретнĕ сĕт
çăнăх
тулă çăнăхĕ
шурă çăнăх
аш, какай
чăх какайĕ
кукăль
аш кукăлĕ (кукли)
пан улми кукăлĕ
купăста кукли
кукăль пĕçер
хуран кукли
апат
тутлă апат
вĕри апат
яшка, шӳрпе
вир шӳрпи
турăх
хăйма (йӳçмен сĕтрен)
хăйма пух
тăвар
яшка
сĕт яшки
яшка пĕçер
шушкă
чăкăт
тăпăрчă
пылак тăпăрчă
чуста
йӳçĕ чуста
çăкăр
хура çăкăр
шурă çăкăр
чей
чей ĕç

липовый мед
цветочный мед
молоко
козье молоко
парное молоко
кипяченое молоко
мука
пшеничная мука
белая мука
мясо
куриное мясо
пирог
пирог с мясом
яблочный пирог
пирог с капустой
печь пироги
вареники
пища, еда
вкусная пища
горячая пища
похлебка
похлебка из пшена
простокваша
сливки
снимать сливки
соль
суп
молочный суп
варить суп
сушка
сырок
творог
сладкий творог
тесто
кислое тесто
хлеб
черный (ржаной) хлеб
белый (пшеничный) хлеб
чай
пить чай

шăрттан	**шыртан** (домашняя колбаса)
çăмарта	**яйцо**
чăх çăмарти	куриное яйцо

1. Ответьте на вопросы.

— Ку мĕн? *(Буфет.)*
— Ачасем ăçта кĕнĕ? *(Буфета.)*
— Буфетра мĕн сутаççĕ? *(Апат-çимĕç.)*
— Кам мĕн илет? *(Ачасене ят парăр.)*
— Повидло икерчи мĕн чухлĕ тăрать?
— Пĕр стакан турăх миçе тенкĕ тăрать?
— Пĕр тăпăрчă пӳремечĕ, пĕр стакан çырла сĕткенĕ мĕн чухлĕ тăрать?
— Килте сирĕн апат-çимĕç кам хатĕрлет?
— Асаннӳ мĕн кукли пĕçерет?
— Аннӳ мĕн яшки пĕçерет?
— Эсĕ кукăль пĕçерме пĕлетĕн-и?
— Мĕншĕн çапла калаççĕ: «Çăкăртан асли çук», «Çăкăр — халăх пуянлăхĕ», «Çăкăр вăл — пурнăç», «Çăкăр тутине ĕçлекен пĕлет»?

Çак ваттисен сăмахне вулăр, пăхмасăр калама вĕренĕр:

Выççан çăкăр тутлă ялан, пыл та йӳçĕ тăрансан.

2. Прочитайте рассказ И.Я.Яковлева «Пустая обида» («Йăлăнтармăш»). Ответьте на вопросы.

ЙĂЛĂНТАРМĂШ

Атте пасара каймассерен пирĕн валли кулачă илсе таврăнатчĕ.

Пĕрре çапла пасартан таврăнсассăн атте пурсăмăра та пĕрер татăк кулачă валеççе пачĕ. Мана ыттисенчен сахал панă пек туйăнчĕ. Эпĕ кулачăна илмесĕр йăлăнтарса пĕр кĕтесе кайса лартăм.

Атте ман еннелле çаврăнса пăхрĕ те: «Мĕншĕн илместĕн тата кулачăна?» — терĕ. Эпĕ пĕр чĕнмесĕр ларатăп. Атте мана панă кулачă татăкне илчĕ те йăмăксене валеççе пачĕ: «Мейĕр, çийĕр Иван татăкне, вăл кĕтесре йăлăнтарса лартăрах», — терĕ.

Йăмăксем вара манăн татăка çирĕç ячĕç. Кайран ыйтасчĕ — кулачă çук. Çын аллинчи кукăль пысăккăн курăнать тесе ахаль каламан çав ваттисем.

Ыйтусем

Ачасен ашшĕ ăçта кайнă?
Пасартан вăл мĕн илсе килнĕ?
Кулачă татăкĕ пурин те пĕр пек пулнă-и?
Мĕншĕн Иван çилленнĕ (кăмăлсăр пулнă)?
Иван мĕн тунă?
Ача хăйĕн йăнăшне туйса илнĕ-и?
Калавра мĕнле ваттисен сăмахĕ пур? Мĕне вĕрентет вăл?

3. Переведите вопросы и ответы на русский язык.

Вопросы	Ответы
Ку мĕн?	Ку кишĕр.
Вăл мĕн тĕслĕ?	Вăл сарă хĕрлĕ тĕслĕ.
Кишĕр ăçта ӳсет?	Кишĕр пахчара йăран çинче ӳсет.
Кишĕр мĕнле пахча çимĕç?	Кишĕр — тутлă та усăллă пахча çимĕç.
Унра мĕн нумай?	Кишĕрте витамин нумай.
Кишĕре мĕнсем юратаççĕ?	Кишĕре мулкачсем юратаççĕ.
Кишĕре хăçан акаççĕ?	Кишĕре çуркунне акаççĕ.
Ăна хăçан пуçтарса кĕртеççĕ?	Ăна кĕркунне пуçтарса кĕртеççĕ.
Кишĕртен мĕнле апат-çимĕç хатĕрлеме пулать?	Кишĕртен тĕрлĕрен тутлă апат-çимĕç хатĕрлеме пулать: кишĕр кукли, кишĕр котлечĕ, кишĕр салачĕ тата ытти çимĕçсем.
Кишĕрĕн «тăван çĕршывĕ» мĕнле çĕршыв-ши?	Шурă, сарă тĕслĕ кишĕре Афганистанран, сарă хĕрлĕ тĕслĕ кишĕре Вăтаçĕр тинĕс çывăхĕнчи çĕрсенчен илсе килнĕ.

4. Прочитайте. Переведите на русский язык.

ĂÇТА КАЛЬЦИ ПУР?

Кĕлетке виçи 75 килограмм пулсан сирĕн организмра кальци 1,5 килограмм. Анчах та унăн саппасне пуянлатсах тăмалла. Çавна май кашни кун 1,5 стакан кефир е сĕт ĕçни, 100 грамм тăпăрчă е 40 грамм сыр çини усăллă. Çие юлнă хĕрарăма кальци вара 1,5 хут ытларах кирлĕ.

Организм кальцие фосфор пулăшнипе йышăнать. Çавăнпа та

сĕт çимĕçĕсемсĕр пуçне ешĕллĕхсем, пăрça йышши çимĕçсем, мăйăр çинчен ан манăр. Кăштах çу хушса çисен апатри кальци те, витаминсем те организмра лайăхрах ирĕлеççĕ.

5. Прочитайте. Перескажите содержание на русском языке.

УТНИ УСĂЛЛĂ

Тухтăрсем çуран ытларах çӳреме сĕнеççĕ. Эрнере 4—5 хут 30—60-шар минут уçăлса çӳрени усăллă. Çурăма тӳрĕ тытма тăрăшăр, утăмсем кĕске пулччăр. 1 минутра 130 утăм тусан 1 сехетре 1,6 çухрăм утатăр. Ку шăпах виçеллĕ.

Уроки 25—26

ПРИЧАСТИЕ

В чувашском языке причастие имеет несколько форм: причастия настоящего, прошедшего, будущего времени, причастие долженствования.

Причастие настоящего времени образуется с помощью аффиксов ***-акан(-екен), -кан(-кен):*** *çыракан* (пишущий), *вулакан* (читающий), *килекен* (приходящий).

Причастие прошедшего времени по образованию совершенно сходно с глаголами прошедшего времени с аффиксом ***-нă (-нĕ)***: *вуланă, килнĕ.* Определить его можно лишь по роли в предложении: глагол прошедшего времени состояния бывает в предложении сказуемым и стоит в конце предложения, а причастие прошедшего времени бывает определением и оказывается внутри или в начале предложения: *ачасем кĕнеке вуланă* (дети читали книгу); *вуланă кĕнеке* (прочитанная книга).

Отрицательная форма причастия настоящего и прошедшего времени сходна с отрицательной формой прошедшего времени глагола состояния: *вуламан, çырман.*

Причастие будущего времени образуется с помощью аффикса ***-ас(-ес):*** *вулас, килес; вулас кĕнеке* (книга, которую предстоит читать), *килес çын* (человек, который должен прийти).

В предложении причастие будущего времени бывает определением и сказуемым.

Причастие долженствования образуется при помощи аффикса ***-малла(-мелле).*** В предложении это причастие бывает определением: *тĕлĕнмелле ĕç* (удивительное дело), сказуемым в безлич-

ном предложении: *ман унта каймалла* (мне нужно идти туда).

Отрицательная форма причастий будущего времени и долженствования образуется при помощи отрицательной частицы ***мар***: *калас мар, каламалла мар.*

1. Замените выделенные слова одним словом и переведите на чувашский язык.

Например: *студент,* ***который пишет*** *сочинение — студент, пишущий сочинение (сочинени çыракан студент).*

Девочка, *которая играет* с подругами; дорога, *которую переложили* через тайгу; задача, *которую* мы *решаем.*

2. Прочитайте. Выпишите причастия, укажите время.

Брест çывăхĕнче Беловежа вăрманĕ пур, унта сайра тĕл пулакан чĕр чунсен заповедникĕ вырнаçнă. Çав вăрманта авалах тĕрлĕ йышши чĕр чунсем çĕршер, пиншер пурăннă. Наполеон çарĕ çакăнти чĕр чунсене питĕ сиен кӳнĕ, унăн пĕрре виççĕмĕш пайĕ ун чухне пĕтнĕ.

Иккĕмĕш тĕнче вăрçи хыççăн ку вăрманти зубрсене фашистсем пачах тĕп туни палла пулнă. Ученăйсем тăрăшнипе Беловежăна ытти вырăнтан зубрсене илсе килсе ĕрчетме тытăннă. Халĕ вĕсем кунта виç çĕре яхăн. Заповедникра пин те тăват çĕр хир сысни, пин те пилĕк çĕр хир качаки, икĕ пине яхăн пăлан, пилĕк пин ытла пăши, тилĕ, мулкач, пакша йышĕсене шутласа та кăлараймăн. Беловежа вăрманĕ пĕтĕмпе çĕр вăтăр ултă пин гектар, вĕсенчен çитмĕл тăхăр гектарĕ — пирĕн çĕршывра, ытти пайĕ — Польшăра.

3. Составьте словосочетания с данными словами и переведите их на чувашский язык.

срубить — ..., срубленный — ...
вынести — ..., вынесенный — ...
одевать — ..., одевающий — ...
выполнять — ..., выполняемый — ...
видеть — ..., видимый — ...
читать — ..., читающий, читаемый — ...
услышать — ..., услышанный — ...
вырыть — ..., вырытый — ...
не заметить — ..., незамеченный — ...
строить — ..., построенный — ...

4. Переведите на чувашский язык и составьте предложения с данными выражениями.

Например: срубленное дерево — *касса пăрахнă йывăç. Çул çинче касса пăрахнă йывăç выртать.*

Срубленное дерево, сломанная ветка, услышанная новость, приглашенный гость, накопившийся запах, разлившаяся река, незасеянное поле, вспаханный участок, возвращающиеся туристы, везущий воз.

5. Образуйте от данных причастий самостоятельную форму и составьте предложения.

Например: *касас — касасси. Йывăç касасси çăмăл, ӳстересси йывăр.*

Ӳкермелле, шутлакан, чавакан, йăтакан, тиенĕ, канман, вĕренекен, çыракан, вулас, тăракан, ӳсекен, выракан, пуçтармалла, савакан, тунă, килекен, чупакан, ларас, пурăнмалла, пĕçерекен, тытакан, туянакан, вĕçекен, çаралса кайнă, вĕçсе килнĕ, утса тухнă, йĕрлекен, куракан, итлемелле, илтес, шухăшлакан, ĕçлес, тултарас, юрлакан.

6. Переведите данные выражения на русский язык.

Ачан выляс килет — ача вылясшăн, пирĕн вĕренес килет — эпир вĕренесшĕн, йăмăкăн ĕçлес килет — йăмăк ĕçлесшĕн, атте хаçат вуласшăн, лайăххине ĕмĕтленес килет, никама та усал тăвас марччĕ, пурте лайăх пурăнасшăн, çамрăксен нумай пĕлмелле, ĕçлес пулать, ывăнсан канас пулать, каç пуличчен киле çитес пулать, кашни кун пӳлĕмре тирпейлес пулать, выльăхсене тăрантарас пулать, ачасене вĕрентес пулать, ватăсене хисеплес пулать, парăма парас пулать.

7. Прочитайте текст и перескажите содержание на русском языке, выпишите причастия.

ÇĂРТТАН МĔН ТĔСЛĔ?

Çулла. Эпĕ сарлака та лăпкă авăр хĕрринче ларатăп. Сарă тĕслĕ юшкăнтан хуралса ларнă йывăç тураттисем курăнаççĕ. Сасартăк авăр хĕрринче йăпшăнакан хăмăр çăрттан хӳри курăнчĕ, çутăрах çĕре çитсен аякĕсем пăхăр тĕслĕ çуталакан пулчĕç. Мана асăрхасанах шыв хупахĕн сарлака çулçисем айне чăмрĕ, халĕ вара черченкĕ симĕс тĕслĕ пулса тăчĕ. Авăр тĕпĕнче шыва путнă йывăç

вуллисем çумĕнче хура пысăк çăрттан пытанса выртать, хăй вара шыври йывăç тураттинчен нимĕнпе те уйрăлса тăмасть. Чи хитре çăрттана вара эпĕ хăйăрлă ăшăх вырăнта куртăм. Вăл чи хаклă сарă металтан нимĕнпе те уйрăлса тăмасть, хăй вара пĕр тапранмасăр выртать. Тĕрлĕ тĕслĕ çăрттансемпе эпĕ чылайччен киленсе лартăм.

8. Переведите эти выражения на русский язык.

1) Ман вĕренес килет. 2) Сан çиес килет-и? 3) Ман хулана каяс килет. 4) Сан çырла çиес килмест-и? 5) Ман çывăрас килет. 6) Эпĕ институтра вĕренесшĕн. 7) Ача выляма тухасшăн. 8) Ĕçе пĕчĕкрен вĕренес пулать.

9. Запомните названия грибов.

боровик	шур кăмпа, шур масла
волнушка	хыр кăмпи, хĕрлĕ кăрăç
груздь	кăрăç
дождевик	çумăр кăмпи
дубовик	юман кăмпи
лисичка	сар кăмпа
масленок	масла кăмпи
мухомор (ядовит.)	шăна кăмпи
опенок	уплюнкка
опенок луговой	çерем кăмпи
подберезовик	хурăн кăмпи
рыжик	хыр кăмпи
свинушка	ут тути
сморчок	кăтра кăмпа
сыроежка	яка кăмпа, майра кăмпи
трутовик (несъед.)	ăвă кăмпи
шампиньон	çерем кăмпи, шампиньон

10. Прочитайте. Выпишите причастные словосочетания.

ОПЯТА

В лесу растут самые разнообразные грибы. Вот, к примеру, опята. Опята — одни из самых вкусных и быстрорастущих грибов. Они растут колониями. Случается, грибники набирают полную корзину, почти не сходя с одного места. Вот хороший гриб, скажешь ты, и смешной, растет только на трухлявых пнях и,

наверное, поэтому называется опенком. Так-то оно так, но только с одной поправкой: не опенок растет на трухлявом пне, а пень стал трухлявым потому, что на нем поселились эти грибы. И не только пень, поселятся опята на дереве, и дерево пропадет. Вот, оказывается, какой этот опенок, а на вид такой симпатичный, серовато-желтый и с длинной ножкой. Не все грибы съедобные. Есть и злейшие враги — ядовитые грибы. И если человек съест их, у него наступает тяжелое отравление, нередко, — смерть. Поэтому надо твердо запомнить, если ты не знаешь, что за гриб перед тобой — не бери его!

УПЛЮНККА

Вăрманта тĕрлĕ кăмпа ӳсет. Акă, тĕслĕхрен, уплюнкка. Уплюнкка — чи тутлă та хăвăрт ӳсекен кăмпа. Вăл пысăк ушкăнпа ӳсет. Нумай чухне кăмпаçăсем çакăн пек вырăнта пĕр самантрах тулли карçинкка кăмпа пухаççĕ.

«Мĕнле лайăх кăмпа, кулăшла та пек, çĕрĕк тункатасем çинчех ӳсет», — тесе шухăшлама пулать. Çавăнпа та ăна тункката кăмпи теççĕ тепĕр майлă. Çапли çапла пулĕ те, анчах кăмпи çĕрĕк тункката çинче мар, тункати çак кăмпа ернĕрен çĕрсе кайнă. Уплюнкка тункката çинчен чĕрĕ йывăç çине «пурăнма» куçсан вара çак йывăç пĕтмеллипех пĕтет. Акă мĕнле иккен уплюнкка текен кăмпа! Пăхма хăй илемлĕ, сăрăрах сарă тĕслĕ, вăрăм туналлă.

Кăмпасем хушшинче «хаяр тăшмансем» — наркăмăшлă кăмпасем пур. Çын çакăн пек кăмпа çисен вилме те пултарать. Çавăнпа та пĕлмен кăмпана пуçтарма юрамасть.

11. Прочитайте. Спишите, подчеркните причастия.

ШОФЕР ПУЛАС КИЛЕТ

Урамра выляса çӳресси йăлăхтарнă ĕнтĕ. Хăвăртрах пысăк пулас килетчĕ ман. «Хăçан ĕç шанса парĕç-ши?» — тесе шухăшлаттăм аслисем çине пăхса.

Колхоз шоферĕ Сапак Петти машина моторне тимлĕн тĕрĕсленине, унтан çемçе ларкăч çине ларса тырă е ытти япаласем турттарма кайнине чылай асăрхаса тăнă эпĕ. Пĕрре вăл мана хăйпе пĕрле хире им-çам леçме илсе кайнăччĕ. Çакăн хыççăн эпĕ тĕлĕкре те машинăпа çӳреме пуçларăм.

Каярахпа мана Петя кукуруза вырнă çĕре илсе кайрĕ, унпа пĕррехинче тырă леçме кайса килтĕм.

«Шофертан чаплăрах ĕç çук та пуль çут тĕнчере», — шухăшлаттăм эпĕ Петя çине хиселесе пăхса.

— Кирек кам пулсан та юрĕ, Лекçей. Ĕçе çеç юратса тума хăнăхса çит, — терĕ пĕррехинче мана атте.

Эпĕ сăмах патăм.

(К.Петров)

Уроки 27—28

ДЕЕПРИЧАСТИЕ

Деепричастие — это неизменяемая форма глагола. Деепричастных форм в чувашском языке много. Все они образуются от основы глагола с присоединением к нему различных аффиксов.

1. Деепричастие на ***-са(-се)*** обозначает признак действия, отвечает на вопросы как? каким образом?: *тимлесе итле* (слушать внимательно), *васкаса ут* (шагать торопливо), *васкамасăр ут* (шагать неторопливо, не спеша).

Деепричастие на ***-са(-се)*** входит в состав описательной формы глаголов, где обозначает не добавочное действие, а главное: *вуласа паратăп* (прочитаю), а также может являться составной частью глагольного составного сказуемого при некоторых глаголах (*пĕтер* — кончать, *ĕлкĕр* — успевать, *çит* — доходить до предела, *çитер* — доводить до предела, *чарăн* — перестать делать): *эпĕ çырса ĕлкĕртĕм* (я успел(а) написать).

Деепричастие на ***-са(-се)*** указывает также на самостоятельное действие при другом действии, выраженном спрягаемой формой глагола. В этом случае в русском языке употребляют однородное сказуемое: *эпир çул тăрăх юрласа килтĕмĕр* (мы всю дорогу шли и пели).

Деепричастие на ***-са(-се)*** имеет сравнительную степень, при этом оно выражает большую напряженность действия: *васкасарах ут* (иди скорее), *астусарах тыткала* (держи осторожнее).

2. Деепричастие на ***-а(-е)*** употребляется в удвоении: *çыра-çыра, киле-киле,* входит в состав описательной формы глаголов: *сике пар* (прыгай), а также составного глагольного сказуемого: *хăпа пĕлмест* (не отстает).

3. Деепричастие на ***-иччен*** употребляется в качестве обстоятельства времени: *çиме лариччен* (до еды), обстоятельства образа действия: *ывăниччен ĕçлерĕ* (работал до устали), для обозначения действия, с которым сравнивается другое действие, в русском языке в этом случае используют слова «чем» или «чтобы»

с неопределенным наклонением глагола: *ахаль лариччен вăрмана каясчĕ* (чем сидеть без дела, лучше бы пойти в лес).

Некоторые обороты с этим деепричастием употребляются особо: *хĕл каçиччен* (до конца зимы, в течение зимы), *çу каçиччен* (все лето, в течение лета), *çĕр каçиччен* (всю ночь).

4. Деепричастие с аффиксом ***-массерен(-мессерен)*** употребляется для обозначения повторяемого действия. В предложении бывает обстоятельством времени или сказуемым придаточного предложения: *эпĕ хулана каймассерен кĕнеке илсе килетĕп* (каждый раз, когда бываю в городе, я покупаю книгу).

5. Деепричастие с аффиксом ***-нăçемĕн(-нĕçемĕн)*** показывает усиление действия, выраженного другим глаголом, при этом само деепричастие как бы является мерилом: *каç пулнăçемĕн сулхăнланса пырать* (по мере наступления сумерек становится все прохладнее и прохладнее). В предложении бывает сказуемым придаточного предложения или входит в состав сложного сказуемого: *ĕçленĕçемĕн ĕçлес килет* (чем больше работаешь, тем больше хочется работать), *çил вăйланнăçемĕн вăйланса пынă* (ветер все крепчал и крепчал).

6. Деепричастие с аффиксом ***-нăранпа(-нĕренпе)*** указывает на условно принятое время действия: *вăл кайнăранпа* (с тех пор как ушел (ушла).

7. Условно-временные деепричастия образуются при помощи аффиксов ***-сан(-сен), -сассăн(-сессĕн)*** и употребляются в качестве сказуемого в придаточных предложениях времени и условия: *Пурте пуçтарăнсан эпир апата лартăмăр.* (Когда все собрались, мы сели обедать.) *Пурте вăхăтра пуçтарăнсан эпир ирех тухса кайăттăмăр.* (Если бы все собрались вовремя, мы пошли бы рано утром.)

1. Прочитайте. Найдите в тексте деепричастия. Текст переведите на русский язык.

а) Хаваслӑ çуркунне çитрĕ. Хĕвел хĕртсе пăхать. Çырмара шыв кĕрлесе юхать. Çунатлă туссем кăнтăртан вĕçсе килчĕç. Эпир вĕсене валли вĕллесем турăмăр.

ă) Кахал кăмака çинчен аниччен ĕçчен ту çине хăпарнă. Мотор чарăна-чарăна ĕçлеме тытăнчĕ. Кая юлсан каю шăтать. Ĕç йывăр пулсан çиме тутлă. Шупашкара килмессерен чăваш театрĕнче пулатăп. Хăнасем килнĕренпе нумаях та вăхăт иртмерĕ, тулта çил-тăман аташса кайрĕ.

2. Вместо точек поставьте нужный аффикс деепричастия. Переведите на русский язык.

1) Ĕçле... ĕç ӳсĕнет. 2) Тăрăш.... сăрт çинче те тулă пулать. (Ват. сăм.) 3) Хăй кăкăрĕпе хӳтĕле... мана вăл вилĕмрен çăл... хăварчĕ. 4) Чăт...-чăт... чул та çурăлать. (Ват. сăм.) 5) Фронта кай... Нина ашшĕ колхозра бригадир пулнă. (М.Труб.). 6) Хур хăрах ура çине тăр... сивĕтет. 7) Хĕлле вăрман шавла... ăшăтасса кĕт. 8) Çĕрле пас тыт... кăнтăрла юр çумасть. 9) Тӳпере çăлтăр хытă йăлкăш... хĕллехи вăхăтра — сивĕтет, çулла — шăрăх пулать.

3. К глаголам подберите подходящие по смыслу деепричастия.

Тăр, лар, çывăр, çăвăн, тыт, пурăн, калаç, кала, ан, хăпар, чуп.

Образец: *çывăрса тăр, итлесе лар, выртса çывăр, килсе пурăн, шухăшласа калаç, чупса хăпар.*

4. Образуйте от глаголов деепричастные словосочетания. Переведите на русский язык.

Образец: *лар — ларса кан, тăр — тăрса ут, вырт — выртса çывăр.*

çыр —	кай —	чуп —	кил —
вула —	ларт —	сик —	ӳстер —
хуп —	ӳкер —	тăхăн —	пуçтар —
уç —	ут —	хывăн —	тăрăш —

5. Переведите на чувашский язык.

а) Лес зазвенел, застонал, затрещал. Заяц послушал и вон побежал. Волков бояться — в лес не ходить. Без труда не вытянешь и рыбку из пруда.

б) Летела над тайгой стая лебедей. Два лебедя вдруг стали снижаться и опустились на озеро. Один лебедь поднимался в воздух, улетал, но снова возвращался. Лебеди остались на озере зимовать.

Наступили холодные дни. Зашумел ветер. Посыпался снег. Озеро замерзло. Однажды ночью разыгралась вьюга. А утром лесник нашел двух замерзших лебедей. Лесник принес их домой и увидел, что у лебедки сломано крыло.

Внук лесника спросил: «Почему же не улетел здоровый лебедь?» Лесник ответил одним словом: «Дружба».

Ответьте на вопросы по тексту:

1) Акăшсем ăçта хĕл каçма юлнă?
2) Пĕррехинче мĕн пулнă?
3) Акăшсене кам курнă?
4) Вăрман хуралçи мĕн тунă?
5) Мĕншĕн сывă акăш ăшă енне вĕçсе кайман?

6. Из данных ниже слов составьте и запишите предложения, а потом переведите на чувашский язык.

Класс, наш, стенную, выпускал, газету.
Рассказ, Алла, написала.
Сочинила, стихотворение, Римма.
Инна, в, заметке, своей, коллекции, рассказала, бабочек, о.
Анна Петровна, работу, нашу, одобрила.

7. Переведите на чувашский язык.

Носиться, проноситься, переноситься; свистеть, посвистеть, просвистеть; краснеть, покраснеть; стоять, постоять, простоять.

Задумаю — реки большие
Надолго упрячу под гнет,
Построю мосты ледяные,
Каких не построит народ.

(Н. Некрасов)

8. Прочитайте. Выделите деепричастия. Переведите на русский язык.

САРĂ ЛĔПĔШ

Тĕсĕ çавнашкал унăн — сап-сарă. Пăхма питĕ ачаш вăл, хăй пурпĕрех юр айĕнче хĕл каçать. Çуркунне çитсен, çĕрле шăнтнине пăхмасăрах, сывлăшра хавассăн вĕлтĕртетсе çýрет. Шыв кýлленчĕкĕ хĕрринче кĕрпеклĕ юрпа юнашар вилнĕ пек выртать. Хĕл каçичченех юр айĕнче çывăрнă вăл, халь акă ýкнĕ çулçă евĕр «ирĕлме» пуçланă. Хĕвел çинче выртать-выртать те йăлтах чĕрĕлсе çитет! Йăшăлтатать, урисене, сухал пĕрчисене тýрлетет, вара сасартăк вĕçсе çĕкленет те сывлăшра хĕвел шевли пек мĕлтлетме тытăнать.

Шăнсан — каллех çĕре анать, хăяккăн выртать те хĕвел çинче ăшăнать. Хĕвел ăшшине хăй витĕр сăрхăнтарать. Унтан каллех, пурне те савăнтарса та куçа илĕртсе, вĕçсе çýрет.

(Н. Сладков)

9. Прочитайте. Выделите деепричастия.

КӰЛЛЕНЧӖК

Марийкăпа Нина шкула кайма тухнă. Хĕвел тин çеç çĕкленнĕха. Симĕс курăк çулçисем çинче сывлăм шывĕн тумламĕсем çиçсе выляççĕ. Çырма хĕрринчи чăтлăхра шăпчăк юрлать.

Ват йăмра тĕлĕнчи пĕр лупашкара шыв кӰлленчĕкĕ çуталать. Ĕнер çеç çумăр çуса иртрĕ, çавăнпа шыв типмен-ха.

Хĕр ачасем асăрханса, кӰлленчĕкрен пăрăнса, çарран утса пыраççĕ. Марийка чарăнчĕ те лупашкари шыв çине нумайччен куç илмесĕр пăхса тăчĕ. Нина Марийкăна кĕтрĕ.

— Мĕн тери пысăк кӰлленчĕк... Икĕ кун кăна тăрать шывĕ, унта шапасем иленме те ĕлкĕрнĕ, — терĕ Нина.

— Пăх-ха, пăх, мĕнле кăна тĕс çук-тăр çак кӰлленчĕкĕн. Кăн-кăвак тӰпе, хĕвел шевли вылять, ав юр пек шурă пĕлĕт те шуса иртет... Ав тата садсем ешереççĕ, çырма хĕрринче шапшурă çуртсем... Шывра кусене пурне те куратăп, — каласа хучĕ Марийка.

(В.Сухомлинский)

10. Спишите. Вместе точек вставьте подходящие по смыслу аффиксы.

1) Учитель ĕçленĕ... хăй мĕн туни... ачасене кала... ăнлантарса парать. 2) Атăл патне çывхарнă... çынсем ытларах калаç..., лавсем çинчен сик... ан... час-часах çуран ут... тытăнчĕç. 3) Юр ирĕлнĕ... ун айĕнчен тахçанхи йĕрсем тухаççĕ. 4) Вăрмана вĕсем тепĕр кунне каç кӰлĕм çитрĕç. Хăйсене кăтарт... делянкăна шыра... тупрĕç те нумай чуптарнăран тарла... кайнă лашисене çапăпа кар... тунă витесене кан... тăратрĕç.

11. Спишите, вставляя нужные буквы. Подчеркните деепричастия.

1) Тăван çĕршыв, сана юратăп мĕн вили...ен, куç хупи...ен. 2) Тăвансем, сума суса...ăн килсе курăр хăнана. 3) Колхоза тухса кайи...ен темиçе кун малтан Карачăма трактор бригадин бригадирĕ тăвасси çинчен каласу пулнăччĕ. 4) Кашни çиçĕм çиçме...ерен аçа çапса кисретет. 5) Çук, пуçăма çийи...ен тăшманăма пĕтерем. 6) Çемçе юр пусма...ерен нăтăртатса илет. 7) Хĕвел тухи...ен эпир Шупашкара çитрĕмĕр. 8) Библиотекăна кайма...ерен эпĕ çĕнĕ кĕнеке илсе таврăнатăп.

12. Выпишите деепричастные словосочетания.

— Анне, хам каям кĕтӳ кĕтме. Эпĕ пысăк ĕнтĕ, тăрăшсах кĕтетĕп, — терĕ ирхине Андриян.

Амăшĕ фермăра ĕçлет. Кĕтӳ кĕтме унта ĕçлекенсем черетпе çӳреççĕ.

Кашни черет çитмессеренех çапла Андриян амăшĕ вырăнне каясшăн аптратать.

— Çук-ха, ачам, эсĕ мана ӳсерехпе пулăшăн. Халĕ юлташусемпе çӳре, — хирĕçлет ăна амăшĕ. Вăл ĕнесене витерен илсе тухать те Çавал хĕррине хăваласа антарать.

Хĕвел хăпариччен вăл ĕнесене улăхра пăхать. Кăнтăр çитеспе сасартăк пĕр ĕни, хӳрине тăратса, Макаç ялĕ еннелле вĕçтерет.

Анна Алексеевна ăна тӳрех палласа илет: çавă — Красунь. Ытти хĕрарăмсене те вăл çапла тарса тарăхтарать.

Анна Алексеевна ĕне хыççăн васкаса чупать. Анчах ăçтан ăна çитме! Çав вăхăтра аялти урамран пĕр ача чупса тухать те ĕнене хирĕç ыткăнать. Аллинче унăн — вăрăм хулă. Кĕтмен чăрмава курсан ĕни чарăнса тăрать. Хăй патне çитичченех палласа илет Анна Алексеевна çак ачана: Андриян ку.

Çав кунтан пуçласа Андриян хăй тĕллĕн кĕтӳ кĕтме тытăнать.

(Юхма Мишши)

❊ *ЗНАЕТЕ ЛИ ВЫ?* ❊

ПИТОН

Одним из самых огромных и известных змей является сетчатый питон. Его длина достигает до 9 метров и более.

Питон, как и другие змеи, высиживает яйца. В гнезде питона могут быть до 100 яиц, каждое из которых величиной с гусиное, продолговатое, с упругой, как резиновый мяч, оболочкой. Твердой скорлупы на змеиных яйцах не бывает. Змееныши — питончики через 30—40 суток, когда наступит пора увидеть свет, прорывают отверстие в оболочке своей головой и расползаются во все стороны и прячутся. А потом начинают вести самостоятельный образ жизни: охотятся за насекомыми, ящерицами, мелкими зверьками и птицами.

(И. Сосновский. «О редких животных мира»)

ПИТОН

Чи пысăк çĕленсенчен пĕри — питон. Унăн тăршшĕ 9 метр ытла пулма пултарать. Кун пек пысăк çĕленсем пирĕн çĕршывра çук, вĕсене зоопарксенче кăна курма пулать.

Питон та, ытти çĕленсем пекех, йăва çавăрать, унта 100 таран çăмарта тăвать. Кашни çăмартийĕ хур çăмарти пысăкăш, тăрăхларах, хуппийĕ хытă мар, резина мечĕк евĕрлĕ, çемçе. Питон 30—40 талăк хушши çăмартасем çинче выртать, чĕпписем, вăхăт çитсен, хăйсемех пуçĕсемпе çăмартан хытах мар хуппине шăтарса тухаççĕ те тĕрлĕ çĕре тарса пытанаççĕ. Пĕр-ик талăкран вара вĕсем хăйсем тĕллĕнех «сунара» тухаççĕ: тĕрлĕ хуртăкăпшанкă, калта, пĕчĕк чĕр чунсем, кайăксем тытса апат тăваççĕ.

Уроки 29—30

ХЫÇСĂМАХСЕМПЕ ПУЛĂШУ СĂМАХĔСЕМ (ПОСЛЕЛОГИ И СЛУЖЕБНЫЕ СЛОВА)

◈ Запомните слова и выражения ◈

хыçĕнчен (ăçтан?)
алăк хыçĕнчен
Алăк хыçĕнчен ачасен сасси илтĕнет.

из-за (откуда?)
из-за двери
Из-за двери слышны голоса детей.

хыçĕнче (ăçта?)
пахча хыçĕнче
Пирĕн пахча хыçĕнче пысăк пĕве пур.

за (где?)
за огородом
За нашим огородом есть большой пруд.

мĕн(е), кам(а) пирки, пула?
çумăра пула
Сулхăн пирки ачасем пурте ăшă тум тăхăннă.

из-за чего? (кого?)
из-за дождя
Из-за прохладной погоды все дети были в теплой одежде.

хушшинчен
сĕтел хушшинчен
Сĕтел хушшинчен пурте тухрĕç.

из-за (откуда?)
из-за стола
Все вышли из-за стола.

пат
доска патĕнче
ман патра хăнасем
вĕсем патĕнче хăнасем

у (где?) (нахождение вблизи чего-либо)
у доски
у меня гости
у них гости

пата (ăçта?)
ман пата

к (куда?)
ко мне

Уроксем хыççăн малтан пурте пирĕн пата пуçтарăнчĕç, кайран вара больницăна юлташ патне кайрăмăр.

После уроков собрались сначала у нас, а потом пошли к другу в больницу.

ăш

сĕтел ăшне (ăçта?)
сĕтел ăшĕнче (ăçта?)
сумка ăшĕнчен (ăçтан?)

в

в стол (куда?)
в столе (где?)
из сумки (откуда?)

мĕн таран?

пилĕк таран
Улăхра пилĕк таран курăк ўсет.

до чего?

до пояса
На лугу до пояса трава растет.

витĕр

вăрман витĕр
Вăрман витĕр тухрăмăр вĕрене çулçи çутипе.

сквозь, через

через лес
Светом кленового листа вышли через лес.

хирĕç

çиле хирĕç
ире хирĕç
Каçхи çил-тăман ире хирĕç лăпланчĕ.
Нинăна хирĕç алăкран пĕр хĕр ача тухрĕ.

против, к

против ветра
к утру
Ночной буран к утру стих.

Навстречу Нине из двери вышла девочка.

валли

шкул валли
йăмăк валли
Атте йăмăк валли пукане туянчĕ.

для чего? (обозначает объект действия)

для школы
для сестренки
Отец купил для сестренки куклу.

пуçне

сансăр пуçне
Сансăр пуçне мана кам пулăшĕ-ши?
Паян шкулта хуралçăсăр пуçне никам та çук.

кроме

кроме тебя
Кроме тебя кто бы мне помог?
Сегодня в школе кроме сторожа никого нет.

яхăн

километра яхăн
çĕр сăмаха яхăн
çулталăка яхăн

около, с

около километра
около ста слов
около года

Кăçал тыр-пул тухăçлă пулчĕ: гектартан 40 ц яхăн тĕш тырă тухрĕ.

В этом году урожай был хороший: с гектара собрали около 40 ц зерна.

чух

ача чух

Ача чух темĕн çинчен те ĕмĕтленеттĕмĕр.

во время, в

в детстве

В детстве мечтали о многом.

май

çула май

«Эсĕ çула май пирĕн пата кĕрсе тух-ха», — терĕ хăйĕн юлташне Коля.

Юхăма май ишме çăмăл.

по, попутно

по пути

«По пути зайди-ка к нам», — попросил Коля друга.

По течению плыть легко.

пек

тăрна пек

Кăнтăрла тăрна пек, каçпа хăма пек.

как

как журавль

Днем как журавль, ночью как доска.

урлă

шăпа урлă

Шăпа урлă сиксе каçаймăн.

через, поперек

через судьбу

Через судьбу не перепрыгнешь.

евĕр

аслати евĕр сасă

Аякран аслати евĕр сасă илтĕнчĕ.

подобно

громоподобный звук

Издали послышался громоподобный звук.

çумне

стена çумне

Стена çумне диван лартрĕç.

рядом, к

к стене

К стене поставили диван.

çумĕнчен

ял çумĕнчен

Эпир сирĕн ял çумĕнчен иртсе кайрăмăр.

вдоль, мимо

мимо деревни

Мы проехали мимо вашей деревни.

çине (ăçта?)

Кĕнекене сĕтел çине хур.

на (куда?)

Положи книгу на стол.

çинче (ăçта?)

Сĕтел çинче кĕнеке выртать.

на (где?)

На столе лежит книга.

1. Из данных слов составьте и запишите предложения.

Кун, хĕллехи, ăшă.

Пухăнчĕ, тăвайккине, ача-пăча.

Тăвайккине, ача-пăча, якатать, савăнать.
Урама, тухрăмăр, канмалли кун.
Пăхрăм, кантăкран, урама, эп.
Йытă, пĕлет, кил, тĕлне.
Шăп, вăрманта, хĕлле.
Хуплана, пĕтĕм, юр, çĕре, шурă.
Выртать, шăтăкра, упа.
Сахал, кайăксем, вăрманта, нумайăшĕ, вĕçсе, кайнă, кăнтăра.

2. Прочитайте. Переведите на русский язык.

ÇЕРÇИ ТĂМАНИ

Çерçи тăмани Раççейра чи пĕчĕк тăмана. Çак кайăка эпĕ чăн малтан Мускав таврашĕнче тĕл пултăм. Çерçи тăмани ун чухне шăнкăрчсем йышăнман вĕллере пурăнатчĕ. Унта хăй тытнă тупăша: пĕчĕк кайăксен, шăшисен тата ытти кăшлакан чĕр чунсен виллисене усратчĕ.

Çерçи тăманин чĕрни питĕ çивĕч, çара алăпа тытаймастăн. Эпĕ питĕ кăсăклă япала асăрхарăм: вăл пуçне 270 градус таран çавăрать, çапла вара, çерçи тăманин кĕлетки пĕр еннелле, пуçĕ тепĕр еннелле тĕллеме пултарать.

3. Прочитайте. Что вы знаете про других птиц?

КĂВАКАРЧĂН

Кăвакарчăн — йăваш вĕçен кайăк. Вĕсем пĕр-пĕринпе мар, ытти кайăксемпе те çапăçмаççĕ. Хăйсене питĕ тирпейлĕ тытаççĕ. Кăвакарчăнсем тĕш тырă, таса апат çеç çиеççĕ. Кăвакарчăн — ăслă кайăк. Хăй пурăннă кил-çурта нихçан та манмасть, таçтан инçетрен шыраса тупать. Ашшĕ-амăшне кура пĕчĕк чĕпписем те ăслă ўсеççĕ. Йăвисенче лăпкă лараççĕ, аслисем чĕнмесĕр тухмаççĕ.

(Г. Харлампьев çырни тăрăх)

4. Запомните синонимы. Составьте 6—7 распространенных предложений с данными словами.

Макăр, йĕр, куççуль юхтар, ĕсĕкле. — Хытă макăрать. Ача ĕсĕклет. Йĕрсе ларать.
Питĕр, çаклат. — Алăка питĕрнĕ. Чўречене çаклат.
Пуçла, тытăн. — Ĕç пуçларĕç. Ĕçе тытăн.

Пĕлтер, кала, систер. — Хыпар пĕлтерчĕ. Юмах кала. Малтан систер.

Пăрах, пер, ывăт. — Шыва пăрах. Кăларса пер. Ывăтса яр.

Пух, пуçтар. — Йĕкел пух. Хăяр пуçтартăм.

Пухăн, пуçтарăн. — Ирех пухăнчĕç. Нумайийăн пуçтарăннă.

Сарал, сарăх. — Кĕр тырри саралнă. Çулçă сарăхнă.

Сис, туй. — Час сисрĕм. Хăвăрт туйрăм.

Сыхла, упра, хŭтĕле. — Пахча сыхла. Сывлăха упра. Чикĕ хŭтĕле.

Çĕмĕр, ват, аркат. — Кантăк çĕмĕрнĕ. Чŭрече ватнă. Кайăк йăвине аркатма юрамасть.

Çи, апатлан. — Кашăкпа çиет. Вилкăпа çиетĕп. Вăхăтра апатланатăп.

Çиллен, тарăх, тутана тăс. — Атте çилленчĕ. Анне тарăхать. Йăмăк тутана тăсать.

Çитĕн, ŭс. — Йывăçсем ŭсеççĕ. Ача çитĕнет.

Хăра, шиклен, сехĕрлен. — Кашкăртан хăрать. Тĕттĕмре шикленетĕп. Ача сехĕрленсе ŭкрĕ.

Хăтăл, çăлăн. — Инкекрен хăтăлтăм. Йывăр ĕçрен çăлăнчĕ.

Чирле, чире кай (ер). — Ача чирлерĕ. Кŭршĕ чире кайнă.

Чăмăрта, пăчăрта. — Алла чăмăртарăм. Хытă пăчăртарĕ.

Шавла, кашла, кĕрле. — Вăрман кашлать. Юманлăх шавлать. Пасар кĕрлет.

Ывăн, ыр, ĕшен, халтан кай. — Ĕçлесе ывăнтăмăр. Пурте ырнă. Самаях ĕшеннĕ. Ача халтан кайнă.

Ыткăн, вăркăн, вирхĕн. — Тухса ыткăнчĕ. Алăкран вăркăнса тухрĕ. Çырманалла вирхĕнчĕ.

Юрат, сав. — Ĕçе юрат. Хытă саватăп.

Ответле, хуравла. — Урок ответлет. Шŭтлесе хуравларĕ.

5. Запомните слова и выражения на тему «Спорт».

лодка
плыть на лодке
моторная лодка
лыжник
соревнование лыжников
играть в мяч
ничья
игра закончилась вничью

кимĕ
кимĕпе ярăн
моторлă кимĕ
йĕлтĕрçĕ
йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвĕ
мечĕкле выля
никам та çĕнтерейменни
вăйă никам та çĕнтерейменнипе вĕçленчĕ

соревнование	ăмăрту
плавание	ишни, ишев
плавать	иш
бег	чупни, чупу
бегун	чупакан
весло	кĕсмен
всадник	юлан утçă
победа	çĕнтерӳ
победили наши всадники	пирĕн юлан утçăсем çĕнтернĕ
встреча	тĕлпулу
встреча волейболистов	волейболистсен тĕлпулăвĕ
грести	авăс, иш
грести веслами	кĕсменсемпе авăс
доска шахматная	шахмат хăми
женская (мужская) команда	хĕрарăмсен (арçынсен) команди
зритель	куракан
зрители довольны	куракансем кăмăллă
игра	вăйă
игра в шахматы	шахмат вăйăи
катание на коньках	конькипе ярăнни
кататься	ярăн
кататься на лыжах	йĕлтĕрпе ярăн
кататься на льду	пăр çинче ярăн
кататься с горки	тăвайккинчен ярăн
легкая атлетика	çăмăл атлетика
пловец	ишекен, ишевçĕ
проиграть	выляса яр
прыгать	сик
прыгать с вышки	вышка çинчен сик
прыжки	сикни
прыжки в воду	шыва сикни
санки	çунашка
сани	çуна

6. Прочитайте стихотворение выразительно. Ответьте на следующие вопросы:

Мĕн вăл поход?
Похода кайма мĕнле хатĕрленмелле?
Эсир похода ăçта кайнă? Походра мĕн тунă?

РЮКЗАК

Когда в поход уходишь ты
И сделал первый шаг,
То сразу на плечи тебе
Навалится рюкзак.
Иди, дружок, и не горюй,
Что в рюкзаке пуды.
Гораздо хуже, коль рюкзак
Твой будет без еды.

РЮКЗАК

Похода эс тухнă чух
Пĕр утăм та тăваймăн
Хулпуççи çинчи рюкзакăн
Йывăрăшне туймасăр.
Ут эс малалла, юлташ,
Рюкзак йывăршăн ан хуйхăр.
Апат-çимĕçсĕр рюкзак
Чăнахах та япăх.

7. Прочитайте. Выучите наизусть.

Пĕрре, иккĕ, виççĕ, т(ă)ваттă!
Пирĕн вăйлă пулмалла.
Физзарядка, физзарядка,
Физзарядка тумалла.
Кайăк пек çунатланатпăр,
Тĕрлĕ енлĕ хускалатпăр,
Турникран та çакăнатпăр,
Кустăрма пек çаврăнатпăр.

8. Ответьте на вопросы.

Спортпа туслă пул тенине эсир мĕнле ăнланатăр? Чăваш Республикинчи паллă спортсменсене камсене пĕлетĕр?

Спортпа аппаланма мĕнрен пуçламалла?

Спортăн мĕнле тĕсĕсене пĕлетĕн?

9. Переведите данные предложения на чувашский язык.

1) Петух *(что делает?)* поет. 2) Корова *(что делает?)* мычит. 3) Жук *(что делает?)* жужжит. 4) Дождь *(что делает?)* льет. 5) Учитель *(что делает?)* учит детей. 6) Дрозды *(что делают?)* поют. 7) Голубь *(что делает?)* воркует. 8) Кукушка *(что делает?)* кукует.

10. Составьте с данными словами предложения.

Например: *Вăйлă çил вĕрет.*

Люди *(кто?)*: человек, герой, товарищ, воин, мама, сестра.

События *(что?)*: победа, война, олимпиада.

Явления природы и времена года *(что?)*: ветер, мороз, жара, зима, лето, зной.

11. Прочитайте. Переведите на русский язык. Определите падеж существительных.

1) Хирсенче юр анчах,
Çырмара пăр анчах,
Сивĕтет аванах...
Вăл хăçан пулать-ши?

2) Ши! ши! шăхăрать
Çил ачи чӳречерен:
— Санюк, тухсам урама,
Мĕнле лайăх выляма!

3) Санюк ним те шарламасть,
Вырăнтан та тапранмасть.
Умĕнче ун кĕнеке,
Юмахсем вулать иккен.

4) Вăрманти сукмакпа пыратăп. 5) Ачасем класа типтерлеççĕ. 6) Машăпа Коля библиотекăна кĕчĕç. 7) Шкултан килсен Петĕр килти ĕçсене тăвать: картишне шăлать, чăхсене тăрантарать. 8) Катя ача садĕнчен таврăнать. 9) Пирĕн çемьере атте, анне, пиччe, йăмăк тата эпĕ.

10) Кунĕпех ĕçре анне:
Уй-хирте те ĕлкĕрет,
Кил-çуртра та тирпейлет —
Кун каçа ырать анне.

Уроки 31—32

СОСТАВЛЕНИЕ РАССКАЗОВ ПО ВОПРОСАМ

Составьте рассказы, в которых содержатся ответы на перечисленные вопросы.

1. Çулталăкăн хăш вăхăчĕ хитре?
Çанталăк мĕнле тăрать?
Тӳпе епле?
Йывăçсем мĕнле?
Мĕнле кайăксем кăнтăра вĕçсе кайнă?
Пахчари ĕçсене вĕçленĕ-и?

2. Сирĕн хваттер пур-и?
Хваттер миçе пӳлĕмлĕ?
Пӳлĕмĕсем мĕнле?
Чӳречисем мĕнле?
Хваттерте мĕнле сĕтел-пукан пур?
Хваттерти тасалăхшăн кам тăрăшать?

3. Санăн юлташу пур-и?
Вăл мĕн ятлă? Мĕнле хушаматлă?
Вăл миçе çулта?
Вăл ăçта пурăнать?
Вăл вĕренет е ĕçлет?
Пушă вăхăта мĕнле ирттеретĕр?

4. Эсĕ ăçта пурăнатăн?
Сирĕн çурт ăçта вырнаçнă?
Хăвăр пурăнакан çурт мĕнле (сăнласа пар)?
Çав çуртра тата кам пурăнать?

5. Кĕркунне хыççăн çут çанталăкăн хăш вăхăчĕ пуçланать?
Çĕр мĕнпе витĕнет?
Çил мĕнле вĕрет?
Кӳлĕсемпе пĕвери шывпа мĕн пулать?
Ачасем хĕлле мĕнпе ярăнаççĕ?
Сана çулталăкăн хăш вăхăчĕ ытларах килĕшет?

6. Эсĕ физзарядка тăватăн-и? Хăçан?
Зарядка тунă хыççăн хăвна мĕнле туятăн?
Спортпа аппаланма юрататăн-и?
Мĕнле паллă спортсменсене пĕлетĕн?
Вĕсем спортăн мĕнле енĕпе чапа тухнă?

7. Хĕллехи каникула мĕнле ирттеретĕн?
Ăçта кайрăн? Кампа?
Мĕнле кĕнеке вуларăн?
Каникул вăхăтĕнчи хăш кун ытларах кăсăклă иртрĕ?
Мĕншĕн?

8. Эсĕ хăш урамра пурăнатăн?
Сирĕн урам мĕн ятлă?
Сирĕн урамри çуртсем миçе хутлă?
Сирĕн урамра йывăççем ӳсеççĕ-и?
Мĕнле йывăççем ӳсеççĕ?
Вĕсем ешерччĕр тесен мĕн тумалла?

9. Эсĕ йĕлтĕрпе, конькипе (тăркăчпа) ярăнма пĕлетĕн-и?
Килте санăн йĕлтĕр пур-и? Тăркăч пур-и?
Йĕлтĕрпе ярăнма сана килĕшет-и?
Спорт мĕн тума пулăшать?
Сирĕн çемьере спортпа кам туслă?
Вĕсем спортăн хăш енĕпе аппаланаççĕ?

10. Хĕллехи вăхăта юрататăн-и? Мĕншĕн?
Хĕлле мĕнле вăйăсем выляма пулать?
Эсĕ юр кĕлетке тума пĕлетĕн-и?
Санăн йĕлтĕр пур-и?
Хĕл çинчен çырнă мĕнле тупмалли юмах пĕлетĕн?
(2—3 тупмалли юмах çырса хур.)

11. Кайăксене юрататăн-и? Мĕншĕн?
Вĕсем мĕнле тăранса пурăнаççĕ?
Çерçи ăçта пурăнать?
Вăл йăвине ăçта тăвать?
Мĕнле кайăк йăва çавăрмасть?
Мĕнле кайăксене каçхине е çĕрле кăна курма пулать?

12. Сад пахчине мĕнле йывăçсем лартаççĕ?
Сад хăçан питĕ илемлĕ? Мĕншĕн?
Пан улмине хăçан татаççĕ?
Йывăçсен тăшманĕсем пур-и?
Хурт-кăпшанкăсенчен мĕнле сыхланмалла?
Йывăçсен санитарĕсене пĕлетĕн-и?

13. Пакша ăçта пурăнать?
Унăн хӳри, пуçĕ, хăлхи мĕнле?
Вăл йăвине ăçта тăвать?
Пакша мĕнпе тăранса пурăнать?

14. Тилĕ ăçта пурăнать?
Вăл мĕн тĕслĕ?
Вăл мĕнпе тăранса пурăнать?
Тилĕ шăтăкĕ ăçта пулма пултарать?

15. Эсĕ мулкача курнă-и?
Мулкачăн хăлхи мĕнле? Хӳри? Ури?
Мулкач хĕлле мĕн тĕслĕ? Çулла?
Мулкач мĕнпе тăранса пурăнать?

Уроки 33—34

СОСТАВЛЕНИЕ РАССКАЗОВ ПО НАЧАЛУ

Сочините продолжения рассказов.

1. Кĕркунне çитрĕ. Çулçăсем саралчĕç. Час-часах сивĕ те вĕтĕ çумăр пĕрĕхет...

2. Борисп а Сергей вăрмана кайнă. Вĕсем вăрманта тĕрлĕ кăмпа пуçтарнă. Часах вĕсен карçинккисем тулнă. Ачасем канма ларнă та...

3. Пирĕн шкул пахчи пысăк. Унта тĕрлĕ йывăç ўсет. Кĕркунне пахчара ĕç нумай...

4. Пĕррехинче Олегпа ашшĕ уçăлма тухнă. Ашшĕ Олега çул хĕрринче ўсекен йывăçсем çинчен каласа парать. Çав вăхăтра вĕсем пĕр кайăк чĕппине асăрхарĕç: хўри хăйĕн кĕске, сăмси сарă...

5. Çанталăк ăшă. Хĕртсе хĕвел пăхать. Ачасен ушкăнĕ вăрманпа пырать. Сасартăк...

6. Çанталăк сивĕтрĕ. Кайăксем нумайăшĕ кăнтăра вĕçсе кайнă. Хĕл каçма юлнă вĕçен кайăксене сивĕ, вĕсем выçă...

7. Урампа Петьăпа Коля пынă. Вĕсем кĕнеке магазинне кĕнĕ...

8. Сережăпа Костя мăйăра кайнă. Вăрманта чылайччен çўренĕ. Пĕр кутамкка мăйăр пухнă. Хĕвел каç еннелле сулăннă. Ачасем килелле çул тытнă, анчах...

9. Тўпере çумăр пĕлĕчĕсем пуçтарăнма пуçланă. Йывăçсем çилпе кашланă. Таçта аякра çиçĕм çиçнĕ, аслати авăтнă...

10. Çуркунне çитрĕ. Йывăçсем çинче çемçе те ачаш çулçăсем курăнма пуçларĕç. Курăк та симĕсленчĕ. Пĕлĕт таса та кăн-кăвак...

11. Çуркунне. Тўпере хĕвел çиçет. Ачасем урама васкаççĕ. Вĕсем унта...

12. Çу пуçланчĕ. Пирĕн çемье дачăна пурăнма куçрĕ. Дачăран инçех мар...

Урок 35

УПРАЖНЕНИЯ И ЗАДАНИЯ ДЛЯ ПОВТОРЕНИЯ И ЗАКРЕПЛЕНИЯ

1. Спишите, вставляя нужные знаки препинания. Переведите на русский язык.

Хура кĕркунне çитрĕ çанталăк сивĕтрĕ вĕçен кайăксем кăнтăра вĕçсе кайрĕç хĕл ларать.

2. Кто где живет? Спишите, вставляя нужные слова.

Çерçи ... . Кушак ... . Тилĕ ... . Пулă ... . Упăте ... . Шапа ... .

Нужные слова: *зоопаркра, ялта, пӳртре, вăрманта, пĕвере, кӳлĕре.*

3. Спишите, вставляя нужные буквы.

М...лкач, куп...ста, йыт..., с...т, ç...рла, çум...р, хур...н, йыв...ç, çар...к, кав...н, к...шман, х...вел, пĕл...т, кашк...р, уп...те, йăм...к, к...мака, ал...к, ч...рече, кант...к, пахч..., çулç... .

4. Вместо точек запишите слова.

Теттесем: ..., ..., ..., ..., ...
Сĕтел-пукан: ..., ..., ..., ..., ...
Савăт-сапа: ..., ..., ..., ..., ...
Атă-пушмак: ..., ..., ..., ..., ...
Кил-çурт таврашĕ: ..., ..., ..., ..., ...
Вĕçен кайăк: ..., ..., ..., ..., ...
Килти выльăх-чĕрлĕх: ..., ..., ..., ..., ...
Тискер чĕр чунсем: ..., ..., ..., ..., ...
Килти кайăк-кĕшĕк: ..., ..., ..., ..., ...
Хурт-кăпшанкăсем: ..., ..., ..., ..., ...
Пахча çимĕç: ..., ..., ..., ..., ...
Улма-çырла: ..., ..., ..., ..., ...
Ĕç хатĕрĕсем: ..., ..., ..., ..., ...
Апат-çимĕç: ..., ..., ..., ..., ...
Çут çанталăк пулăмĕсем: ..., ..., ..., ..., ...
Çи-пуç: ..., ..., ..., ..., ..., ..., ..., ..., ...

5. Прочитайте. Отгадайте.

1) Чее тус пырать утса,
Хӳрипе йĕрне шăлса.
Шăшисене вăл тытать,
Чăхсене те юратать. (...)

2) Çăмламас хитре хӳре
Кĕлеткемрен вăрăм.
Сарă мăйăр типĕтсе
Хăвăла эп хутăм. (...)

3) Çĕрле — çăра вырăнне,
Кăнтăрла — кĕле вырăнне.
Çынпа вăл туслă,
Кашкăрпа — тăшманлă. (...)

4) Хире кайнă чух
Ялалла пăхать.
Яла кĕнĕ чух
Хирелле пăхать. (...)

6. Прочитайте сказку. Переведите на русский язык.

ТĂВАРПА САХĂР

(Юмах)

Пĕррехинче Сахăрпа Тăвар тавлашса кайнă. Кам-ши вĕсенчен кирлĕрех?

— Эпĕ кирлĕрех, Сахăр тус. Мансăр нимĕнле апат та пĕçермеççĕ. Эпĕ яшкара çителĕксĕр пулсассăн çынсем çав апата тутанса та пăхмаççĕ, — тет мухтанса Тăвар.

— Çук, Тăвар тусăм. Эпĕ кирлĕрех. Мансăр чей те ĕçмеççĕ. Тата тутлă апат хатĕрленĕ чухне мана ытларах яма тăрăшаççĕ. Çавăнпа та эпĕ санран маларах тăратăп, — тет ăна пӳлсе Сахăр.

Çав вăхăтра пӳлĕме Марье инке кĕчĕ. Вăл яшка пĕçерме шутларĕ. Шыв тултарнă савăтри çимĕçсем вĕреме кĕрсен Тăвар ячĕ. Тутанса пăхрĕ те: «Питĕ аван», — терĕ. Тăвар хĕпĕртесе кайрĕ.

Нумаях та вăхăт иртмерĕ, пӳлĕме Марье инке хĕрĕ Лена чупса кĕчĕ:

— Анне, мана чей пар-ха. Сахăр ытларах яр, — терĕ.

Сахăр та кăна илтсен çав тери савăнчĕ. Çакăн хыççăн Сахăрпа Тăвар туслă пурăна пуçларĕç.

7. Прочитайте. Допишите окончания глаголов.

ПУЛĂСЕМ
МĔНЛЕ ХĔЛ КАÇАÇÇĔ

Пĕвесем, юхан шывсемпе кӳлĕсем хулăн пăрпа витĕн... . Вакран кăна тăрă шыв курăн... . Шыв тĕпĕнче, шăплăхра, пулăсем тĕлĕр... .

Чи тарăн вырăнсенче çуйăн вырт... . Юнашарах сарлака çупахсем ретĕн-ретĕн пĕр хускалмасăр вырт... . Сазансем çемçе шăтăк тупнă та унта кĕтĕвĕпех çывăр... .

Йăрă уланкă шыв тĕпне ӳкнĕ йывăççене, чулсене ытларах кăмăл... . Кун пек вырăнта вăл хĕл тăршшĕпех тĕлĕр... .

Шăллă çăрттан çеç ниепле те çывăр... . Ăнсăрскер, пысăк çăварлăскер, вăл ыйхăллă пулăсене çăт... те çăт... .

(Л.Карпов)

8. Прочитайте. Перескажите содержание на чувашском языке.

КТО НАЧАЛ ДЕЛАТЬ УТРЕННЮЮ ЗАРЯДКУ

Многие дети не любят делать утреннюю зарядку. И их можно понять. Ведь всем известный «комплекс упражнений» просто скучный. Между прочим, если вы думаете, что утреннюю зарядку придумали взрослые, чтобы мешать детям спать, то вы совершенно неправы. Утреннюю зарядку научились делать давным-давно: в те древние времена, когда завтрак нужно было сперва найти и поймать, и только потом уже — приготовить и съесть. Конечно, если ты сам не окажешься при этом чьим-нибудь завтраком. Ведь кругом было много врагов и опасностей; то и дело приходилось бегать, прыгать, приседать и вертеть головой. Взрослых тогда еще не было. И детей, впрочем, тоже. А бегали, прыгали и приседали тогда разные динозавры, жуки, пауки. И, кажется, даже заяц был.

(Г.Андросов. С добрым утром)

Приложение

ТЕКСТЫ ДЛЯ ЧТЕНИЯ

ÇĂХАНПА ЧАКАК

Ула-чăла чакак йывăç турачĕсем çинче сиккеленĕ. Вăл пĕр чарăнмасăр чакăлтатнă. Çăхан вара ним чĕнмесĕр ларнă. «Мĕскер чĕнместĕн? — тесе ыйтнă унран чакак. — Тен, эсĕ ман сăмахсене те ĕненместĕн?» — «Ĕненсех пĕтерместĕп çав, кума, — хуравланă çăхан. — Кам питĕ нумай калаçать, çав питĕ нумай суять пулмалла».

(К. Ушинский)

Ыйтусем

Ула чакак мĕн тунă? Çăхан мĕнле ларнă? Чакак çăханран мĕн тесе ыйтнă? Çăхан мĕнле хуравланă? Эсир çăхан хуравĕ пирки мĕн шухăшлатăр?

КЕНГУРУ МĔНШĔН СУМКĂЛЛĂ?

Çĕр çинче çичĕ чĕр чунăн сумка пур. Кенгурун та. Вăл хыçалти урисем хушшине вырнаçнă. Пĕчĕк кенгурун хăйне евĕр хăтлă çурчĕ теме пулать ăна. Ара, тин çуралнăскер, виçĕ сантиметр тăршшĕ çеç-ха вăл. Пĕчĕкскере, вăйсăрскере амăшĕ 6 уйăх сумкăра йăтса çÿрет. Çур çултан ачи йытă çури пысăкăш пулать. Утма, чупма вĕренсен те ăшă вырăнтан тухассиех килмест унăн. Сумкăран пуçне кăларса пырать вара.

Амăшĕ çулçă тавраш çиме чарăнсан пĕчĕк кенгуру та мăйне тăсса курăк татса çиет. Ÿсерехпе те хăрушлăха сиссенех амăшĕ ăна çăварĕпе çыртса илсе сумкăна хурать те çил пек вĕçтерет.

Кенгурун малти урисем кĕске, хыçалтисем вăрăм. Çавна пула вăл 3—4 метр тăршшĕ сике-сике чупать. Чи кăсăкки вара çакă: кенгуру вăрăм хÿри çине ларса канать.

(«Çил çунат» журналтан)

Ыйтусем

Миçе чĕр чунăн сумка пур? Кенгуру сумки ăçта вырнаçнă? Кенгуру çури мĕн пысăкăш çуралать? Мĕн вăхăт хушши кенгуру çури сумкăра пурăнать? Кенгурун урисем мĕнле? Вăл мĕншĕн хытă чупма пултарать? Кенгуру мĕнле канать?

ЫРĂ КУН

Хĕвел хĕртсе пăхнă. Çак кунран пахараххи мĕн пултăр! Çумăр ăманĕ шăрчăкпа килĕшмест. Ун шучĕпе, çумăртан ырăраххи çук.

Туссем тĕрĕслĕх шыраса кăткă патне çитеççĕ. Лешĕн ларса канма та вăхăт çук. Вăл каçчен тăхтама сĕнет.

Кунĕпех тавлашаççĕ шăрчăкпа ăман. Хĕвел те анса ларать. Çаксем каллех кăткă патне каяççĕ. Кăткă тутлăн карăнса илет, çапла калать: «Ырă кун пулчĕ паян. Эпĕ вăйăм çитнĕ таран ĕçлерĕм. Халĕ канма та кăмăллă».

(В.Осеева çырнинчен)

Ыйтусем

Мĕн çинчен вуларăр? Вĕсем мĕн тăваççĕ? Мĕн çинчен тавлашаççĕ? Хăшĕ мĕнле шутлать? Туссем хăйсен тавлашăвне татса пама камран ыйтаççĕ? Лешĕ мĕн хуравлать? Яра куна хăшĕ мĕн туса ирттерет? Кун ырă пуласси хĕвелтен килет-и?

ÇEÇПĔЛ

Пирĕн умра çеçпĕл çеçкисем. Вĕсене вăрмантан татса килнĕ. Çеçпĕл çуркунне юр кайса пĕтнĕ-пĕтменех çурăлать.

Çеçпĕл çеçкисем шăнкăрава аса илтереççĕ. Вĕсем кăвак тĕслĕ. Хĕрлисем те пур. Тунипе çулçисем симĕс. Туни аванчăк, çемçешке. Кăшт пуссанах сĕткенĕ тухать.

Çеçпĕл çурăлнă вăхăтра çĕр ăшăнсах та çитеймест. Ытти чечексем тухман. Вĕсем сивĕрен хăраççĕ. Çеçпĕл кăна хăрамасть. Ăна çавăншăнах паттăрпа танлаштарас килет.

Ыйтусем

Эсир мĕн çинчен вуларăр? Çеçпĕл хăçан çурăлать? Çеçпĕле сăнласа парăр-ха: çеçкипе çулçисем, туни мĕнлерех? Халăхра çеçпĕл тесе юр айĕнчен маларах тухакан мĕнле чечексене калаççĕ? (Пыл курăкĕ, аслати курăкĕ т.ыт.те.) Çеçпĕл чечек ятне мĕнле чăваш поэчĕ илнĕ? Чечексем çинчен çырнă мĕнле сăвă, юрă пĕлетĕр? («Шăнкăрав курăкĕ». Сăмахĕсем В.Пехилĕн, кĕвви И.Степановăн; «Лаванда». Сăмахĕсем М.Шабровăн, кĕвви В.Матецкин; «Ромашки спрятались». Сăмахĕсем И.Ша-

феранăн, кĕвви Е.Птичкинăн; «Миллион алых роз». Сăмахĕсем А.Вознесенскин, кĕвви Р.Паулсăн; «Цветы России». Сăмахĕсем В.Бутенкон, кĕвви Е.Птичкинăн; «Не рвите цветы». Сăмахĕсем М.Пляцковскин, кĕвви Ю.Антоновăн; «Розовые розы». Сăмахĕсем Н.Просторовăн, кĕвви П.Слободкинăн.)

ЧИКĔ ХĔРРИНЧЕ

Слава Дунаев чĕр чунсене питĕ юратнă. Вăл килĕнче Туман ятлă йытă усранă. Ăна вĕрентнĕ.

Славăн çара кайма вăхăт çитнĕ. Вăл хăйне Туманпа пĕрле çĕршыв чиккине яма ыйтнă. Унăн кăмăлне тивĕçтернĕ.

Шартлама сивĕ. Сурчăк çĕре ӳкиччен пăрланса ларать. Сĕм тĕттĕм. Çак вăхăтра чикĕ урлă диверсант каçнă. Ăна Дунаевпа Туман хăвалама пуçлаççĕ. Лешĕ чее. Унăн йĕрĕ вăрмана та, ялсене те, çырма-çатрасене те кĕрсе тухнă. Туман йĕре çухатман.

Виççĕмĕш талăкра Дунаев хир варринче, пĕр васан хĕрринче, пĕччен ларакан çурт патне çитсе тухать. Шалтан пăшал сасси кĕрлесе кайнă. Слава, вилнĕ пек пулса, васан тĕпне персе анать. Хăй васан тăрăх çурт хыçнелле шуса каять. Тусĕ те унран юлмасть. Кĕçех вĕсем сасă тумасăр çенĕке кĕреççĕ, унтан, кушак пек, мачча çине хăпарса каяççĕ. Çав вăхăтра тăшман асăрханса пӳрт алăкне уçать те çенĕк алăкĕ патнелле утса каять. Туман тăшман çине çиçĕм пек сиксе ларать. Кĕçех Дунаев тăшман аллисене каялла пăрса лартать.

(Е. Рячиков çырнинчен)

Ыйтусем

Калавра сăмах камсем çинчен пырать? Славăпа Туман тăшмана миçе талăк хăвалаççĕ? Тăшмана вĕсем ăçта кураççĕ? Дунаевпа Туман çурт маччи çине мĕнле лекеççĕ? Тăшмана мĕнле тытаççĕ? Тăван çĕршыв çинчен мĕнле ваттисен сăмахĕсене пĕлетĕр? *(Тăван çĕршыв чысĕшĕн пуçна ан шелле. Тăшман — çĕлен, ăна ан ĕнен. Тăван çĕре тăшмана париччен пуçна масара хур теççĕ. Тăван çĕршыв — анне, ют çĕршыв — ама çури.)*

ШĂРЧĂКПА КĂТКĂ

Ăна урăхла йĕп вăрри е çĕлен лаши теççĕ. Хĕвеллĕ кунсенче шăрчăксем çăра курăк хушшинче ниçта кайса кĕреймĕ чăрлатаççĕ. Курăк хушшинче мĕн кирли пурте пур. Кĕркунне, çанталăк сивĕтсен, шăрчăксем чăрлатма пăрахаççĕ. Ăçта кайса кĕреççĕ-ши вĕсем? Вăрăм ыйха путаççĕ.

Кăткă — ĕçчен чĕр чун. Вăл хăйĕнчен темиçе хут пысăкрах, йывăртарах япаласене сĕтĕрме пултарать. Ялан тем ĕçлет. Пĕчĕкçĕ пулсан та вĕсем пиншерĕн пухăнаççĕ те çýллĕ çурт купалаççĕ. Çуртĕнче вĕсене çумăр та, сивĕ те хăрушă мар.

Ыйтусем

Шăрчăк ăçта пурăнать? Кĕркунне, сивĕсем пуçлансан, шăрчăксемпе мĕн пулать? Кăткă мĕнле чĕр чун? Кăткăсем пĕр-пĕринпе мĕнле пурăнаççĕ? Шăрчăкпа кăткă çинчен мĕнле юптару пĕлетĕр? Каласа парăр. Юптару шухăшĕпе тýр килекен ваттисен сăмахĕсене аса илĕр. *(Пур — пĕрле, çук — çурмалла. Нумай та пĕтĕ, сахал та çитĕ, пĕрле пурăннине мĕн çитĕ. Ĕç çынна шлем кýрет. Ĕç — пурнăç илемĕ. Ĕçлемесен хутаç çакса кай. Юлхава ялан уяв. Ялан вăйă мар, ĕçлес те пулать.)*

ИВАН ГАВРИЛОВИЧ АРШИНОВ

«Пĕррехинче радиопа пĕр юрă янăраса кайрĕ. Ытла та тĕлĕнмелле, чĕререн çырнă юрă! Пĕрре илтсен ăна нихçан та манас çук. Илтетĕн те, куç умне ĕçчен те çав тери ырă кăмăллă чăвашăн кунçулĕ тухса тăрать, чăн-чăн чăваш пулас килет, пĕтĕм чăвашсене тивĕçлипе хисеплесе юратас килет». Çапла çырнăччĕ Чăвашрадио «Куккук» юрă пирки. Ку юрра Иван Аршинов композитор кĕвĕленĕ.

Чăваш композиторĕсен ассоциацийĕн членĕ Аршинов Иван Гаврилович 1932 çулхи февралĕн 15-мĕшĕнче Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Утаçкассинче çуралнă. Ялти пуçламăш шкулта вĕреннĕ чухнех концертсенче купăс каланă. Шупашкарти Ф.П.Павлов ячĕллĕ музыка училищинчен, И.Я.Яковлев ячĕллĕ пединститутăн (халĕ вара педуниверситет) музыкăпа педагогика факультетĕнчен вĕренсе тухнă.

Чылай юрă кĕвĕленĕ вăл Юрий Сементер поэтпа: «Савнă Чăваш ен», «Пехил»... Хăй сăввипе кĕвĕленĕ юррисем те пур: «Ăнлансам мана», «Чашлама», «Тусăм, ман пĕр эс кăна»...

(«Пике» журналтан)

Ыйтусем

Эсир кам çинчен вуласа пĕлтĕр? Вăл мĕн енчен паллă çын? Эсир унăн юррисене пĕлетĕр-и? Мĕнле чăваш композиторĕсене пĕлетĕр? Чăваш Республикинчи паллă çынсене камсене пĕлетĕр?

ВЛАДИМИР ИВАНОВИЧ АГЕЕВ

Ĕçчен, туслă, йышлă çемьере 1932 çулхи ака уйăхĕн 2-мĕшĕнче çут тĕнчене килнĕ пулас художник. Аслă Елчĕкре вĕсен килĕ Йĕрĕх варĕ çывăхĕнче ларнă. Килĕнче ака-суха, хăна юррисене итлеме

юратнă вăл. Пĕр уявран, улахран, вăйăран юлман. Пăла улăхне лашасемпе выртмана çӳренĕ. Çак чĕрĕ сăнлăхсем манăçми ӳкерчĕксем пулса юлнă та унăн асĕнче. Художникăн ачалăхĕ те, яшлăхĕ те йывăр килнĕ. 1948 çулта çуран Шупашкара çитет. Художество (ӳнер) училищине вырнаçать. Чăваш пединститучĕн (халĕ педуниверситет) художествăпа графика факультетĕнче вĕренет...

Унăн чăваш халăхĕн аваллăхĕпе, ырă йăли-йĕркипе çыхăннă мĕн чухлĕ ĕç çуралчĕ юлашки çулсенче! 20 ытла ĕçне Россия Федерацийĕн Художникĕсен союзĕн выставкисен дирекцийĕ илнĕ.

Ячĕ те, сумĕ те пур ăстан.

(В.Эктел)

Ыйтусем

Кам çинчен вуласа пĕлтĕр? В. Агеев мĕн енчен паллă çын? Вăл ăçта, хăçан çуралнă? В. Агеев ăçта вĕреннĕ? Унăн мĕнле ĕçĕсене пĕлетĕр?

СĂР ШЫВĔ ХĔРРИНЧЕ — ГИМНАЗИ

Етĕрнен Сăр хĕрринчи урамĕ. Шăпах çакăнта уçăлчĕ те ĕнтĕ гимнази. Етĕрне, Муркаш, Хĕрлĕ Чутай, Элĕк районĕсенче пурăнакан ачасемшĕн пĕлӳ туптакан шкул, тарăн пĕлӳ паракан вĕренӳ заведенийĕ пулса тăчĕ вăл. Хальлĕхе вăл, Шупашкартисене шутламасан, районта уçăлнă пĕртен-пĕр гимнази. Камсене вĕрентеççĕха, кам пулма хатĕрлеççĕ кунта çамрăк ăрава?

Ку гимнази — наци гимназийĕ, ачасен пултарулăхне тĕрлĕ енлĕ аталанма пулăшакан хăйне евĕрлĕ лаборатори. Тĕллевĕ — физикăпа математикăна ытларах юратакан тата гуманитари предмечĕсене килĕштерекен ачасене вĕрентесси. Тĕрĕсрех каласан, Чăваш патшалăх университечĕн техника тата чăваш филологийĕпе культури факультечĕсем валли кадрсем хатĕрлесси.

(«Çил çунат» журналтан)

Ыйтусем

Мĕн çинчен вуласа пĕлтĕмĕр? Ку гимназире камсем вĕренеççĕ? Пирĕн республикăра тата мĕнле гимназисем пур?

ЧĂВАШ ЕН ВĂРМАНĔСЕМ

Пирĕн Чăваш Республики вăрманпа пуян шутланнă. Пĕтĕм республика талккăшĕн виççĕмĕш пайне вăрман йышăнса тăнă... Республикăри вăрмансенчен чи пысăкки тата ӳсен-тăран енĕпе те чи пуянтарахчи вăл çак пирĕн таврари вăрман пулнă. Ăна Сăр шывĕ тăрăх ӳссе ларнăран Сăр вăрманĕ теççĕ. Ун хыççăн

пирĕн республикăра Атăл леш енчи Йăлăм вăрманĕн пĕр татăкĕ кĕрет. Ытти вара пĕчĕк вăрмансем. Вĕсем республикăн тĕрлĕ районĕсем тăрăх сапаланса лараççĕ. Пирĕн вăрман — авалхи ватă вăрман.

(Ç.Элкер)

Ыйтусем

Пирĕн Чăваш Республики мĕнпе пуян? Хăш район чи пуянни шутланать? Пирĕн вăрмансенче мĕнле йывăçсем ўсеççĕ? Йывăçран мĕн-мĕн тăваççĕ?

ШАНЧĂКА ÇУХАТМАН

Пурнăç тикĕс килмест. Тепĕр чухне кĕтмен çĕртен инкек те сиксе тухать. Хуйха ниçтан та ирттерсе яма май çук пек туйăнать. Кунашкал самантсенче пĕчченлĕхре пурăнни сиенлĕ.

Тарăннăн шухăшласа пăхмалла. «Паллă çынсем çакăн пек кăткăс та йывăр вăхăтра мĕн тунă пулĕччĕç-ши?» — тесе шутламалла. Пирĕн пурнăçра нушана парăнмасăр, шанчăка çухатмасăр малалла утнă çынсем сахал мар. Çавсенчен пĕри — чăвашсен кăвар чĕреллĕ сăвăçи Альберт Канаш. Хăрушă чир ăна çамрăклах ураран ўкернĕ, çўрейми тунă. Вăл çапах та нăйкăшса ларман. Сăвăсемпе очерксем, статьясем çырма тытăннă. Чĕри тапма чарăнинченех халăх пурнăçне хĕрўллĕн хутшăннă. Вăл çамрăксен çывăх тусĕ, шанчăклă пулăшаканĕ пулса тăнă.

(А. Мефодьев)

Ыйтусем

Кам çинчен вуласа пĕлтĕмĕр? Кам вăл А.Канаш? Унпа мĕнле инкек пулнă? А.Канашăн мĕнле хайлавĕсене пĕлетĕр?

ÇĂКĂР

Халăх мĕн авалтан çăкăра хисеплеме вĕреннĕ. Çăкăра хисеплесси — чи малтан халăх чĕрине çырăннă таса та пархатарлă саккун. Ĕмĕртен килекен йăласемпе йĕркесем, ваттисен сăмахĕсем — пурте çав таса саккуна çирĕплетеççĕ. Халăх ăнлавĕнче çăкăр пуринчен те çўлерех, пуринчен те маларах тăнă, пуринчен те аслăрах пулнă.

Тăвар — çăкăрăн чи çывăх юлташĕ. Чи хисеплĕ хăнана халăх çăкăр-тăварпа кĕтсе илет.

Тупа тăвас пулсан та чăваш çынни çăкăр татăкĕ çыртса тупа тунă. Кунтан çирĕпрех те шанчăклăрах тупа урăх уншăн пулман.

Эпир, ĕç çынни ывăл-хĕрĕсем, хура çăкăр çисе ӳснĕ. Хура çăкăр çиекен ниçта та хур пулман. Эпир те хур пулмăпăр, умри çăкăр татăкĕнчен татăлмăпăр.

(А.Ĕçхĕл)

Ыйтусем

Мĕн çинчен вуласа пĕлтĕмĕр?
Çак ваттисен сăмахĕсене мĕнле ăнланатăр?
Çăкăр тутине ĕçлекен пĕлет.
Çăкăр-тăвар хире-хирĕç.
Çăкăр-тăварсăр çур апат теççĕ.
Çăкăртан аслă пулаймăн.
Выçсан çăкăр та кулачă пулать.

ИКĔ ХĔР

(Юмах)

Хăйĕн аслă хĕрĕнчен
Ашшĕ ыйтать: «Мĕн мăнтăр?»
— Пирĕн атте килĕнчи
Кăвак лаша пит мăнтăр.
«Ăслă каларăн, хĕрĕм»,
Татах ыйтать: «Мĕн çемçе?»
— Пирĕн атте килĕнчи
Тӳшек-минтер пит çемçе.
«Ăслă каларăн, хĕрĕм,
Хисеп турăн аçуна,
Ĕнтĕ сана çакăншăн
Çур мулăма паратăп».

Унтан кĕçĕн хĕрĕнчен
Ашшĕ ыйтать: «Мĕн мăнтăр?»
— Çут тĕнчере çĕр мăнтăр,
Унтан мăнтăр ним те çук.
«Санран пархатар сахал»,
Татах ыйтать: «Мĕн çемçе?»
— Алă çемçе, тĕнчере
Унтан çемçи ним те çук.
«Санран пархатар сахал,
Эсĕ манăн хĕрĕм мар!»
Ашшĕ вара ку хĕрне
Хăваласах ячĕ тет.

(К.Иванов)

ÇУЛТАЛĂК ХУШШИ

(Вырăс халăх сăвви)

Шурă юр ирĕлет,
Çеçен хир чĕрĕлет,
Ешĕл курăк ӳсет...
Вăл хăçан пулать-ши?

Хĕвел хытă хĕртет,
Ăшă çил вĕркелет,
Сар ыраш çитĕнет...
Вăл хăçан пулать-ши?

Хир илемĕ каять,
Сĕм вăрман çаралать,
Пĕрмай çумăр çăвать...
Вăл хăçан пулать-ши?

Хирсенче юр анчах,
Çырмара пăр анчах,
Сивĕтет аванах...
Вăл хăçан пулать-ши?

(Куçараканĕ К.Иванов)

ЧӖМПӖРТИ ЧӐВАШ ШКУЛӖНЧЕ

Иван Яковлевич Яковлев яланхи йӑлипе пилӗк сехетре тӑрса тумланчӗ те пӗтӗм шкула пӑхсаçăрӑнчӗ: классене, ачасен пўлӗмӗсене, мастерскоя, столовӑя, кухньӑна кӗрсе тухрӗ, пысӑк хуçалӑхри кашни япалана витӗр куçӗпе сӑнарӗ, кирлӗ çӗрте аллипе хыçашласа тӗрӗслерӗ, ачасен апатне хӑй тутанса пӑхрӗ. Йӑлтах йӗркеллӗ.

Ватă директор шурă кӗреçе сухал айӗн çирӗп шӑлӗсене кӑтартса кӑмӑллӑн кулчӗ те хваттернелле утрӗ. Тӑлӑп çухиллӗ вӑрӑм пальто, хӑлхасӑр çаврака çӗлӗк, ӑшӑ çӑматӑ тӑхӑннӑ, аллине пысӑк туя тытнӑ старик ирхи тӗттемре юмахри Хӗл Мучи пек курӑнчӗ. Шкул садӗнчи ватӑ хурамасем, аллейӑри акаципе сирень тӗмӗсем юр пуснипе йывӑррӑн усӑнса лараççӗ. Таврара нимле сас-чӗвӗ те çук. Таçта аякра çуна тупанӗ шӑннӑ юра кӑчӑртаттарни илтӗнет. Çак сивӗре йытӑ вӗрни те илтӗнмест. Тўпери ирхи çӑлтӑрсем пысӑк ахахсем пек йӑлтӑртатса тӑраççӗ. Шкул çывӑрать.

(А.Артемьев)

ÇЫРМА ТА ТУХӐÇЛӐН ӖÇЛЕТӖР

Пирӗн республикӑра çырма-çатра нумай. Пӗтӗмӗшпе çырмасем 100 пин гектара яхӑн йышӑнаççӗ, çав шутра 19 пин гектарне çуллен шыв-шур çӗмӗрет. Колхозсемпе совхозсен çӗрӗсем çинче 2400 çырма пуçӗ ишӗлсе пынине палӑртнӑ. Вӗсенчен кашни çуллен 3—4 метр тӑршшӗ çийӗнсен те пурӗ пӗрле 7—8 километр пухӑнать. Анчах хӑш-пӗр çырмасем çулталя̆кра 7—10 метр таран ишӗлсе пыраççӗ.

Çут çанталя̆ка сӑнакан республикӑри станци кӑтартнӑ тӑрӑх, Атӑла çуллен 5 миллион кубометр тӑпра юхса тухать. Унпа пӗрле уй-хиртен 20 пин тонна азот, 10 пин тонна ытла фосфор, 200 пин тоннӑна яхӑн удобрени сая кайнине пӗлтерет.

Мӑн Çавалпа Кӗçӗн Çавал, Энӗш, Ункӑ, Кӗтне шывӗсем унччен тулли пулнӑ, халӗ ӑшӑхланса пыраççӗ. Çавна пула тавралăх чухӑнланса пырать, тӑпра пулӑхӗ те чакать. Çырма пуçӗсене питӗрес, çырмасене сӗвеклетсе ял хуçалӑх культурисем акма тытӑнас ӗçе комплекслӑ туса пымалла. Кунта чи малтан вӑрман тӑрӑхӗсем лартасси, агротехникӑна çирӗп пӑхӑнса ӗçлесси кӗрет.

(«Хыпар» хаçатран)

ĂВĂС

Ăвăс вăррине çил те, кайăксем те салатаççĕ. Çапах та ăвăс ытларах тымартан хунать.

Ăвăс хуппи мулкачсене хĕллехи выçлăхран çăлать. Шăшисем те юратсах çиеççĕ ăна. Хăнтăрсем те шыв хĕрринче ăвăслăх пулсан урăх çĕре куçса каймаççĕ.

Тути йăçекрех пулнăран ăвăса хурт-кăпшанкă çимест, кăшламасть, шĕкĕ те тĕкĕнмест. Çавăнпа сахăр е çăнăх тытма ăвăс савăт лайăх. Хурт-кăпшанкă тĕкĕнмен пиркиех ăвăсран тунă стройматериал çирĕкпе хурăнран тунинчен ытларах чăтать.

Ăстаçăсем ĕлĕк касмалли ăвăса ик-виç çул маларах хуппине кăшăл пек сăсе илнĕ. Çемçе йывăç çуллен типсе пырса пиçенкĕленнĕ. Ун пек хатĕрленĕ ăвăс пăрăс юманран та тăсĕмлĕрех пулать. Ахальтен мар авалхи çынсем ăвăсран карапсем те, çăмăл кимĕсем те тунă.

Ял халăхĕ кашăк-çăпала, курите-валашка тума та ăвăсах кăмăллана. Кĕреçе-кĕреплене те çак йывăçах меллĕ: çирĕп те çăмăл. Шăрпăк тунă çĕрте те ăвăс — тĕп чĕр тавар.

(Ю.Яргутов)

ПУРНĂÇ ХАКĔ МĔНРЕ-ШИ?

Пурнăç хакĕ мĕнре-ши? Кам каласа парĕ-ши? Пĕри калать — пурлăхра, укçа-тенкĕ, çăкăр-тăвар çителĕклĕ пулнинче тет. Тепри калать: çирĕп сывлăхра, ĕçкĕ-çикĕпе савăнса, ташă-юрăпа киленсе çăрениннче тет. Виççĕмĕшĕ çемьеллĕ пулса халăх умне тăма тивĕçлĕ ачасем пăхса çитĕнтерниннче тет. Хирĕçместĕп вĕсемпе, тĕрĕслĕхĕ унта пур. Анчах çав хушăрах калас килет теприне, пĕтĕм шухăш тĕшшине, пурнăçра вăл чи хакли — хăв ытти çынсене кирлĕ пулни.

(А.Кипеч)

ХАЛĂХ СĂНАНИНЧЕН

Кăткă çунат хушсан çумăра кĕтсех тăр.
Тăвар нăрелсен — çумăра.
Аслати вăрăммăн авăтсан çумăр вăрăма каять.
Уйăх хĕрлĕ пулсан çил пулать.
Аманнă вырăнсем сурма пуçласан çил-тăман тухать.
Шыв шапи кăшкăрма пуçăнсан çур акине тухма юрать.

Çур сивĕ килсен кĕр ăшă пулать.

Сывлăм вăйлă ўксен вĕри пулать, çумăр час пулмасть.

Илем кун кăнтăрла иртсен çумăр пулсан кĕр йĕпе килет.

Çумăр пĕлĕчĕ кашласан пăр çăвать.

Куккук питрав иртсен эрнерен авăтма чарăнсан кĕр вăрăма килет.

ПĂТĂ ПĔÇЕРЕТ ЧАКАК

Чак-чак чакак,
Пăтă пĕçерет чакак.
Хўрипеле пăтратать,
Сăмсипе тăвар ярать.
Хăнасем пухма шутлать,
Ик урипе шут шутлать:
Чĕнетĕп чанана,
Чĕнетĕп автана,
Курака чĕнместĕп,
Çăхана чĕнместĕп.
Тата кама чĕнес,
Çак пăтта çитерес?
Шутлать-шутлать,
Çапах шутласа пĕтереймест,
Тата кама чĕнмеллине
Пĕлеймест.
Юлашкинчен хайхи чакак
Йăлт кайрĕ арпашса.
Чак-чак чакак
Йăлт ўкрĕ аптраса:
Пăтти çуна пуçларĕ,
Кама чĕнмеллине те чакак
Чухлаймарĕ.
Чĕн мана
Хăнана
Вĕрентетĕп сана
Шут шутлама,
Пулăшăп сана хăна пухма.

(Валем Ахун)

КУПĂСТА ШЫВА КĔМЕ КАЙНИ

Ĕлĕк-авал çак çутă тĕнчере пурăннă тет пĕр купăста. Унăн туни шап-шурă пулнă тет. Çавăнпа вăл Шур туналлă купăста ятлă пулнă.

Пурăннă пирĕн купăста, хуйхă курман, анчах пĕррехинче унăн питĕ шыва кĕрес килнĕ тет. Ун чухне çанталăкĕ ăшă пулнă, хĕвел тĕнче çине пăхса йăл кулнă.

Çитнĕ хайхи Шур туналлă купăста шыв хĕрне. Пурте шыва кĕреççĕ, савăнаççĕ. Пĕрремĕш кĕпине хывнă, иккĕмĕшне, виççĕмĕшне... Хывăннă-хывăннă, ниепле те хывăнса çитереймен.

Хĕвел те хĕртме чарăннă, шыва кĕрекенсем киле кайма пуçтарăннă, пирĕн купăста вара шыва кĕреймесĕрех килнелле уттарнă.

ХĂВĂЛ КĂМПИСЕМ

Кашни кăмпан хăйĕн юратнă вырăнĕ пур. Ăвăс кăмпи ăвăслăхра, хурăн кăмпи хурăнлăхра ўсет. Мăк кăмпи — мăк çинче, тислĕк кăмпи — тислĕк çинче, тунката кăмпи — тунката çинче. Хăвăлсенче, паллă ĕнтĕ, хăвăл кăмписем ўсеççĕ.

Çав кăмпасем нўрлĕ те ăшă кĕркунне нумай тухаççĕ, вара кашни хăвăлранах вĕтĕ пуçĕсене кăтартса лараççĕ. Вăрманти чўрече çинчи тĕлĕнмелле чечексене аса илтереççĕ. Е тата чĕнтĕрлĕ чўрече карри пек те туйăнаççĕ. Татса илес килсен хăпар та кай йывăç çине!

Паллă ĕнтĕ, кашни кăмпаçă йывăç çине хăпарса çўремĕ. Темле кăмпа-ха — ăна та пĕлместĕн. Тен, хăпарни харама çеç каять. Пăхма тунката кăмпи пекрех, анчах тунката кăмпийĕ аялта та туллиех. Алла, чĕркуççине шăйăрттарса пĕтерни кăна пулĕ.

Тепĕр тесен, татса пăхни те чăрмантармасть пулĕ. Тĕлĕнмелле хăвăл кăмписем-çке-ха! Тен, питĕ тутлă вĕсем? Пачах ытти кăмпасем пек мар? Çавна чи малтан пĕлекенни вара — эсĕ пултăн.

Ыйтусемпе ĕçсем

Мĕнле кăмпасене хăвăл кăмписем теççĕ?
Автор çак кăмпасене мĕнпе танлаштарать?
Эсир кăмпана çўреме юрататăр-и?
Наркăмăшлă кăмпасене паллатăр-и?
«Кăмпара» темăпа сочинени çырăр.

МАШИНĂНА ÇĂЛНИ

Федот Орлов тăватă моторлă пысăк бомбардировщикпа вĕçнĕ. Пĕррехинче вăл хăйĕн экипажĕпе тăшман çине «кавăнсем» пăрахса таврăнать. Акă тăван аэродром. Анчах инçех мар нимĕç самолечĕсем вĕçсе çўреççĕ. Кун пек чухне анса ларсассăн аэродром ăçтине нимĕççем тўрех чухласа илĕç. Хăвна та, юлташусене те сиен кўрен.

Федот Орлов çапла шут тытать: аэродромран аяккарах вĕçсе каймалла та пĕр-пĕр пушă уя анса лармалла.

Кĕрхи каç. Куçран йĕппе чиксен те курăнмасть. Çитменнине тата пĕтĕм тавралăха йывăр пĕлĕт хупăрласа тăрать. Федот Орлов самолетне аялалла тытать. Çĕр хăвăрт çывхарса пырать, анчах пĕлĕтсем айĕнчен тухма çук. Аялти нимĕн те курăнмасть. Мĕн тумалла?

Командир кун пек чухне çапла та тума пултарать: экипажа парашютпа сикме приказ парать, юлашкинчен хăй те парашютпа сикет. Самолет вара ăçта та пулин ўксе арканать.

«Çук, апла тума юрамасть», — шутласа илет Ф.Орлов. Вăл экипажне çапла приказ парать:

— Пурте сикĕр! Çĕр çине анса çитсен самолета лартмалăх вырăн хăвăрт шыраса тупăр та кăвайтсем чĕртĕр.

Юлташĕсем командира аван ăнланнă. Вĕсем пĕрин хыççăн тепри тĕттĕмелле шăвăна-шăвăна анчĕç. Вăл вăхăтра самолет çав вырăнтах темиçе хутчен вĕçсе çаврăнать.

Кĕçех аялта çутăсем курăнса каяççĕ. Летчиксем кĕлтесене чĕртсе ярса Федот Орлов валли маяксем тунă. Çутăсем пулăшнипе маттур командир самолета чиперех уй варрине антарса лартать.

(Ф.Орлов çырнинчен)

Ыйтусемпе ĕçсем

Калава вуласа тухăр.
Калав содержанине Ф.Орлов яĕпе каласа парăр.

ÇĂКĂР

Çĕр чăмăрĕ евĕр çавра
Çĕн çăкăр куратпăр умра.
Ун пичĕ — тин тухнă хĕвел.
Сасартăк çуталчĕ тĕпел.
Шăпланчĕ пўрт ăшĕ пĕр си.
Пылланчĕ вĕри хир шăрши.

Касаççĕ ак, чĕллĕн хураççĕ,
Савса хăналаççĕ: астив.
Мухтав сана, тертлĕ хура çĕр!
Мухтав сана, тырă ăсти!

Чĕлле эп тытатăп типтерлĕн.
Вăл — çăкăр. Ун ячĕ çўлте.

Хĕвел пайăрки пек хĕлхемлĕн
Куçать ун ăшши ман ўте.
Эп ĕмĕт çитнишĕн хаваслă.

Вĕрентнĕ пире ачаран:
«Нихçан çăкăртан ан пул аслă».
Саккун пек вăл пултăр ялан.

Тăван ял-йыша эп мухтатăп,
Чыслатăп ун тарлă ĕçне.

(А. Воробьев)

Ыйтусемпе ĕçсем

Сăвва вуласа тухăр. Унта мĕн çинчен каланине хăвăр сăмахсемпе каласа парăр. Çак ваттисен сăмахĕсене ăнлантарса парăр:

Çăкăртан асли çук.
Çăкăр — халăх пуянлăхĕ.
Выçсан хура çăкăр та тутлă,
тăрансан — пыл та йăçĕ.

Çăкăр-тăвар, ĕç çинчен калакан каларăшсемпе ваттисен сăмахĕсене тупса çырăр.

САВĂНАТĂП

Кулянмастăп эп чăваш пулнишĕн,
Савăнатăп вырăсла пĕлнишĕн.
Ахальтен-и пĕрлĕхĕмĕр çĕрĕ
Ăмăртса телейлĕн ешерет.
Çитмĕл çичĕ халăх ывăл-хĕрĕ
Тус-тăванлăн алран-ал çăрет.

Савăнатăп эп чăваш пулнишĕн.
Шăнкăр-шăнкăр юхакан юрришĕн,
Тăпăл-тăпăл тăпăрти ташшишĕн,
Асамат кĕперĕ пек тĕрришĕн,
Атăл шывĕ пек çемçе чĕлхишĕн, —
Савăнатăп эп эсир пурришĕн.

Мухтанатăп эп чăваш пулнишĕн.
Çеçпĕлпе Иванова пĕлнишĕн,
Вĕсен ячĕ чĕрере юлнишĕн,
Хусанкай ятулăхне туйнишĕн,
Николаев чăвашра ăснишĕн, —
Мухтанатăп эп чăваш пулнишĕн.

(А. Тямина)

Ыйтусемпе ёçсем

Сăвва вуласа тухăр.

Автор чăваш халăхĕ пирки мĕн калать?

Чăваш халăх çыравçисенчен камсене пĕлетĕр? Вĕсен мĕнле хайлавĕсене вуланă?

НИКИТА ЯКОВЛЕВИЧ БИЧУРИН

Н.Я.Бичурин чиркӳсемпе мăнастирсен пуçлăхĕ (архимандрит) пулнă. Вăл Чăваш Республикинче Шупашкар районĕнчи Шемшерте çуралса ӳснĕ. Ачалăхĕ унăн Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Шĕнерпуç ялĕнче тиечук çемйинче иртнĕ. Никита Бичурин Европăри палла тĕпчевçĕ-академик, публицист-литератор. Вăл Хусанти семинарипе академирен вĕренсе тухнă. Чăваш ялĕсем тăрăх çӳренĕ, хресченсен йывăр пурнăçĕпе паллашнă. Ăна ял ячĕпе Бичурин тесе чĕннĕ. Юлашкинчен вăл Иакинф атте пулса тăнă.

Н.Я.Бичурин истори, географи, философи тата чĕлхе наукисене питĕ юратнă, сăвăсем çырнă. Пултарулла çамрăка академире часах асăрханă, унтах ĕçлеме хăварнă. Хушнă ĕçе вăл çăмăллăн та ăста туса пынă.

Ăна Иркутскри семинари ректорне суйласа лартнă. Китайра 14 çул пурăннă. Хĕвел тухăçĕнчи халăхсен чĕлхисене хăвăрт вĕренсе çитнĕ, ывăнма пĕлмесĕр ĕçленĕ, тĕпченĕ.

Петербургра Н.Я.Бичурина суд умне тăратнă, Китайра Христос тĕнне сарасшăн пулман тесе айăпланă, тĕрмене хупса лартнă. Кунта та вăл алла усса ларман, китай чĕлхинчен нумай ĕçе вырăсла куçарнă.

Ют çĕршыв ученăйĕсем те Бичурина пысăка хурса хаклана. Тĕрмерен тухнă хыççăн вăл наукăпа литература ĕçне пуçаннă. Никита Бичурин нумай чĕлхе пĕлнĕ, анчах тăван чĕлхине манман.

Н.Я.Бичурин хăйĕн тĕлĕнмелле пултарулăхĕпе пирĕн çĕршыв чапне пĕтĕм тĕнче умĕнче çĕкленĕ. Халĕ унăн ятне энциклопедисемпе словарьсене, тĕпчев кĕнекисемпе каталогсене кĕртнĕ.

Ыйтусемпе ёçсем

Кам вăл Н.Я.Бичурин?

Чăваш халăхĕн палла çыннисене камсене пĕлетĕр? Каласа парăр.

ЧĂВАШĂН ЫР ЙĂЛА НУМАЙ

Пит ыр сăмах чăвашăн пур:
«Нихçан та çăлкуçа ан сур!
Хыт хисепле ваттисене,
Сума та су ыттисене...»
Пур йăлана шута хума
Тĕллев лартман эп, тĕв туман.
Шутлас — пурне те çитес çук...
Пĕрин пирки халь калаçу.
Чăваш ялне пырас пулсан
Пĕрремĕш шухăш пулĕ сан:
«Ку ял, чăнах та, вăрманта...
Çук! Çук! Вăрманĕ хăй ялта...»
Мĕн ĕлĕкрен, мĕн авалтан,
Çын хушăнсассăн кил-йышра
Хавхаланса, таса чунтан
Чăваш лартать ик-виç йăмра:
«Йăмра ӳсет, çынни ӳсет,
Хĕвел çути пурне çитет...»
Паян та вăл лартать садне
Шур хурăн хĕр пĕрчи ятне:
«Ӳс хурăн пек яштак, хитре,
Хĕвел вылятăр сăн-питре...»
Хĕвел шевлийĕ айĕнче
Йышлантăр хурăн та юман.
Мăнаçлăн ирĕк çĕр çинче
Кашлатăр, ӳстĕр çĕн вăрман.

(Р. Сарпи)

Ыйтусемпе ĕçсем

Сăвва вуласа тухăр.
Сăвăра поэт мĕн çинчен каланă?
Хайлаври ваттисен сăмахĕсене çырса илĕр, пĕлтерĕшĕсене ăнлантарăр.
Эсир мĕнле халăх çынни? Сирĕн халăхăн мĕнле ырă йăласем пур?

ПРОВЕРЯЕМ САМИ СЕБЯ

Контрольная работа № 1

1. Çак сăмахсенчен хăшĕ çемçе?

упа	*çӳç*	*анне*	*вăрман*
атте	*куçлăх*	*пулăçă*	*черет*

2. Çак сăмахсенчен хăшĕ хытă?

пӳлĕм	*хăлха*	*çурт*	*пӳрт*
хĕл	*чечек*	*кишĕр*	*çӳç*

3. Çак сасăсенчен хăшĕ çемçе уçă сасă?

[а]	[ă]	[а]	[ы]
[о]	[э]	[ă]	[и]

4. Çак сасăсенчен хăшĕ хытă уçă сасă?

[и]	[э]	[и]	[э]
[ă]	[ĕ]	[о]	[ӳ]

5. Çак сасăсенчен хăшĕ уçă сасă?

[о]	[к]	[ă]	[в]
[й]	[л]	[х]	[й]

6. Çак сасăсенчен хăшĕ хупă сасă?

[н]	[ĕ]	[п]	[й]
[ă]	[у]	[ç]	[ӳ]

7. Хăш сăмахсенче ударени тĕрĕс лартса панă?

сехéт	*пукáн*	*аттé*	*аслáти*
áлăк	*чӳречé*	*асáнне*	*хваттéр*

8. Çак сăмахсенчен вырăс чĕлхинчен кĕнĕ сăмахсене тупăр.

хур	тетрадь	тум	пальто
çанталăк	хурлăхан	вăрман	пилеш

9. Çак сăмахсене вырăсла тĕрĕс куçарнă-и? Тĕрĕс маррине кăтартăр.

чӳречe — окно	*мунча* — баня
куç — глаз	*кун* — вечер
кишĕр — капуста	*хĕвел* — солнце
алă — рука	*çумăр* — дождь

10. Çак сăмахсене чăвашла тĕрĕс куçарнă-и? Тĕрĕс маррине кăтартăр.

белый — *шурă*	краска — *сăрă*
огурец — *çарăк*	друг — *юлташ*
голова — *пуç*	небо — *хĕвел*
дверь — *алăк*	гусь — *хур*

11. Çак сăмахсен ушкăнне пĕтĕмлетсе калама пулать-и? Хăш сăмахĕ ытлашши?

кăшман	кишĕр	тетрадь	кăранташ
çĕр улми	ручка	пӳрт	çăл

12. Точкăсем вырăнне хăш сăмаха лартма пулать?

Анне кĕпе	Манăн алă ... .
çăвать	чирлет
пурăнать	ыратать
ларать	пурăнать
вулать	вулать

13. Хăш предложение тĕрĕс мар йĕркеленĕ?

Пахчара ӳсет кишĕр.	Эпĕ шкулта вĕренетĕп.
Сивĕ çил вĕрет.	Анне заводра ĕçлет.
Эпĕ Шупашкарта пурăнатăп.	Хĕвел пăхать.
Манăн икĕ пӳлĕмлĕ хваттер.	Эсĕ пурăнатăн Шупашкарта.

14. Хăш сăмахсенче çемçелĕх палли кирлĕ?

чупат...	çырат...	вĕçет...	перет...
илет...	çиет...	вылят...	ӳсет...

15. Çак япала ячĕсем патне паллă ячĕсем тĕрĕс тупнă-и? Тĕрĕс маррине тупăр.

ăслă студент	хĕрлĕ кĕпе
тутлă пăрăç	сивĕ çил
ăшă çумăр	тутлă пахча çимĕç
тутлă хĕвел	çемçе çыру

16. Вуласа тухăр. Тĕрĕс варианта кăтартăр.

Эпир вулатăп.	Эпĕ çиетĕп.
Эпир вулаççĕ.	Эсĕ çиетĕн.
Эпир вулатпăр.	Эпĕ çиетпĕр.
Эпир вулатăр.	Эпĕ çиетĕн.

17. Ыйтăва тĕрĕс хуравлăр.

Пичче ăçта пурăнать?	Кишĕр ăçта ӳсет?
магазинта	пахчара
шкулта	мунчара
мунчара	пӳлĕмре
Шупашкарта	магазинта

Контрольная работа №2

1. Спишите. Подчеркните мягкие гласные.

Автан, сĕтел, анне, ытлашши, асанне, енчĕк.

2. Спишите. Подчеркните твердые гласные.

Пукане, юман, йăмăк, аслати, ыраш, ĕмĕт.

3. Спишите. Вставьте вместо точек нужные буквы.

Анне... (ĕ,е), пичч... (ĕ,е), й...мра (а,ă), п...рт (у,ӳ), к...неке (ĕ,е), й...м...к (а,ă).

4. Исправьте в словах ошибки, если они есть.

Сывлăх, еньчĕк, мухтанчăк, хĕвель, хĕль, халь (сейчас).

5. Поставьте ударение в следующих словах.

Асатте, вĕрене, кĕлетке, вăрман, ылтăн, курăк, кăмпа, пакша, мулкач, кашкăр, упа, тилĕ.

6. Вместо точек вставьте нужные по смыслу слова.

1) Кайăксем вĕçсе ... . 2) Ачасем ... лайăх кĕтсе илчĕç. 3) ... йăва çавăраççĕ. 4) Мухтанчăкăн — ... енчĕк. 5) Эпĕ хамăрăн ... юрататăп. 6) Шанчăклă ... — пурнăç сиплĕхĕ. 7) Пĕр ... тĕвĕ салтма та йывăр.

Нужные слова: *килчĕç, тус, кайăксем, вĕсене, пушă, алăпа, яла.*

7. Спишите. Подчеркните послелоги и переведите предложения на русский язык.

Эпĕ ещĕке хура тăпра тултартăм та ăна чӳречe ани çине хĕвел питтине лартрăм. Унта помидор вăррисем акрăм. Помидор калчисем ăшă та çутă çĕрте хăвăрт ӳсеççĕ. Эпĕ помидорсăр пуçне хăяр, кавăн, кишĕр акса ӳстеретĕп.

8. Вместо точек вставьте нужные по смыслу послелоги.

1) Эпĕ пӳрт ... тĕрлĕ чечек ӳстеретĕп. 2) Улăхра курăк пилĕк ... ӳсет. 3) Пирĕн республикăра пур шкулта та вырăс чĕлхисĕр ... чăваш чĕлхи вĕренеççĕ. 4) Манăн аттепе анне ... ĕçчен те хастар пулас килет. 5) Чӳречe ... хĕвел пайăрки сăрхăнса кĕрет.

Нужные послелоги: *пуçне, умĕнче, таран, витĕр, пек.*

9. К данным словам подберите близкие по значению слова.

Илемлĕ, хуравла, калаç, макăр, мулкач, симĕс, ерипен, савăн.

Образец: *илемлĕ, чипер, хитре.*

10. К данным словам подберите слова противоположного значения.

Ăслă, аслă, вăйлă, лутра, пысăк, хура, лайăх, вăрăм, савăнăç, тус, йывăр, çамрăк, ăшă.

Образец: *лайăх — япăх, вăрăм — кĕске.*

11. Спишите предложения. Подчеркните подлежащее одной чертой, сказуемое двумя чертами.

1)Тухтăрсем çуран ытларах çýреме сĕнеççĕ. 2) Ир иртет те, каç пулать, çуркунне те çывхарать. 3) Библиотекăна каймассерен эпĕ çĕнĕ кĕнеке илсе таврăнатăп. 4) Чăвашсен тĕп хули çумĕпе анлă Атăл мăнаçлăн юхса выртать. 5) Кĕрĕк ăшăтать, кĕр тăрантарать. 6) Çамрăксем каçхине клуба пухăнаççĕ.

12. Спишите. Подчеркните имена существительные.

Атă, хаваслă, лар, чечек, пахча, çумăр, ýсет, ăслă, начар, кичем, курăк, симĕс, вуннă, сĕтел, çĕнĕ, шкул, ялав, пысăк.

13. Спишите. Подчеркните имена прилагательные.

Пýрт, вула, илемлĕ, пурлăх, сывлăх, хаваслă, инçе, çинче, пултаруллă.

14. Спишите. Подчеркните глаголы.

Вулакан, урам, пăхать, çывăратăп, вĕренет, яшка, килсе кай, хатĕрле, вăрман, сывлăш, хитре.

15. Прочитайте и переведите текст на русский язык.

Пĕчĕк Аня ирпе сада кĕчĕ. Вăл хитре чечеке асăрхарĕ:

— Тататăп та сĕтел çине лартатăп, — шухăшларĕ хĕр ача.

— Сад чечексĕр пулать-и? — шухăш пырса кĕчĕ ун пуçне.

Аня чечеке ал тупанĕсемпе хупласа пăхрĕ. Садра салху та кичем пулса кайрĕ.

Аня аллисене чечексем çинчен илчĕ. Сад çуталса кайнăн туйăнчĕ.

— Ав мĕнле тĕлĕнмелле чечек эсĕ, — шухăшларĕ Аня. — Сана эпĕ татмăп. Илем кýрсе лар, савăнтар çынсене.

Контрольная работа № 3

1. Переведите на чувашский язык.

1) Чайка летит над водой. 2) Белка сидит в дупле. 3) Птица сидит на ветке. 4) Книга лежит на столе. 5) Книга лежит в столе. 6) Книга лежит под столом.

2. Переведите на чувашский язык. Составьте 8—10 предложений с данными словами.

а) под столом — ...
под окном — ...
под шкафом — ...
под сосной — ...
под банкой — ...
под полкой — ...
под солнцем — ...
под ногтем — ...
под кроватью — ...
под скатертью — ...
под дверью — ...

на столе — ...
на окне — ...
на полу — ...
на земле — ...
на парте — ...
на стуле — ...
на полке — ...
на дереве — ...
на траве — ...
на крыше — ...
на ветке — ...

б) в углу — ...
в книге —
в столе — ...
в дупле — ...
в лесу — ...
в деревне — ...
в городе — ...
в Москве — ...
в Чебоксарах — ...
в воде — ...
в воздухе — ...

за шкафом — ...
за селом — ...
за городом — ...
за домом — ...
за лесом — ...
за рекой — ...
за облаком — ...
за деревом — ...
за углом — ...
за озером — ...
за огородом — ...

в) с конфетами — ...
с сахаром — ...
с пряником — ...
с медом — ...

с песком — ...
с тортом — ...
с вареньем — ...
с пирогом — ...

г) большая река — ...
голубая лента — ...
лесная малина — ...
сладкая конфета — ...
красная роза — ...
зеленая трава — ...
большое море — ...
голубое небо — ...
лесное озеро — ...
сладкое пирожное — ...
красное платье — ...
зеленое яблоко — ...

большой ручей — ...
голубой шарф — ...
лесной орех — ...
сладкий арбуз — ...
красный мак — ...
зеленый лук — ...
большие моря — ...
голубые шары — ...
лесные цветы — ...
сладкие конфеты — ...
красные гвоздики — ...
зеленые листья — ...

Контрольная работа № 4

1. Спишите, вставьте, где следует, пропущенные гласные буквы:

тут...р — платок
тур...т — ветка
çум...р — дождь
ç. р — земля
в...тĕ — мелкий
х...на — гость, гостья
юр... — песня
т...ш... — танец
п...с...к — большой
асл... — старший
шултр... — крупный
ч...ваш — чуваш
Ç...рп... — Цивильск
Ç...м...рл... — Шумерля
ал... — рука
пилл...к — пять
ч...ре — сердце
т...ри — жаворонок
ç...л...к — полка
суп...нь — мыло
кук...ль — пирог
п...рт — дом
ч...р...ч... — окно
м...нч... — баня
в...рм...н — лес
п...хч... — огород
ч...ч...к — цветок
ç...л — ветер

2. Спишите, вставляя вместо точек нужные аффиксы.

1) Сад... сывлăш уçă, лăпкă. 2) Хир... трактор сасси илтĕнет. 3) Ачасем экскурси... кайрĕç. 4) Вĕсем шыв... кĕчĕç. 5) Эпĕ шкул... вĕренетĕп. 6) Каçхи тӳпе... çăлтăрсем выляççĕ. 7) Атте завод... ĕçлет. 8) Пиччe хула... вĕренме кайрĕ. 9) Аппа Шупашкар... таврăнчĕ. 10) Пахча... хăяр, купăста, кишĕр, помидор тата çарăк ӳсет. 11) Туристсем Хусан..., Ульяновск..., Мускав... пулчĕç. 12) Пирĕн вăрман... тĕрлĕрен кайăк-кĕшĕк пур. 13) Алăра ĕç пултăр, пуç... ăс пултăр.

3. Спишите. Вставьте, где следует мягкий знак.

Вĕрен..., вулат..., ĕçлет..., ывăнмаст..., ӳкерет..., ӳкермест..., пултарат..., пултараймаст..., тетрад..., тетрад...пе, килет..., çитет..., мун...ча, кал...ча, председател...пе, хал..., хал...ех, çем...е, кĕс...е, ларат..., вулат..., çиет..., вылят... .

4. Вместо точек запишите ***и*** или ***ы*** и составьте с данными словами предложения.

Ç...ру, ç...çĕм, ч...р, ç...рĕм, ç...хăну, ч...с, ç...рла, ç...нçе, ç...п, ч...пер, ч...кĕ, ç...вăх.

5. Составьте предложения из данных слов.

1) Ятлă, йытă, Хураçка, пур, пирĕн.
2) Пахчана, кинемей, Праски, тухрĕ.
3) Тупнă, кăткă, пĕрчи, тырă.
4) Юратать, тытма, пулă, упа.
5) Вăрмана, ачасем, кайнă, пĕррехинче.
6) Кайнă, ăшă, кун, Петĕрпе, Ванюк, пулла.

6. Прочитайте. Запишите слова по группам.

Упа, тилĕ, шăнкăрч, çерçи, мулкач, кашкăр, кăсăя, сурăх, качака, çӳлевĕç, курак, чĕрĕп, тăмана, кăркка, така, тигр, арăслан, хурчка, автан, чăх, шăна, ӳпре, шапа, çĕлен, калта, тăмана, сăпса, лĕпĕш.

7. Прочитайте. Из данных предложений составьте связный текст.

Вĕсем юр çинче кайăка курнă. Хĕл кунĕ. Ачасем паркра выляннă. Вăл питĕ вăйсăр пулнă. Кайăк читлĕхре пурăнма пуçланă. Ачасем ăна пӳлĕме илсе кĕнĕ. Çуркунне ачасем кайăка ирĕке яннă.

Контрольная работа № 5

1. Составьте слова из данных слогов.

чă-	-ва	чĕл-	-рак
ча-	-ман	йăм-	-на
ар-	-ваш	çу-	-хе
йă-	-на	ку-	-ра

2. Расставьте знаки препинания. Спишите. Переведите на русский язык.

ХУРА КĔРКУННЕ

Хура кĕркунне çитрĕ çанталăк сивĕтрĕ вĕçен кайăксем кăнтăра вĕçсе кайрĕç кĕçех хĕл ларать.

3. Кто что делает?

Образец: *Курак вĕçет. Курак краклатать.*

курак ...	çерçи ...	ĕне ...
чĕкеç ...	çăхан ...	сурăх ...
куккук ...	ула курак ...	качака ...
чарлан ...	чана ...	хур ...
упа ...	автан ...	кăвакал ...
кашкăр ...	чăхă ...	лаша ...

4. Вставьте в словах нужные гласные буквы. Спишите.

К...ш...р, куп...ста, к...шман, х...яр, ç...рла, çиç...м, ç...л, çум...р, х...вел, п...л...т, т...пе, т...л...к, пул..., к...тес, с...тел, хур...н, ким..., х...м...р, сим...с, шур..., к...вак, еш...л, патт...р, в...рман, ç...н, кив..., к...р...к.

5. Прочитайте. Письменно ответьте на вопросы.

ЫРĂ ЯТ ХĂВАРНИ.

Палюк ăвăс çине хăйĕн ятне çырса хучĕ. Халĕ унăн ятне пурте пĕлĕç ĕнтĕ. Муççа мучи пуçне пăркаларĕ те çапла каларĕ: «Ырă ята киревсĕр çырупа мар, ĕçпе хăвараççĕ. Хам пулăшам-ха сана ырă ят хăварма».

Муççа мучипе Палюк ăвăспа юнашарах хурăн лартрĕç. Темиçе çултан хурăн сарăлса ешерĕ. Ял çыннисем вара ку Палюк хурăнĕ тейĕç.

(Н.Иванов çырнинчен)

Палюк мĕнле киревсĕр ĕç тунă? Муççа мучи ăна мĕне вĕрентнĕ? Палюк ырă ята мĕнле хăварать? Сирĕн хушăра Палюк пеккисем пур-и?

6. Вместо точек запишите нужные слова.

Йывăçсем: ..., ..., ..., ..., ..., ...
Тыр-пул: ..., ..., ..., ..., ..., ...
Чечексем: ..., ..., ..., ..., ..., ...
Пахча çимĕç: ..., ..., ..., ..., ..., ...

7. Составьте из данных слов предложения. Спишите.

1) Çитрĕç, кунсем, сивĕ. 2) Сахал, хĕвел, пăхать. 3) Юр, шурă, çăвать. 4) Васкаççĕ, çине, сăрт, ачасем. 5) Ярăнаççĕ, çинче, конькипе, пăр. 6) Каçалапа, килĕсене, ачасем, хаваслă, саланаççĕ.

Контрольная работа № 6

1. Подберите к существительным прилагательные.

Çумăр, хĕвел, кун, ĕç, кĕнеке, вăрман, кашкăр, тĕтре, шыв, курăк, сывлăш, алă, куç, çÿç, çын, анне, пĕлтерÿ, уяв, хĕр ача, асанне.

2. Прочитайте. Выпишите главные члены предложения.

ПУРНĂÇПА ВИЛЁМ

Ушкăн-ушкăн шур пĕлĕт иртет...
Тăлăх хирте каç пулса килет.
Курăксене тайса çил вĕрет,
Çĕр çумĕпе тусан вĕçтерет.

Хирте пĕр тĕмеске пĕр-пĕччен...
Тăпри çине пуснă вĕлтĕрен.
Вилнĕ çын тăпри вăл — çак тăпра,
Ырă çынни вилнĕ вăрçăра.

Çывăр, тăван, иртрĕ ĕмĕрӳ,
Вăхăтсăрах тухрĕ сан чуну.
Анчах канлĕ пултăрччĕ тăпру,
Канлĕ пултăр нӳрĕ вырăну.

Çĕр иртет те, килет çутă ир...
Анчах ĕмĕр пĕччен тăлăх хир.
Вĕлтĕрене тайса çил вĕрет,
Вилнисене асăнса йĕрет.

(Çеçпĕл Мишши)

3. Подберите к данным словам синонимы.

Хитре, алхас, ăс, нуша, итле, çиç, инçетре, йĕпен, аш, калаç, картиш, ӳркен, ешĕл, кашни, кун, хыпар, пек, ывăт, самăр, çерçи, çиллен, çĕмĕр, уй, ултав, тӳлевсĕр, тутлă, шухăшла, япăх, яшка.

Например: *хитре — капăр, илемлĕ, чипер.*

4. Образуйте глаголы от данных слов:

ватă —	хĕрлĕ —
кĕске —	шурă —
вăрăм —	кăвак —
пысăк —	çутă —
вĕтĕ —	тĕттĕм —
шултра —	сивĕ —

5. Подберите соответствующие существительные к прилагательным.

Шурă, хытă, пылак	Вăрăм, тутлă, симĕс... .
Çамрăк, симĕс, йӳçĕ	Хĕрлĕ, тутлă, шултра ... .
Çăмлă, ăшă, хĕрлĕ	Симĕс, пысăк ... .
Çаврака, сарă, тутлă	Шурă, çӳллĕ ... .

Кирлĕ сăмахсем: *хурăн, çырла, пан улми, хăяр, сахăр, сухан, кĕпе е кофта, çарăк.*

6. Из данных слов составьте предложения.

КĔРКУННЕ

1) Хĕвеллĕ, иртрĕ, çу.
2) Кĕскелчĕç, çĕрсем, вăрăмланчĕç, кунсем.
3) Пĕлĕчĕсем, тӳпере, тĕксĕм, шăваççĕ, çумăр, уçланкинче, пĕтĕмпех.
4) Типрĕ, вăрман, курăк.
5) Йывăçсен, саралнă, çулçисем.
6) Сукмаксем, витĕннĕ, сарă, хĕрлĕ, çулçăсемпе.
7) Часах, ларĕ, хĕл.

7. Вставьте пропущенные буквы и спишите.

К...ркунне, ç...рла, х...лле, ш...нкăрч, кăс...я, ç...рçи, вăрм...н, тар...н, ч...чек, п...хча, к...мпа, к...пе, ш...лавар, ç...матă, пушм...к, с...тел, алс...ш, ç...р улми, х...мла ç...рли, хурл...хан, в...рене, хач..., х...р, с...т, т...пăрчă, ч...кăт.

Контрольная работа № 7

1. Подберите имена прилагательные к данным словам.

Купăста шултра, ..., ..., ..., ...
Арбуз хĕрлĕ, ..., ..., ..., ...
Çарăк тутлă, ..., ..., ..., ...
Çырла сĕтеклĕ, ..., ..., ..., ...
Кушак çăмламас, ..., ..., ..., ...
Йытă хаяр, ..., ..., ..., ...

2. Составьте предложения с данными словами.

1) Хула, пирĕн, тĕп, Шупашкар.
2) Вырнаçнă, хĕрринче, Атăл, вăл.
3) Хула, илемлĕ, таса, урамĕсем.
4) Шупашкара, никĕсленĕ, çулта, 1469.
5) Халăх, тĕрлĕ, пурăнать, Шупашкарта.
6) Сăвăç, мĕн чухлĕ, мухтаман-ши, хуламăр, тăван, Шупашкара.

3. Письмо по памяти.

ТĂВАН ХУЛА

Атăл тăрăх хăпаратпăр,
Ак умра, инçех те мар,
Курăнса каять хуламăр —
Пирĕн капăр Шупашкар...
Савăнатпăр, тĕлĕнетпĕр
Эсĕ хăвăрт ӳснинчен,
Сăвă-юрă кĕвĕлетпĕр
Хамăр хуламăр çинчен.

(В.Давыдов-Анатри)

4. Прочитайте. Спишите, дописывая слова.

КАЙĂК ЧĔЛХИ

Пĕрре эпĕ вăрманти сукмакпа пыр... Унччен те пулмарĕ — пилеш кайăкĕ ман умах вĕçсе тух... те хурлăхлăн чĕвĕлтетсе ил...

Эпĕ нимĕн те ăнлан... Хам çулпах ут... Ик-виç утăмран кайăк каллех ман умри турат çине пырса лар... те хурлăхлăн чĕвĕлтете пуçла... Хăй турат çинчен турат çине канăçсăррăн сиккелеме пăрах...

Ырă мара сиссе эпĕ пилеш кайăкĕ патнелле ут... Акă вăл сукмак айккине пăрăн... те пĕр тĕм тавра вĕçе пуçла... Сасартăк тем чаштăртат... Хурăн пуçлă çĕлен! Вăл тĕм çине çавăрнă кайăк йăви патнелле шуса пыр...

Эпĕ çĕлене ярса ил... те аяккалла персе ят... Пилеш кайăкĕ йăви патнех пырса лар... те савăнăçлăн чĕвĕлтетме пуçла... Çаврака йăвара сап-сарă пуçлă чĕпписем тăваттăн-пилĕккĕн курăн...

(В.Григорьев-Енĕш çырнинчен)

5. К глаголам подберите подходящие по смыслу деепричастия.

Вула, тух, ан хăпар, ил, калаç, ĕçле, пурăн, çи, хатĕрле, пуçла.

Образец: *васкаса вула, чупса тух.*

6. Вместо точек поставьте нужный аффикс деепричастия.

1) Шупашкара кил... чăваш театрĕнче пулатăп. 2) Тарла... ĕçле... тăран... çиетĕп. 3) Вăхăт çит... йывăç çулçи те тăкăнать. (Ват. сăм.) 4) Тух... та, кĕр... те алăка хуп... çӳре. (Ват. сăм.) 5) Мотор, чăнах

та, чарăн...-чарăн... ĕçлеме тытăнчĕ. (В. Сат.) 6) Хăмла пахчи илемлĕ хăмли пул... çитсессĕн. (Ю. Сем.) 7) Пӳрт умĕнчи хурăнсем кашла... лараççĕ. 8) Александр Яковлевич — ĕçчен çын. 9) Унăн пĕрмаях чупкала... çӳремелле, вăй хур... ĕçлемелле, мĕн те пулин тумалла. (Хв. Уяр.) 10) Юр нумай çу... тыр-пул ăн... пулать теççĕ ваттисем. 11) Ашкăр... ӳсекен симĕс курăк айĕнче шăрчăксем чăрлатаççĕ, чечексен таврашĕнче пыл хурчĕсем, тĕрлĕ тĕслĕ лĕпĕшсем вĕлтĕртет... вĕçеççĕ. (В. Дав.-Анатри.)

7. От данных глаголов образуйте знакомые вам формы причастий.

Вула, лар, çыр, тăр, ут, чуп, шухăшла, пăх.

8. В следующих предложениях найдите причастия.

1) Çынсемшĕн ман пĕр пĕчĕкçеç хĕвел пуласчĕ. 2) Атте йывăç лартса сад ĕрчетсе пархатарлă ĕç пуçарнă. 3) Илеме курма вĕренес пулать. (Г.Еф.) 4) Нумай иккен пĕлес пулсан вуламалли те çырмалли. (А.Лук.) 5) Çиесси çăмăл та, ĕçлесси йывăр. 6) Калаçассине сахал калаç, ĕçлессине нумайрах ĕçле. (Ват. сăм.) 7) Хура çăкăр çиекен ниçта та хур пулман. 8) Турпас тăвакана мар, пӳрт лартакана платник теççĕ. 9) Хытă ĕçлекеншĕн хура çăкăр та кулачă пек тутлă. (Ват. сăм.) 10) Çухалнă япала тупăнĕ, иртнĕ вăхăт таврăнмĕ. 11) Ал тивмен япала алă çул выртнă. 12) Пĕлни çынна нихçан та пăсмасть. (Ват. сăм.)

9. Спишите предложения так, чтобы получился связный рассказ. Вставьте пропущенные буквы.

ПĂШИ ПĂРУШĔ

Пăши пăрушĕ çапла ĕнепе хĕл каç... Пĕр кунхине вăрмана кай... те каялла таврăнма... Эпир ăна усрама пуçла... Пĕрре пирĕн ĕнепе пăши пăрушĕ ерсе таврăн... Çуркунне вăл тĕреклен..., пысăк пăшиех пулса тă...

Контрольная работа № 8

1. Найдите в рассказе глаголы. Определите и обозначьте их время.

ЙĂМРА

Йăмра — чăвашăн юратнă йывăçĕ. Енчен те ялта йăмрасем куртăр пулсан, пĕлĕр — ку яла чăвашсем никĕсленĕ.

Ĕлĕк чăвашсем çурт тăррине улăм витнĕ. Улăм лайăх çунать.

Çавăнпа та чăвашсене час-часах пушарсем аптăратнă. Йăмра çăвĕпех сип-симĕс ларать. Вĕри çулăм пĕр çуртран теприн çине сиксе ўкесрен аван сыхлать.

Халĕ пирĕн ялсенче улăм витнĕ çуртсем юлмарĕç ĕнтĕ. Пурте шифер е шуç витеççĕ. Апла пулин те авалхи йăлана манмаççĕ. Çуртсем хушшине йăмра е тирек лартаççĕ.

(И.Шухши çырнинчен)

2. Из данных слов составьте и запишите пословицы.

Кўллине, шапа, мухтать, та, хăй.
Ан хапсăн, мулне, çын, туп, ĕçлесе, ху, теççĕ.
Мухтан, ан, тумасăр, ĕçне.
Ырă, хисеплĕ, пулĕ, хăвнах, аннўне, аçупа.
Аван, пурăнни, пурне те, килĕштерсе.
Пĕлеççĕ, пĕлмеççĕ, ăсран, сăнран, лайăха.

3. К данным прилагательным подберите однокоренные глаголы, отвечающие на вопрос *что делает?* Запишите их.

сарă — саралать	симĕс —
кăвак —	хура —
шурă —	хăмăр —
хĕрлĕ —	çутă —
тĕттĕм —	тĕксĕм —

4. Спишите, поставьте ударение.

ПĂРЧĂКАН

Трактор кĕрлесе ĕçлет,
Уй-хире вăл сухалать.
Пăрчăкан унтах çўрет,
Касă тăрăх чупкалать,
Хурт-кăпшанкă пуçтарать,
Вĕçкелет вăр-вар кăна,
Ма тесессĕн йăвара
Чĕпписем кĕтеç ăна.
Кун каça, тен, пин хутлать
Уй-хире вăл васкавар.
Ĕçчене те çын мухтать:
«Пăрчăкан пекех вăр-вар».

(П.Ялгир)

5. Спишите данные глаголы. Подберите к ним глаголы противоположного значения. Запиши их рядом в столбик:

тух —	ил —	питĕр —
ăшăт —	йĕпет —	пуçтар —
кĕскет —	кай —	пух —
вырт —	кул —	савăн —
ĕçле —	мухта —	сӳт —
салт —	сут —	сып —
çĕмĕр —	çĕт —	çут —
çыпăçтар —	туп —	ут —
хăпар —	хуп —	чик —
ыйт —	ырла —	ятла —

6. Спишите текст. Подчеркните главные члены предложения.

ТĂВАН ÇĔРШЫВ

Çуралнă килĕм, юратнă кĕтесĕм. Тăван çĕршывăм! Чи малтан асăма килекен сăмахсем. Шартлама сивĕре шăнма памаççĕ вĕсем, сывлăш çитмен шăрăхра кăкăра уçăлтараççĕ. Йывăрлăхсене çĕнтерме пулăшаççĕ, ĕçре вăй-хал параççĕ, мăшăр çунат хушаççĕ.

Çуралнă килĕм ял-йышпа паллаштарчĕ, хамăр тавралăха кăтартрĕ, илемĕпе савăнтарчĕ, ăна юратма вĕрентрĕ.

Юратнă кĕтесĕм ĕçе хăнăхтарчĕ, ĕçре пиçĕхтерчĕ, пурнăç сукмакĕ çине кăларчĕ. Раççей ывăл-хĕрĕпе, çĕршыври халăхсемпе çывăхлатрĕ, тăванлатрĕ.

Тăван çĕршывăм телей кӳчĕ. Ирсерен таса хĕвеле кĕтсе илетпĕр, кăвак тӳпене куратпăр, шăнкăр-шăнкăр шыв юххине итлетпĕр, чĕвĕл чĕкеçсен, çепĕç шăпчăксен юрри-кĕввине тăнлатпăр.

Тăван çĕршывăм, юратнă кĕтесĕм, çуралнă килĕм! Чи малтан шăранса тухакан юрă сăмахĕсем.

7. Образуйте распространенные предложения.

Тул çутăлать. Çăлтăрсем сӳнеççĕ. Сывлăш уçă. Хĕвел тухать. Чечексем ӳсеççĕ. Çил вĕрет. Çулçăсем шĕпĕлтетеççĕ. Эпир ларатпăр. Хĕвел хĕртет. Юр ирĕлет. Шыв юхать.

Контрольная работа № 9

1. Прочитайте. Определите, сколько гласных букв в каждом слове.

1) Туслăх çынна кашни самантрах, кашни утăмрах кирлĕ.
2) Шанчăклă тусăн хакĕ çук теççĕ.
3) Кĕрхи кун — тутă кун.
4) Ĕç — пурнăç тыткăчи.
5) Вĕренни — çутă, вĕренменни — тĕттĕм.
6) Сывлăх — пурлăх. (Ват. сăм.)

2. Подумайте и напишите, кто как передвигается.

Çăрттан ... . Çын ... . Лаша ... . Пулă ... . Çĕлен ... . Кăткă ... . Лĕпĕш ... . Кайăк ... . Упăте ... . Пакша ... . Эрешмен ... .

3. Спишите, изменяя слова по образцу.

Калаç — калаçатăп, калаçатăн, калаçать; калаçатпăр, калаçатăр, калаçаççĕ.

Турт, ĕçле, кан, çыр, вула, шакка, йĕр, çых, вĕрен, шутла.

4. Подумайте и письменно дайте ответы на вопросы.

Сколько букв в чувашском алфавите?

Назовите мягкие гласные, шумные согласные и сонорные звуки.

5. Спишите предложения, поставьте знак ударения, обратите внимание на правописание слов.

ТĔЛĔНМЕЛЛЕ ВĂЙ-ХĂВАТ

Мимере «ĕçсĕр» ларкан клеткăсем нумай. Вĕсене ĕçе явăçтарма вĕренмелле. Пирĕн ăс-тăнра пиншер кĕнекелĕх пĕлӳ вырнаçма пултарать. Мĕн ĕлĕкренех паллă çынсем хăйсене хăйсем вĕрентсе, тĕрлĕ енлĕн аталантарса пынă.

...А.Суворов нишлĕрех çуралнă. Салтака юрăхлă пулас ĕмĕтпе ачаранах сивĕ шывпа çăвăннă, гимнастика тунă. Çавăнпа мĕн ватăличченех хастар та ывăнма пĕлми çын пулса тăнă.

Çын организмĕн хăвачĕ питĕ пысăк.

(«Çил çунат» журналтан)

6. С помощью вопросов письменно установите связь слов в предложениях.

ВУТ-КĂВАР

Пушар калама çук пысăк инкек кӳрет. Çулăм мĕн пуррине йăлтах пĕтерет. Пурлăх харама каять. Чылай чухне çак инкекрен хăтăлма май пур. Яланах сыхă, тимлĕ пулни кирлĕ. Пушар вăл сăлтавсăр пулмасть. Çак инкек чылай чухне çын айăпĕпе пулать.

7. Прочитайте слова. Подумайте, какие из них обозначают птиц, а какие диких животных. Выпишите в разные столбики.

Упа, чана, кашкăр, тилĕ, çăхан, кăвакарчăн, чĕрĕп, хурчка, кăсăя, çерçи, мулкач, арăслан, тăмана, уйăп, шăпчăк, пакша, курак, хир сысни, ула такка, пăши, вĕршĕн, чĕкеç, ӳхĕ, чакак.

8. Прочитайте. Выпишите глаголы, укажите лицо, число, время. Ответьте на вопросы: 1) Из какого произведения эти строки? 2) Что вы знаете о К. В. Иванове?

1. Ăшă сывлăш сивĕнет, сасă-чĕвĕ илтĕнмест. 2. Шăпăр сасси илтĕнмест, шăпăрçи те курăнмасть. 3. Туйăн хăватне кĕтсе пурте вĕçсе çӳреççĕ, килти пĕр чун хуйхине пĕртте вĕсем сисмеççĕ. 4. Атте-анне ӳсĕрпе хĕрне итлес темерĕ, каччи пуян тенипе хĕрин чунне пĕлмерĕ. 5. «Ырă тантăш-тăвансем, пире хисеп тумăр-ши? Хĕре кацча паратпăр, Тури касса утмăр-ши?» 6. «Пырăпăрах, пырăпăр, пымасăрах юлмăпăр!» 7. Тепĕр кунне ирхине чăваш хире тухмарĕ, эрне куна асăнса нимĕн ĕç те тумарĕ.

(К. Иванов)

9. Прочитайте и запомните.

Икĕ чĕлхе — икĕ вăй, икĕ чĕлхе — ик çунат. Пулăшĕç вĕсем сана ăс-тăн вăйне хăпартма, çынлăха пуянлатма. Çине тăрса эсĕ вĕрен аслă вырăс, сăпайлă чăваш чĕлхисене — хамăр йышлă çĕршыври ытти тăван халăхсемпе калаçма, пĕлĕве пуянлатма. Анчах юрамасть манма тăван анне чĕлхине, асаттесен вĕрентĕвне, асаннесен пилне. Ăслă çынсем хушшинче халь урăхла шутлаççĕ, тăван чĕлхене сума сăвакансене ытларах чыслаççĕ.

Икĕ чĕлхе — икĕ вăй, икĕ чĕлхе — ик çунат.

(А. Кипеч)

В МИРЕ НАЦИОНАЛЬНЫХ НАРЯДОВ ЧУВАШЕЙ

Одежда

Одежда традиционного типа имела разнообразную форму.

Материалом для одежды чувашей служили холст, домотканое сукно, покупные ткани, войлок, кожа. Для обуви использовались также луб, дерево. Материал для одежды изготовлялся в основном в домашнем хозяйстве. Из конопли и льна ткали холст. Праздничную одежду шили из тонкого холста (*çинçе пир*), а из холста среднего качества (*вăтам пир*) — рабочую рубаху, шаровары. Тонкое сукно из овечьей шерсти (*тăла*) шло на праздничные и свадебные кафтаны (*сăхман*), грубые — на обычные кафтаны и чапаны.

В XIX в. у низовых чувашей распространяется крашенина — окрашенная в один цвет готовая ткань и пестрядь (*улача*) — холст, сотканный из заранее окрашенных ниток с узором в клетку, полоску и т. д. У верховых и средненизовых чувашей нательная одежда (рубаха и штаны) шилась, как и в далеком прошлом у всех чувашей, из белого холста. В конце XIX — начале XX вв. для пошива рабочих рубах и шуборов верховые чуваши использовали самодельную ткань белого цвета из покупных хлопчатобумажных ниток. Ткани фабричного производства покупали для отделки традиционной одежды.

Типы и формы одежды

Одежда видоизменялась под влиянием различных факторов, в частности — географической среды, традиционных занятий населения, а также миропонимания народа в различные исторические эпохи. Издавна возникло деление одежды на верхнюю и нижнюю (нательную). По форме она (особенно женская рубаха) подразделяется в соответствии с этнографическими группами —

тури, анат енчи и анатри. Хотя по набору предметов одеяния одежда всех групп однородна, имеется много локальных особенностей в покрое, орнаментации, композиции и приемах изготовления, цветовом сочетании и способах ношения. Традиционная одежда различается также по полу, возрасту, сезону. Самые древние наряды, дошедшие до нас, датируются XVII в.

Нательная одежда

На тело непосредственно надевали рубаху. Наиболее распространенным и, безусловно, старинным типом покроя рубахи является так называемый туникообразный покрой, когда спина и перед состоят из одного полотнища, перегнутого поперек в плечах. Основные конструктивные элементы традиционной рубашки: переднее и заднее полотнища (*кĕпе пӳлĕхĕ*), боковые клинья (*кĕпе хайхи*), вырез для шеи — ворот, рукава, ластовица — клин, вшиваемый в пройму и рукав под мышкой, подол. Варианты покроя рубашки: рубашка с цельным или отрезным остовом, разная форма воротника (без воротника, со стоячим воротником, с отложным воротником), наличие кокетки и т. д.

Старинные мужские рубашки верховых шились широкими и длинными, до колен. Они имели туникообразный покрой, грудной разрез делался на правой или левой стороне груди. Рубашка не имела воротника (шейный разрез окаймлялся полоской холста) и приполка. Пришивалась подкладка — из более грубого и редкого холста. Простые рабочие рубашки ничем не украшались, праздничные украшались вышивкой вокруг грудного разреза, на концах рукавов, подоле. Рубашки шили из белого холста различного качества, в зависимости от характера использования, а также состояния семьи. Белые рубашки были освящены традицией и считались обязательными у всех групп чувашей во время языческих молений. Рубахи носили навыпуск и подпоясывали.

Женские рубахи по фасону также принадлежали к древнему виду — туникообразному покрою. До середины XIX в. она изготовлялась из белого холста. В покрое рубашек разных этнографических групп существовали различия. Так, нагрудная часть рубашек анатри и анат енчи часто дополнялась прямоугольной вставкой. Разными были узоры, их цветовое сочетание и техника выполнения. Длина рубахи у всех групп доходила до щиколоток, рукава к кисти суживались, разрез делался посредине груди, края

его вышивались особым швом. Вышивка рубашек низовых и средненизовых — плотная, полихромная, верховых — ювелирная. Первые свои рубахи украшали медальонообразными *кĕскĕ* (по обе стороны грудного разреза) или ромбовидным узором *сунтăх* (из полосок кумача), у вторых — вышитыми *хулçи* (лентообразными съемными наплечниками шириной в 2 см и длиной около 40 см).

В древности узоры — круг, ромб, розетка — имели символическое значение солнца. Рукава, подол и наспинная часть состояли из фигур, где вышивка находила гармоничное сочетание с нашивками из домотканой бордово-красной тесьмы. У вирьял ворот, грудной разрез и плечевой шов украшались узенькими полосками вышивки. Рубашки девушек орнаментировались более скромно. На них часто помещались два ромбика или ромб с наклонной полоской. В комплексе старинного костюма рубаха выступает как главный элемент. Ей подчинялись все наряды по композиции и цветовому колориту узоров. Платье носили с фартуком или передником. Он отличался яркостью, обилием украшений (вышивка, нашивки, кружева). Праздничный наряд женщины надевали с вышитыми или узорнотканым поясом (*пиçихxи*). Верховые чувашки одновременно повязывали три пояса: на платье, поверх напуска платья и затем поверх фартука. Концы поясов завязывались на боку и спускались вниз помпонами. В группах анатри и анат енчи носили один пояс с украшенными концами.

Верхняя одежда

По вечерам и в прохладные дни летом мужчины надевали легкий кафтан из белого холста и пустав из тонкого сукна черного и синего цвета. Он имел покрой с прямой или приталенной спинкой со сборками, с запахом справа налево. Праздничный шубор украшался богатой вышивкой по воротнику, на груди, вдоль края пол и сзади в виде треугольника. Кроме вышивки использовались шелковые нашивки. Праздничный шубор прямоспинного типа, подпоясывавшийся красивым тканым поясом, носил предводитель свадьбы (*мăн кĕрӳ халачĕ*). Белый шубор в прошлом являлся также одеянием жрецов во время жертвоприношений и халатом для пожилых мужчин. Осенью мужчины носили кафтаны (*сăхман*) из толстого сукна длиной ниже колена, с отложным воротником. Кафтаны запахивали и подпоясывали кушаком.

Зимней одеждой являлись шубы (*кĕрĕк*) из овчины желтой или черной окраски. Шубы шили длинные, со складками или сборками на талии, с меховой отделкой по вороту и рукавам. Чем больше делалось оборок, тем богаче считалась шуба, но для этого требовалось большое количество овчины. Воротник, края пол, карманы лучших шуб обшивались полоской черного сукна. В сырую погоду или в дорогу поверх кафтана или шубы надевали чапан (*аçам*), епанчу (*юпанча*), дождевик (*çумăрлăх*) из плотного сукна. Они шились прямоспинные, длиной до щиколоток, с большим воротником и глубоким запахом. Чапаны носили нараспашку или подпоясывали кушаком.

Верхняя одежда женщин по своим типам была такой же, как у мужчин, в то же время она отличалась большим числом вариантов и характером украшений. Белый шубор и черный легкий кафтан-халат носили только верховые. Низовые носили суконные кафтаны. Часто шуборы застегивались только на один крючок на талии.

Шуборы и кафтаны украшались полосками цветной ткани вдоль края пол и воротника, у карманов, а также вышивками на рукавах, карманах, талии.

Суконные кафтаны молодых женщин и девушек шили из тонкого и мягкого сукна зеленого или черного цвета, на груди они украшались полосками цветной ткани или вышивкой. Рабочие кафтаны были короче (до колен) и имели обычный темно-коричневый цвет. Низовые чувашки предпочитали в качестве праздничного наряда кафтаны черного или синего цвета, верховые — белые и желтые. Зимней одеждой женщины служили шубы из желтой и более ценившейся черной овчины. В частности, лучшим подарком невесте была шуба из девяти черных овчин с рукавами и карманами, отороченными мехом.

Хорошая шуба имела множество сборок, иногда до 90. В качестве элемента верхней одежды служили кушаки. Их делали длинными (до 2 м), чтобы было можно два раза обернуть вокруг талии и пустить концы по бокам. Кушаки носили с ярко украшенными концами (кисти, куски тканей).

Свадебная одежда

Жених носил на свадьбе красиво расшитую рубашку (подарок невесты), суконный кафтан, подпоясанный кушаком, серую шапку, сапоги, черные перчатки. Поверх кафтана у верхо-

вых чувашей жених надевал особое оплечье-украшение из разноцветного бисера на нитках, составлявших сетку, с раковинами по краям; ворот и передние края обшивались красным кумачом. В руках или за кушаком имелась нагайка. Жених и дружки повязывали перекинутое через плечо или обернутое вокруг талии полотенце — подарок невесты.

Свадебная одежда невесты состояла из вышитой рубашки, передника, суконного пустава или особо разукрашенного шубора, сапожек либо кожаных ботинок с чулками. На свадьбе в доме своих родителей невеста вначале надевала девичьи украшения и *тухью*, а также свадебное покрывало. По древнему обычаю невеста дважды сбрасывала с головы покрывало и лишь на третий раз одевала его. Во время обряда *сурпан сырни* в доме жениха молодую одевали в костюм замужней женщины, голову обертывали *сурпаном*, надевали *хушпу* и все женские украшения. Выделялись своими одеяниями *туй пуçĕ* (предводитель свадьбы) или *мăн кĕрӳ* (старший дружка) и *туй арăмĕ* (сваха). На свадьбу дружка являлся в верхней одежде — *туй шупăрĕ* (свадебный халат). Свадебный кафтан украшался богатой вышивкой, нашивкой из шелковых лент. *Туй арăмĕ* поверх костюма с украшениями или кафтана накидывала на спину специальный шелковый или расшитый платок — знак ее особого положения на свадьбе.

Среди свадебных предметов ярко выделялись орнаментированные платки и покрывала — это *кĕрӳ тутри* (наспинный наряд жениха), *ташă тутри* (плясовой платок), *сăра тутри* (покрывало на *чиряс* с пивом). Во время языческих религиозных обрядов и жертвоприношений участники моления старались одеваться в белое. Белый цвет был освящен, как отмечалось, традицией. Старики-юмзи, руководившие церемонией, надевали белые прямоспинные халаты. При совершении семейных ритуалов пожилая женщина — глава церемонии надевала мужскую шапку.

Одежда мальчиков была близка к одеянию взрослых. Но в ее комплексе не имелось принадлежностей ритуального характера, по своей форме и покрою она приближалась к костюму стариков. В то же время костюм девочек обнаруживал сходство с одеждой не пожилых женщин, а девушек.

Сравнительный анализ одежды и нарядов чувашей, проведенный А.А.Трофимовым, показал, что их древние корни и традиции связываются с Передней Азией. Так, согдийские скульпторы (XI в. до н. э.— V в. н. э.) на фигурах людей изображали

рубахи с медальонообразными узорами — как *кĕскĕ* на чувашских рубахах. Женские богини «одеты» в покрывала, тюрбаны (*сурпан*), а их головные уборы, состоящие из монет и раковин, повторяются в конструкции чувашских *хушпу*. В произведениях, скульптурах мастеров Пенджикента (V—VIII вв. н. э.) встречаются почти все виды украшений, характерных для женского костюма чувашей. Точки соприкосновения с ними обнаруживаются в одежде народов Индии и Ирана. Чувашская народная одежда имеет сходство с костюмами народов Средней Азии и Казахстана. Выявлено много общего с нарядами этнографических групп туркмен, в частности, племени нохурли. Так, форму чувашской тухьи повторяет тухья девушек нохурли, шерстяные онучи — долак близки к *тăла* и т. д. Параллели наблюдаются с одеждой ногайцев, авар, этнографической группы греков-урум и др. народов Кавказа. Типологическое сходство наблюдается в традиционной одежде народов Урало-Поволжья — это покрой одежды, орнаментация, стиль украшений, общность названий предметов народного костюма. Общую структуру имеют рубашки луговых марийцев и анат енчи, головные полотенца *шарпан* марийцев и *сурпан* вирьял и анат енчи, налобные повязки, поясные подвески *солык* и *сĕлкĕ*, женские украшения из бисера и монет *почкама* (мар.) и *ама* (чув.), *ошпу* и *хушпу* с открытым верхом, *такия* и *тухья* и т. д. Пласт параллелей, существующий в одежде и украшениях луговых марийцев и чувашей анат енчи и анатри, относится, надо полагать, к болгарскому времени. К более позднему времени следует отнести сходство между одеяниями вирьял и горных марийцев. Сходство выявляется при сравнении костюмов чувашей, с одной стороны, татар (казанских, кряшен, мишарей), башкир, удмуртов (особенно этнографической группы бесермян), мордвы, с другой. Чувашская народная одежда и украшения — богатейшая сокровищница материальной и духовной культуры прошлого. В тысячелетних традициях сосредоточена связь времен, племен, народов, культур разных географических регионов Азии и Европы. Одежда чувашей тесно связана с земледельческим укладом жизни.

Головные уборы и украшения

Старинные головные уборы чувашских женщин делятся на две группы: покрывала и шапки. К группе покрывал относятся головная повязка *(сурпан)* с перевязью (*масмак*), а также пла-

ток с перевязью и *чалма*. Это уборы замужних женщин. Сюда же относится покрывало невесты (*пĕркенчĕк*). Украшение сурпанов и способы их ношения в этнографических группах имели свою специфику. У низовых сурпан был длинный (почти 2,5 м) и покрывал голову. Средняя часть делалась из белого полотна, а концы сурпанов украшались узорнотканными полосками, лентами, позументом, кумачом, кружевами. Узорнотканые полоски выступали на сурпанах в виде таких узоров, как квадраты, ромбы, кресты и т. д. Сурпан низовых закреплялся головной повязкой. Сурпан чувашек анат енчи был короче, украшения были уже — это тканые или кумачовые полоски, вышивка, белые кружева. Сурпан одевался по-другому, с помощью повязки масмак. Сурпан верховых чувашек был не длинный (120—150 см), узкий. Его изготовляли из тонкого полотна с двухсторонней вышивкой. Геометрические узоры вышивок, как и у анат енчи, размещаются ярусами. Концы сурпана украшались бахромой, разноцветным бисером. Женские головные повязки *масмак* бывают двух видов: у анат енчи и анатри они широкие с крупными узорами, у вирьял — узкие, вышитые мелкими геометрическими фигурами, обычно на полоске цветной ткани. Орнамент узоров на масмаках очень разнообразный — это фигуры коней, птиц, драконов, целые, орнаментированные «картины» сотворения мира. Женщины анат енчи и анатри в прошлом носили чалму-косынку из тонкого белого холста, ею покрывалась вся голова (у чувашских женщин бытовал обычай не показывать волосы). По краям чалмы размещалась вышивка. В чувашский женский наряд входили поясное и набедренное украшение — *сарă* и *яркăч*. Их вышивали шерстяными и шелковыми нитками, украшали нашивками. Длинная бахрома обогащала эти наряды, а при движении оживляла весь костюм женщины. Орнамент узоров — геометрический, связанный с представлением о модели мира. Использовались и стилизованные изображения деревьев, цветов, листьев. В национальном женском костюме большую роль играют головные уборы из бисера, мелких раковин каури и монет. Возникли они разными путями, претерпевали изменения, а позже стали обозначать возрастную и социальную принадлежность их носителей. В чувашских женских украшениях содержатся не только народные понятия о красоте, сложившиеся в течение тысячелетий, но и следы миропонимания наших предков. Древнейшей функцией украше-

ний было, без сомнения, их магическое предназначение (обереги), защита от злых духов и других опасностей. Полный комплекс украшений представлен в праздничных и свадебных нарядах. Чувашская женщина, облаченная в полный свадебный наряд, носила одежду и украшения весом около одного пуда, в том числе серебряные монеты весом 2—3 кг. В комплекс украшений, выполненных в технике шитья бисером и серебряными монетами, а также из драгоценных металлов и камней, входят головной убор девушки тухья, головной убор женщины хушпу, нагрудные и шейные наряды (*ама, шӳлкеме*), перевязь, подвески, браслет, кольцо, поясные подвески — нахвостник, поясной кошелек, поясное зеркальце и др. Головные уборы встречаются трех типов: в виде широкого обруча с расширяющимися кверху сторонами, полусферические (с закрытым верхом) и в форме шапки с открытым навершием. Хушпу имеет твердый остов, наспинную часть, украшена она монетами, бисером, раковинами, кораллами. Головная часть убора покрывалась семью или девятью рядами бляшек или нухраток, центральная часть украшалась узорами из ромбиков и крестиков (числом по девять) из красных, желтых и зеленых бисеринок. На «ушах», наспинной части, по краям хушпу вешали монеты, которые при движении (пляске) издают легкий звон. В хушпу явно ощущается стремление его создателями подчеркнуть связь красоты формы с музыкальностью. Тухья бывает двух видов — островерхой и без острия. У тухьи нет наспинной части. Девичьи уборы сплошь покрыты узорами из бисера. Серебро использовалось при украшении наушных деталей и нижних краев. Красиво оформляется козырек убора — красным кораллом, монетами. Рядами бус составлялись яруса, ромбы и другие геометрические узоры. На височной части размещались по три небольшие кисти из красных, белых и зеленых бисеринок. Тухья не только овеществляет понятие о красоте, но и хранит следы давноушедшей в прошлое магической функции. В одном ряду с тухья и хушпу находятся женские и девичьи нагрудные украшения — шӳлкеме и ама. Девичье шӳлкеме, в отличие от женского, не имело треугольной детали в верхней части и было одноярусным. Шӳлкеме верховых чувашек состояло из двух одинаковых частей: собственно шӳлкеме и сурпан çакки, соединенных в два яруса, и имело квадратную форму, а у низовых и средненизовых соответственно полуовальную и прямоугольную. По своей конструкции ама существовала в двух

видах: ама из отдельного нагрудника и нагрудник ама с наспинной частью. Шӳлкеме и ама украшали серебряными монетами, рядами разноцветного бисера, бусами, раковинами. Среди шитых бисером, украшенных серебром нарядов особое место занимает женское и девичье украшение в форме перевязи. Надевали перевязь через левое плечо. Женщины носили ее на свадьбах, девушки — во время весеннего обряда на хороводах и осенних праздников, посвященных молотьбе, первому хлебу или льну. *Теветь* представляла собой широкую (до 10—12 см) полосу, сшитую из холста с подкладкой. Она украшалась узорной тесьмой (по краям) с нашитыми на ней рядами бисера и раковин, рядами монет. На концах тевети вышивались узоры — изображения светил, очертания гор, деревьев. Девушки носили шейные ожерелья, на холщовую или кожаную основу которых нашивали бусы, бисер, монеты. *Çуха* изготовлялась также в виде густой сетки, составленной из бус, нанизанных на нитки, нижний ряд их составлялся из монет. Ожерелья низовых чувашей состояли главным образом из монет. Очень важна была знаковая функция одежды — она показывала отличия по возрасту, семейному положению, имущественному состоянию, ритуальному назначению (свадебную одежду, одеяния предводителей культовых обрядов и т. д.). Знаковые различия проявились прежде всего в головных уборах и украшениях. Так, сурпан, масмак, хушпу, головной платок являлись уборами замужних женщин. В свадебном обряде существовал специальный обряд одевания сурпана. Сугубо девичьим головным убором была тухья, ее уже не могла носить женщина. Женскими украшениями считались *сурпан çакки*, *сурпан хыçĕ*, *пуç хыçĕ*, девичьими — *шӳлкеме*, шейные украшения и ушные подвески (их носили также молодые женщины), украшения из монет. Сарă, теветь, ама и др. — общие украшения.

Обувь

Основной обувью у мужчин и женщин были лапти. Каждый народ создал свой тип плетеной обуви. Мужские лапти чуваши плели из семи лычек с небольшой головкой и низкими бортами. Женские лапти плелись весьма тщательно — из более узких полосок лыка и большего их числа (из 9, 12 лычек). У верховых чувашек рядом с головкой пропускали тоненькую веревочку —

по ней женские лапти легко отличить от мужских. Вирьялы лапти носили с черными толсто намотанными онучами, поэтому оборы делали до 2 м длиной. Низовые чуваши лапти носили с суконными чулками. Обертывание онучей и оплетение их оборами требовало времени и умения. Женщины юго-восточных районов носили также суконные гетры. Валенки в прошлом носили состоятельные крестьяне.

С конца прошлого века стало традицией покупать сыну к свадьбе кожаные сапоги, а дочери — кожаные ботинки. Верховые женщины надевали кожаные сапожки с короткими твердыми голенищами, собранными в гармошку. Кожаную обувь очень берегли.

ЧĂВАШ ТАШШИ, ЮРРИ — КĔТРЕТ

Чăваш ташши, юрри — кĕтрет.
«Линка-линка» янăрасан
Чупса тухса ташлас килет.
«Алран кайми» юрă юхсан
Мăнаçланса юрлас килет.
Чăваш çĕвви-тĕрри — кĕтрет.
Шурă пиртен аркăласа
Капăр кĕпе тăхăнас килет,
Тĕрлĕ тĕспе сĕвемлесе
Тĕрĕлесе тăхăнас килет.

Енчĕк, масмак, сурпан çыхса,
Ама, тевет, алка çакса
Чиперрĕн курăнас килет.
Чăваш кил-çурчĕ те — кĕтрет...
Кăкшăм, çурхат, çӳпçе, чӳлмек,
Пештĕр, арча, чăм илĕртет.
Сăра тултарнă алтăрпа
Чăваш хăна кĕтсе илет,
Эрешлĕ тĕпеле лартса
Апачĕ-çимĕçне сĕнет.
Тĕлĕнтерет кун-çул утти,
Ăсталăхпа илем çути.

(С.Асамат)

Вопросы и задания по теме «В мире национальных нарядов чувашей»

1. Расскажите о старинной традиционной одежде чувашей.
2. Из чего изготовлялся материал для одежды?
3. Какое значение имела вышивка в жизни чувашей?
4. Какими цветами выполнялись основные элементы народного орнамента?
5. Что такое *кĕскĕ, хушпу, тухья, ама, теветь?*
6. Чем отличались узоры на свадебной одежде?
7. Сколько весил примерно полный свадебный наряд (одежда и украшения) чувашской женщины?
8. Какой утварью пользовались чуваши?
9. Какую обувь носили чуваши? Чем отличались женские лапти от мужских?
10. По каким этнографическим группам различались старинная чувашская одежда, обувь, головные уборы и украшения?

ШКОЛА ВЕЖЛИВОСТИ

(Е.В.Васильевăн «Сăпайлăх шкулĕ» кĕнекинчен)

СЫВЛĂХ СУНМАЛЛИ СĂМАХСЕМ

Сывлăх сунмашкăн чăваш чĕлхинче тĕрлĕрен сăмахсем пур:

— Сывлăх сунатăп!

— Ырă кун пултăр!

— Ырă каç пултăр!

— Аван-и?

— Лайăх-и? Чиперех-и?

Калаçăва çапларах пуçлама юрать:

— Мĕнле сирĕн ĕçсем?

— Хăвăра епле туятăр?

Хуравĕ:

— Тавтапуç, аван.

Чăваш йăлинче çемьери е ĕçри лару-тăру çинчен ыйтни пур:

— Мăшăрун сывлăхĕ епле? Ачусем еплерех? Çемьере мĕнле?

— Тавтапуç, пĕтĕмпех аван.

Чăвашсем «пĕтĕмпех аван», «пĕтĕмпех йĕркеллĕ» тесе сахал чухне калаççĕ. Хурав ытларах çакăн пек:

— Тавтапуç, япăхах мар!

— Тавтапуç, пурăнкалатăп-ха майĕпен.

Ĕçлекен çынна курсан: «Вăй патăр!», «Турă пулăштăр!» — теççĕ. Пĕр-пĕр ушкăнпа тăвакан пысăк ĕçе пуçланă чух: «Аллу çăмăл пултăр», — теççĕ.

Пĕр кун хушшинчех çынсем пĕр-пĕринпе ĕçре е урăх çĕрте темиçе хут та тĕл пулаççĕ. Кун пек чух тепĕр хут сывлăх сунмалла мар. Анчах сăмах хушни е пуçа сĕлтни, кăшт кулса илни вырăнлă.

ТАВ ТУНИ

Пĕр-пĕр ырă ĕçшĕн тав тăваççĕ. Час-часах усă куракан тав сăмахĕсем:

— Тав тăватăп!

— Тавтапуç!

Ку сăмахсем ялан тенĕ пекех пĕр-пĕр ситуацип çыхăннă. Тĕслĕхрен:

— Тавтапуç, ман çиес килмест.

Час-часах мĕншĕн тав тунине те палăртаççĕ. Тĕслĕхрен:

— Тавтапуç сана парнешĕн!

— Пысăк тав сана!

Аудиторинче аван итленĕшĕн çак сăмахсемпе тав тăваççĕ:

— Мана тимлĕн итленĕшĕн тав сире!

Тепĕр чух пĕр-пĕр ĕç тума ыйтсан тӳрех тав туса хуни те пур:

— Малтанах тав туса хуратăп!

— Эпĕ сан умра парăмлă пулăп.

Хурав сăмахĕ ытларах «тархасшăн» сăмахпа çыхăнать. Тĕслĕхрен:

— Тавтапуç сана лайăх кĕнеке парнеленĕшĕн.

— Тархасшăн.

Тав сăмахне итлекенни хăй ку ĕçре кăшт кăна хутшăннă тесе шутлать пулсан çакăн майлă сăмахсем пулаççĕ:

— Тав тумалăх ĕçне туман эпĕ.

— Ăна тума мана йывăр пулман.

— Пысăк тав сире мана пулăшнăшăн!

— Мĕн эсир? Тав тумалăх ĕçне туман.

Тав тунине тĕрлĕ хусканусемпе те палăртаççĕ. Алă тытаççĕ. Чи çывăх çынсем пулсан ыталани те, чуптуни те пулать. Ку хусканусем сăмахсене çирĕплетеççĕ çеç.

ЙЫХРАВ

Алăк патĕнче вырăн пур чухне тĕпеле кайса лармаççĕ.

Ват. сăм.

Тăван-хурăнташсене, пускил-кӳршĕсене, ял-йыша хăнана йыхăрма чăвашсем ачасене янă. Йыхрава тухнă чăвашсем апат вăхăтне лексен:

— Апачĕ тутлă пултăр! — теççĕ.

Хуравĕ вара: «Эс каланă пек пултăр! Кил. Лар апата».

Йыхрав тени ытларах çак сăмахсем урлă пулса пырать.

— Килех!
— Иртĕр тĕпелелле!
— Эпĕ сана чĕнетĕп...
Тĕслĕхрен:
— Эпĕ сире хăнана чĕнетĕп.
Е тата:
— Каçхине пирĕн пата автан яшки çиме кĕрсе тух-ха.
Килсе тухнă çын алăк патĕнче тăрать пулсан, ăна малалла иртме сĕнсе чăвашсем çапла калаççĕ:
— Кĕрĕр!
— Тĕпелелле иртĕр!
Йыхрав-хистевре çав ĕçе тумаллах пулни çинчен пĕлтерекен сăмахсем пур:
— Ун патне кайса килни кирлех, мĕншĕн тесен вăл эрне ытла чирлĕ выртать.
Питех те йăлăнса йыхăрман, чĕнмен чух çапларах ыйтуллă предложенисем вырăнлă:
— Каçхине пирĕн театра кайса килмелле мар-ши?
Стилистика енчен вăйсăрлатнă йыхрав:
— Ман пата пыратăн-и?
— Кино курма каятпăр-и?
Тус-юлташа чĕнни:
— Кĕрсе тух-ха.
— Ан ман, кĕрсе çӳре.
Чĕннĕшĕн тав туса çапла хуравлаççĕ:
— Тавтапуç, хаваспах йышăнатăп!
— Тавтапуç, чĕререн тав тăватăп!
Килĕшӳ хуравĕ тепĕр чух йыхравра усă курнă глаголпа пулса пырать:
— Кайрăмăр.
— Айтăр каятпăр.
Йыхрав пирки малтанах пĕлнĕ чухне калаçу çапларах пулса пырать:
— Тăваттăра кинона кайăпăр-и?
— Каярахпа юрамасть-и?
— Апла пулсан улттăра!
— Калаçса татăлтăмăр.
Килĕшессине тĕрĕс пĕлмен чухне:
— Юрĕ те пуль.
— Ма килĕшмелле мар?

МАГАЗИНА КӖРСЕН...

Магазин алăкĕ умĕнче малтан унтан тухакансене ирттерсе ямалла. Сирĕн хыççăн кĕрекен пур пулсан уçнă алăка хупмасăр кăшт тытса тăрăр. Магазина кĕрсен сывлăх сунаççĕ, тухнă чухне сывпуллашаççĕ. Нумай çынлă универмагсенче, магазинсенче, кĕрен-тухана асăрхаман çĕрте, сывлăх сунмаççĕ. Магазинта пирус туртма юрамасть. Апат-çимĕç магазинне йытă илсе кĕме, апат-çимĕçе алăпа тĕкĕнме юрамасть.

Япала илес текен кашни çыннăн черете тăмалла. Питĕ васкамалла, кĕтме май çук чухне çеç малта тăракансенчен черетсĕр илме ирĕк ыйтмалла. Алăри ачаллă çынсене черетсĕр илме ирĕк памалла. Черетре тăракансене тĕрткелемелле мар, сутакан таварсене курасшăн вĕсен хулпуççийĕ урлă кармашса пăхни килĕшӳсĕр.

Сутуçăпа сăпайлăх йĕрки ыйтнă пек кăмăллăн калаçаççĕ. Тиркесе, сасă хăпартса калаçни вырăнлă мар.

ВЫСТАВКĂРА, МУЗЕЙРА, БИБЛИОТЕКĂРА

Выставкăна, музея пыракан çын гардероба çиелти тумпа пĕрле зонт, портфель, сумка, пакет т. ыт. те парса хăварать.

Выставка залне шăппăн, ыттисене кансĕрлемесĕр кĕреççĕ. Картинăсене пăхнă чухне унта тăракан çын çумне е умне çав тери çывăх пырса тăмаççĕ. Хытă кăшкăрма, кулма, ӳсĕрме юрамасть — хăвна ыттисене кансĕрлемелле мар тытмалла.

Музейри экспонатсене алăпа тĕкĕнме юрамасть. Музей тăрăх экскурсовод ертсе çӳрет пулсан, вăл ăнлантарни сире кичем пек туйăнчĕ пулин те, ăна шăппăн итлемелле.

Библиотекăра кĕнеке вулама лариччен алăсене çумалла, мĕншĕн тесен таса мар алăсем кĕнеке çинче йĕр хăвараççĕ. Кĕнеке страницисене уçнă чухне сурчăкпа йĕпетмелле мар, страницăсене хуçлатмалла мар. Кĕнеке страницисем çине тĕрлĕ ӳкерчĕксем ӳкерме юрамасть.

КИНОРА, ЛЕКЦИРЕ, ТЕАТРТА

Кинона, лекцие яланхи çи-пуçпа çӳремеççĕ. Арçынсем, ытти çĕрти пекех, пуçа тăхăнмаллине хываççĕ. Хĕрарăмăн та, шлепки çӳллĕ е пысăк пирки хыçалта ларакансене пăхма кансĕрлет пулсан, ăна хывас пулать. Театра спектакль е концерт пăхма иртерех çитмелле, мĕншĕн тесен тумтире хывса гардероба пама, хăвна

тирпейлеме, залра хăвăн вырăнна тупма вăхăт чылаях кирлĕ. Арçыннăн хĕрарăма пальто хывма пулăшмалла, номерне хăйĕн çумне илмелле.

Театр, концерт, кино залне арçын малтан кĕрет. Тухнă чухне хĕрарăм малтан тухать.

Эсир, мĕнле сăлтавпа та пулин кая юлтăр пулсан, зала шăппăн кĕрĕр те алăк патне тăрăр е çывăхри пушă пукан çине ларăр. Театра кая юлса килекенсене зала мар, балкон çине ăсатаççĕ.

Концерт пуçлансан калаçма чарăнмалла. Малтан пуçланă калаçăва малалла тăхтав вăхăтĕнче тăсаççĕ.

Юратнă юрăçа чечек парас тетĕр пулсан саламласа çырнă хута чечек çыххи ăшне хумалла, театрта ĕçлекен çынна сцена çине илсе кайма ыйтмалла. Классикла музыка концертĕнче залра ларакан çынсем пĕр харăссăн алă çупни килĕшӳсĕр.

Театрта е концертра чаршав хупăнасса кĕтсе илĕр, пальто илме гардероба васкаса ан вирхĕнĕр. Кам та пулин поезд е автобус çине васкать пулсан кăна вĕсен маларах шăппăн тухма юрать.

СĔТЕЛ ХУШШИНЧЕ

Сĕтеле ытла çывăх е аякка лартма кирлĕ мар.

Сĕтел çине чавсаланса е пукан çине улпут пек йăванса ларма хушмасть чăваш.

Алăсене сĕтел çине ал сыппи таран çеç хумалла.

Сирĕнпе юнашар хĕрарăм пулсан вăл ларасса кĕтмелле, ăна пулăшмалла.

Панă пит шăллине чĕркуççи çине хураççĕ.

Çĕççе турилккерен сылтăм, вилкăна сулахай енне сĕтел çиттине шăтарасран авăнчăк вĕçĕсене çӳлелле туса хумалла.

Яшка тавраш вĕри пулсан ăна вĕрсе е кашăкпа пăтратса сивĕтмеççĕ.

Çăкăра вилкăпа мар, алăпа илеççĕ.

Сĕтел хушшинче улма-çырлана хăвна валли лайăххине суйлани килĕшӳсĕр.

Чей кашăкĕпе сахăр ирĕлтернĕ чух çеç усă кураççĕ.

Калаçнă чухне алăсемпе хăлаçланни питех те килĕшӳсĕр.

Ӳсĕрессине, анаслассине пĕр шавсăр, ыттисене систермесĕр тума тăрăшмалла, сăмса тутрипе усă курмалла.

Апчхи! тунă чухне каçару ыйтмалла.

Хăнара йăлăхтариччен ларни лайăх мар.

АВТОБУС, ТРОЛЛЕЙБУС ÇИНЧЕ

Автобус, троллейбус тата поезд çинче ватăсене, инвалидсене вырăн парасси йăлара пулмалла.

Арçын е çамрăк çын автобусран, троллейбусран малтан хăй тухса хĕрарăма, ватă çынсене, инвалидсене алă парать, анма пулăшать.

Çул çýренĕ чух алăк патĕнче чарăнса тăма кирлĕ мар.

Çамрăксен ваттисене, чирлисене, йывăр çынсене, ачасене хăйсен вырăнне памалла.

Хаçат вулатăр пулсан ăна саркаламасăр, хуçлатса вулани аван.

Çитес çĕре çитсен ыттисемпе сывпуллашса вĕсене ырлăх сунаççĕ.

«Сăпайлăх шкулĕ» темăпа панă ыйтусемпе ĕçсем

1. Эсир сывлăх сунăм сăмахĕсене пĕлетĕр-и?
2. Хăçан сывлăх сунаççĕ?
3. Паллана çынна пĕр кун хушшинче темиçе хут тĕл пулма тивсен сывлăх сунăм сăмахĕсенчен хăшĕсемпе усă курмалла?
4. Тав тумалли мĕнле сăмахсене пĕлетĕр? Хăçан тав тăваççĕ?
5. Хăвăр пата тăван-хурăнташа, тус-юлташа хăна тума мĕнле йыхравлатăр? Сĕтел хушшинче хăнан хăйне мĕнле тытмалла?
6. Халăх нумай çĕрте:

1) магазинта, музейра, библиотекăра, урамра;
2) кинора, лекцире, театрта;
3) автобус, троллейбус çинче харпăр хăйне мĕнле тытмалла?

7. Сăпайлă çын тесе кама калаççĕ? Хăвăра сăпайлă çын тесе шутлама пултаратăр-и? Мĕншĕн?
8. Вуласа тухăр та асра тытăр:

Ваттисем калаçнă чух вĕсен сăмахне ан пýл, пĕр чĕнмесĕр итлесе тăр.
Мĕн вăй çитнĕ таран çынсене ырă тума тăрăш.
Усал ĕç тусан халăх умĕнче ырă ят илтеймĕн.
Ялан ăспа çýресен ялти ватă ятламасть.

ИСПОЛЬЗОВАННАЯ ЛИТЕРАТУРА

Андреев В.В., Андреева Е.А. Чăваш литератури сăмахлăхĕ, культурипе историйĕ. — Шупашкар, 1997.

Андреев И.А., Петров Н.П. Русско-чувашский словарь. — М., 1971.

Андреев И.А., Сергеев Л.П., Петров Н.П. Чăваш чĕлхи. 7—8 классем валли. — Шупашкар, 1987.

Андреев И.А. Чăваш синтаксисĕн ыйтăвĕсем. — Шупашкар, 1975.

Андреев И.А. Учебник чувашского языка для русских. — Чебоксары, 1992.

Андреев И.А. Чăваш чĕлхи программи. — Шупашкар, 1992.

Горшков А.Е. Программа практического курса чувашского языка для русскоязычных студентов. — Чебоксары, 1993.

Горшков А.Е. Чăваш чĕлхи. — Шупашкар, 1997.

Захарова Г.П., Захаров Л.Л. Чăваш музыки ача садĕнче. — Шупашкар, 1995.

Иванова В.А. Чувашия. Фотоальбом. — М., 1988.

Иванов К.В. Нарспи. — Шупашкар, 1976.

Игнатьева В.И., Николаева К.И., Ахвандерова А.Д. Программа по практическому курсу чувашского языка для русскоязычных студентов нефилологических факультетов. — Чебоксары, 2001.

Игнатьева В.И. Чувашский язык. — Чебоксары, 1998.

Канюкова А.С. Чăвашла тĕрĕс те илемлĕ калаçар. — Шупашкар, 1975.

Краснов Н.Г. Выдающийся чувашский педагог-просветитель. — Чебоксары, 1992.

Кон Л. Книга о растениях. — М., 1956.

Лукоянов Г.В. Учимся говорить по-чувашски. — Чебоксары, 1996.

Мартынова А.Н., Митрофанова В.В. Пословицы, поговорки, загадки. — М., 1986.

Никитин (Станьял) В.П., Юмарт Г.Ф. Константин Иванов. — Шупашкар, 2000.

Палинов В.М., Самойлов В.А. Пушă вăхăтра. — Шупашкар, 1973.

Патмар Э.И. Чăваш халăх календарĕ. — Шупашкар, 1995.

Печников О.И., Печникова М.Н. Чăвашла калаçма вĕренетпĕр. — Шупашкар, 2001.

Резюков Н.А. Сопоставительная грамматика русского и чувашского языков. — Чебоксары, 1959.

Сергеев Л.П., Васильева Е.Ф. Тематический русско-чувашский словарь. — Чебоксары, 1998.

Сергеев Л.П., Филиппова Д.С., Максимова Р.С., Трокина Р.И. Чăваш чĕлхи методики. — Шупашкар, 2002.

Сергеев Л.П. Чăваш чĕлхи. — Шупашкар, 1993.

Сергеев Л.П. Чăваш чĕлхин орфографи словарĕ. — Шупашкар, 1995.

Сергеев Л.П. Чăваш чĕлхине пуçламăш шкулта вĕрентессин хăш-пĕр ыйтăвĕсем. — Шупашкар, 1998.

Скворцов М.И. Чăвашла-вырăсла словарь. — М., 1982.

Сладков Н.Н. Вăрман пурнăçĕ. — Шупашкар, 1991.

Федоров Н.В. Грибы. — Чебоксары, 1978.

Хузангай А.П., Самсонова Г.С. Константин Иванов. Фотоальбом. — Чебоксары, 1990.

Чернова Н.Н., Игнатьева В.И. Чăваш сăмахĕ. 4 класс. — Шупашкар, 1997.

Чернов М.Ф. Чăвашла-вырăсла фразеологи словарĕ. — Шупашкар, 1982.

Яковлев И.Я. Детские рассказы. — Чебоксары, 1968.

Чувашское народное искусство. Сост. Э.Д. Меджитова, А.А.Трофимов. — Чебоксары, 1981.

СОДЕРЖАНИЕ

Предисловие 3
Урок 1. О государственных символах Чувашской Республики 7
Урок 2. И.Я.Яковлев — великий просветитель чувашского народа 10
Урок 3. Форма принадлежности терминов родства 15
Урок 4. Ударение 17
Урок 5. Произношение согласных звуков 19
Урок 6. Составление диалогов 23
Урок 7. Имя числительное 25
Уроки 8—9. Начальная форма глагола. Настоящее время глагола 28
Урок 10. Вопросительные слова 32
Урок 11. Усвоение слов по теме «Пахча çимĕç (Овощи)» . . 35
Урок 12. Усвоение слов по теме «Пӳрт. Картиш. Хуралтă (Дом. Двор. Постройки) 38
Урок 13. Усвоение слов по теме «Кил-çуртри япаласем (Домашняя утварь)» 41
Уроки 14—16. Имя прилагательное 44
Урок 17. Прошедшее очевидное время 58
Уроки 18—19. Склонение существительных и личных местоимений 62
Урок 20. Усвоение слов по теме «Килти выльăх-чĕрлĕх тата кайăк-кĕшĕк (Домашние животные и птицы)» 68
Уроки 21—22. Усвоение слов по теме «Улма-çырла (Фрукты и ягоды)» 71
Урок 23. Инфинитив 76
Урок 24. Усвоение слов по теме «Апат-çимĕç (Пища)» . . . 79
Уроки 25—26. Причастие 83
Уроки 27—28. Деепричастие 88
Уроки 29—30. Хыççăмахсемпе пулăшу сăмахĕсем (Послелоги и служебные слова) 94

Уроки 31—32. Составление рассказов по вопросам . . 101
Уроки 33—34. Составление рассказов по началу 104
Урок 35. Упражнения и задания для повторения и закрепления . . . . . —
Приложение 108
Тексты для чтения . . . . . —
Проверяем сами себя 123
В мире национальных нарядов чувашей 140
Школа вежливости 150
Использованная литература 157

Учебное издание

Николаева Калиса Ивановна

ЧУВАШСКИЙ ЯЗЫК

НАЧАЛЬНЫЙ КУРС

Учебник для русскоязычных учащихся и студентов

Редактор *Н. Н. Маслова*
Художник *М. Д. Давлятшин*
Художественный редактор *Г. С. Самсонова*
Технический редактор *Л. К. Егорова*
Корректоры *З. И. Гаврилова, Н.П. Печникова, А.Г. Владимирова*
Компьютерная верстка *Е.Л. Карпеевой*

Налоговая льгота — Общероссийский классификатор продукции ОК 005-93 — 95 6600. Изд. лиц. №06317 от 26.11.01. Подписано к печати 19.03.04. Формат 60x84 1/16. Бумага офсетная. Гарнитура Тип Таймс. Печать офсетная. Усл. печ. л. 9,3 + 0,47 вкл. Учетно-изд. л. 8,12 + 0,49 вкл. Тираж 2000 экз. Заказ № К-4367. Изд. № 9.

ГУП «Чувашское книжное издательство». 428000, Чебоксары, пр. Ленина, 12 б.
Отпечатано в ГУП «ИПК «Чувашия». 428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13.

Чăваш хĕрарăмĕсен авалхи çи-пуçĕ.

Старинная одежда чувашских женщин.

Хĕр пĕркенчĕкĕсем. XIX ĕмĕр пуçламăшĕ.

Покрывала невесты. Начало XIX века.

Анат енчи чăваш хĕрарăмĕсен сарри. XIX ĕмĕр.

Женское поясное украшение сарă низовых чувашей. XIX век.

Тури чăваш хĕрарăмĕсен сурпанĕ. XX ĕмĕр пуçламăшĕ.

Сурпан верховых чувашей. Начало XX века.

Пит шăлли. 1976 ç.

Полотенце. 1976 г.

Сётел çитти. 1959 ç.
Настольник. 1959 г.

Салфеткăсем. 1979 ç.
Салфетки. 1979 г.

Тури чăваш хĕрарăмĕсен масмакĕсем. XIX ĕмĕр.

Женские головные повязки масмак верховых чувашей. XIX век.

Анатри чăваш хĕрарăмĕсен кĕпи. XVIII ĕмĕр. Уйрăм пайĕ.

Женская рубашка низовых чувашей. XVIII век. Фрагмент.

Тури чăвашсен пиçиххийĕ. XX ĕмĕр пуçламăшĕ.

Пояс верховых чувашей. Начало XX века.

Арçын тумне те тӗрлӗрен тӗрӗ-эрешпе илемлетнӗ, анчах унӑн тӗслӗхӗсем халӑхра сахалтарах сыхланса юлнӑ. Вӗсенчен пӗри — килте тӗртнӗ шурӑ пиртен çӗленӗ шупӑр.

Богатством вышивки и разнообразием орнамента отличалась мужская одежда. Одной из самых интересных принадлежностей мужской одежды являлся шупӑр —халат из домотканого белого холста.

Парне япалисем. 1970 ç.
Сувениры. 1970 г.

Хăмла катки. 1975 ç.
Кадка для хмеля. 1975 г.

Сăра курки. 1962 ç.
Ковш для пива. 1962 г.

Хуçса-тирсе тунă япаласем.
1920—1940 çç.
Плетеные изделия. 1920—1940 гг.

Касмăксем. XIX ĕмĕр.
Туеса. XIX век.

Чăваш хĕрарăмĕсен хушпăвĕпе кăкăр ум эрешĕсем. XIX ĕмĕр.

Женский головной убор хушпу и нагрудные украшения чувашей. XIX век.

Тури чăваш хĕрарăмĕсен кăкăр ум тата çурăм хыç эрешĕсем. XIX ĕмĕр.

Нагрудно-наспинные украшения верховых чувашей. XIX век.

Анатри чăваш хĕрĕсен тухйисем. XVIII ĕмĕр — XIX ĕмĕр пуçламăшĕ.

Девичьи головные уборы тухья низовых чувашей. XVIII век — начало XIX века.